ЯЛАВ
№ 5 МАЙ 1954

САВНИ САЛАМĔ

УЙĂП МИШШИ

Ирсерен пĕрле ĕçе тухатчĕ,
Каç вăл ăсататчĕ вăйăран.
Инçетрен çырать халь савнă каччă,
Саламне ярать ав Алтайран.

Ун чухне сăмах татма пулмарĕ,
Калаçса та каçсерен ирччен.
Хĕршĕн халь савнин кашни хыпарĕ
Хаклă-çке мĕнпур хыпарсенчен.

Хыпарлать савни: чиперĕм, чунăм
Эс килсе курасчĕ ку çĕре!
Ĕç çинче иртет кун хыççăн кунăм,
Саншăн çеç ман тунсăхлать чĕре.

Аслă-çке Алтайăн çеçенхирĕ!
Çут инçечĕ илĕртет куçа.
Янăрать тăри юррилĕ ирĕ,
Çамрăк йыш хĕрсе çерем уçать.

Тракторсем çĕре илеççĕ тарăн,
Кĕр-кĕрлеççĕ хир талккишĕпе.
Темĕнле ĕçе тума пултарăн
Çак хастарлă халăх йышĕпе!

Комсомол пире путевка пачĕ,
Парти чĕннĕ, килтĕмĕр инçе.
Ылттăн тулă тинĕсĕ хумханĕ
Куç çитми çак ирĕк хирсенче.

Аякра пиртен Чăваш çĕршывĕ,
Аякра эс, чунăмçăм, манран.
Чĕресем çапах та пирĕн çывăх,
Эс каймастăн манăн асăмран.

Ырă мар сăмахпала ан асăн,
Çынсенчен юлман-ха эп кая.
Чăн-чăнах саватăнах пулсассăн,
Килмĕн-ши, савниçĕм, Алтая?

«АЛТАЙРАН ÇЫРУ КИЛЧĔ»

В. Исаев фотоэтючĕ.

ЖУРНАЛ ХУПЛАШКИН ПĔРРЕМĔШ СТРАНИЦИНЧЕ:
Ишлей МТС-ĕнчи комсомолец-трактористсем, Геннадипе Леонид Смирновсем «Знамя коммунизма» колхоз хирĕнче.

П. Ефремов фотоӳкерчĕкĕ.

ХУПЛАШКАН 4-МĔШ СТРАНИЦИНЧЕ: ШУПАШКАРТИ ПИР-АВĂР КОМБИНАЧĔ.
Пир тĕртекен фабрикăри ткачиха Вера Ивановна Журкова. Вăл май уявĕ умĕнхи ăмăртура мала тухрĕ.

Н. Голубевпа Б. Тимкин фотоӳкерчĕкĕсем

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ЯЛАВ

№ 5 (101)
МАЙ
1954

ЧӐВАШ СОВЕТ ПИСАТЕЛӖСЕН СОЮЗӖ УЙӐХРА ПӖРРЕ КӐЛАРАКАН ИЛЕМЛӖ ЛИТЕРАТУРӐПА ОБЩЕСТВӐЛЛА-ПОЛИТИКӐЛЛА ЖУРНАЛ

Мускав. Кремль.

П. Грановский фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС).

КОММУНИЗМ ИРӖ

Вӗҫӗ-хӗррисӗр сарӑлса выртать пирӗн аслӑ Тӑван ҫӗршыв. Унӑн ешӗл талккишӗ тӑрӑх ҫурхи хӗвел хӑйӗн ӑшшипе ҫутине ырӑн та вашаватлӑн сапалать: лайӑхрах чечеклентӗр ҫӗршыв, хастаррӑнрах ӗҫлетӗр совет ҫынни!

Инҫетрен-инҫетрен юрӑ илтӗнет. Тен, Алтайран е Казахстан ҫеҫенхирӗнчен, тен, Ҫурҫӗр Кавказран е Урал тӑвӗсем хыҫӗнчен килет пуль ку сасӑ,—акӑ вӑл вӑйлӑланнӑҫемӗн вӑйланса пырать, пӗтӗм ҫӗршывӑн сассипе пӗрлешсе каять. Аслӑ ҫӗршыв, аслӑ совет халӑхӗ, пӗр аслӑ хор пулса, Май юрри юрлать. Хула урамӗсенче, ялти садсем ҫинче хӗрлӗ ялавсем вӗлкӗшеҫҫӗ. Ҫынсем кӑҫалхи уявра нихҫанхи пек мар калӑр тумланнӑ, сӑнӗсем те вӗсен халиччен хинчен ҫутӑрах. Совет халӑхӗ юрлакан хаваслӑ юрӑсем, ҫӗршыв чиккисем урлӑ каҫса, пӗтӗм тӗнчене сарӑлаҫҫӗ, ҫӗр чӑмӑрӗ ҫинчи миллионшар ӗҫҫыннисене мирпе демократишӗн, ирӗклӗхпе телейшӗн кӗрешме хавхалантараҫҫӗ. Пирӗнпе пӗрле аслӑ Китай халӑхӗ, паттӑр Корейӑпа Вьетнам халӑхӗсем, мӗнпур халӑх демократиллӗ ҫӗршывсенчи ӗҫҫыннисем, пирӗнпе пӗрле тӗнчери мӗнпур ырӑ кӑмӑллӑ ҫынсем юрлаҫҫӗ. Ирӗклӗхпе туслӑх юррисене нимӗнле чикӗ те тытса чарма пултараймасть.

Совет ҫыннисем — тӗнчере чи телейлӗ ҫынсем. Вӗсен ырӑ пурнӑҫӗшӗн Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви тӑван атте-аннемӗрсем пек тӑрӑшаҫҫӗ. Этеме мӗн кирлине пурне те туса парасси — партипе правительствӑн тӗп законӗ. Ҫав закона пурнӑҫа кӗртсе пырса, партин Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти тата февральпе мартри Пленумӗсем хамӑрӑн социализмла ялхуҫалӑхне хӑватлӑн аталантармалли историлле решенисем йышӑнчӗҫ, СССР Верховнӑй Совечӗн апрель уйӑхӗнче пулса иртнӗ пӗрремӗш сессийӗ пӗтӗм халӑх хуҫалӑхне татах та вӑйлӑнрах ӳстермелли Государство бюджетне ҫирӗплетрӗ. Партипе правительство куллен туса пыракан ытти нумай тӗрлӗ паха ӗҫсем Совет государствин вӑй-хӑватне татах та ытларах тӗреклетме, халӑх пурнӑҫне тӗпренех лайӑхлатма та пуянлатма май пара ҫҫӗ. Сӑмахран, Государствӑн кӑҫалхи бюджечӗ тӑрӑх халӑха ҫутта кӑларас, халӑх сывлӑхне сыхлас тата ытти культурӑлла ӗҫсем валли ҫӗр хӗрӗх миллиард тенкӗ ытла уйӑрса панӑ. Кун пеккине ӑна капитализм тӗнчинче пӗр ҫӗршывра та курма ҫук. Этем юнне кӳпме хӑнӑхнӑ харампыр-капиталистсем ӗҫҫыннисемшӗн нихҫан та тӑрӑшман, тӑрӑшас та ҫук. Хӑйсен усламӗсене татах та ытларах ӳстерес тесе, вӗсем ҫӗнӗ вӑрҫӑ чӗртсе яма ҫеҫ ӗмӗтленеҫҫӗ. Выҫлӑх, чухӑнлӑх, ӗҫсӗрлӗх, чуралӑх,— акӑ мӗн парать капитализм ӗҫҫыннине.

Пирӗн бюджет — мир бюджечӗ. Социализмла ҫӗршыв бюджечӗн кашни цифринче эпир ҫӗнӗ заводсемпе фабрикӑсем, ҫӗнӗ МТС-семпе совхозсем, ҫӗнӗ тракторсемпе комбайнсем, ҫӗнӗ шкулсемпе культура керменӗсем курса тӑратпӑр. Пӗтӗмпех халӑх валли!

Совет халӑхӗ коммунизмӑн хӗвеллӗ ҫуртне тӑвать. Паттӑррӑн та хастаррӑн ӗҫлет вӑл, хӑй мӗншӗн ӗҫленине лайӑх ӑнланни унӑн чӗрине татах та ытларах хавхалантарать. Унӑн телейӗ — ҫак аслӑ ӗҫре. Обществӑлла ҫӗнӗ строй ҫӗнтертӗр тесен, чи кирли, чи пахи — ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерсе пырасси, тенӗ аслӑ Ленин. Эпир мӗн чухлӗ тухӑҫлӑрах ӗҫлетпӗр, пирӗн ҫавӑн чухлӗ нумайрах таварсем пулаҫҫӗ, хакӗ те вӗсен ытларах йӳнелет, пурнӑҫ та хӑвӑртрах пуянланать. Ҫакна чӗрепе туйса тӑрса, кашни совет ҫынни паян ӗнерхинчен лайӑхрах, ыран вара паянхинчен лайӑхрах та тухӑҫлӑрах ӗҫлеме тӑрӑшать. Колхоз уй-хирӗсенче те фермӑсенче, фабрикӑсенче те заводсенче, ҫӗнӗ стройкӑсенче — пур ҫӗрте те паян хӗрӳллӗ ӗҫ вӗресе тӑрать. Совет халӑхӗ пиллӗкмӗш пилӗкҫуллӑхӑн аслӑ задачисене, партипе правительство палӑртса хунӑ программӑсене вӑхӑтра пурнӑҫа кӗртессишӗн ывӑнма пӗлмесӗр кӗрешет.

Коммунизм ҫӗнтерӗвӗшӗн пыракан аслӑ кӗрешӳре рабочи класпа колхоз хресченӗсен туслӑхӗ, ҫӗршыври халӑхсен туслӑхӗ, совет обществин моралӗ-политикӑлла пӗрлӗхӗ ӗмӗрне иксӗлми ӳссе ҫирӗпленчӗ. Украина ҫӗршывӗ Российӑпа пӗр государствӑна пӗрлешнӗренпе виҫҫӗр ҫул тултарнине Совет Союзӗнчи пур халӑхсем те чаплӑн палӑртса уявлани хӑех ӗнтӗ политикӑлла паха тӗслӗх пулчӗ, ҫакӑ вӑл ҫӗршыври халӑхсен тӑванлӑхӗ мӗн тери пысӑккине татах та тепӗр хут кӑтартса пачӗ. Ҫапла эпир пур ӗҫре те аслӑ совет халӑхӗн чӑн-чӑн ырӑ кӑмӑлне, чӑн-чӑн мирлӗ ӗмӗчӗсене туйса тӑратпӑр.

Пур ӗҫ те — этем ырлӑхӗшӗн! Пирӗн партипе правительство чи малтан ҫавӑн ҫинчен шухӑшлаҫҫӗ пулсан, чӗре

МУСКАВ. Май уявӗнчи ҫар парадӗнче.

этем — совет çынни ниепле те литературăпа искусство тулашĕнче юлма пултараймасть. Искусствăпа литературăн пĕтĕм тĕллевĕ — чĕрĕ çыннăн чунне, шухăш-кăмăлне уçса парасси. Этемлĕх хăйĕн ырлăхĕшĕн аталантарать те ĕнтĕ литературăпа искусствăна. Çавăнпа пирĕн парти писательсене, искусство çыннисене куллен-кун тимлĕн вĕрентет, ăслă кăтартусем парать, кирлĕ чухне чăтăмлăн та тӳсĕмлĕн критиклет, ăсталăха ӳстерме пулăшать.

Коммунизм обществи пур тĕлĕшрен те чăннипех пуян общество пулма тивĕç. Çăкăр-тăвар, сĕт-çу, аш-какай, çипуç-тумтирсĕр пуçне, çынна чун валли те паха çимĕç кирлĕ: лайăх сăвăсемпе юрăсем, лайăх калавсемпе романсем, лайăх пьесăсемпе спектакльсем! Паттăр совет çынни литературăпа искусство произведенийĕсенче хăйĕн чăн-чăн чĕрĕ сăнне курма пултартăр. Хамăрăн тĕлĕнмелле чаплă çынсем çинчен эпир япăх çырма тивĕçлĕ мар.

Чĕрĕ ĕçе хут купи айне тума хăтланакан бюрократсене пирĕн парти пĕр хĕрхенмесĕр питлет. Çавăн пекех чĕрĕ çынсен сăн-сăпатне пăсакан хăлтăркка произведенисене те халăх йышăнмасть, сирсе кăна пăрахать. Совет халăхĕн культурăлла шайĕ палламалла мар ӳсрĕ, унăн кăмăл-туйăмĕсем пуянланчĕç. Çакна пирĕн пĕр самантлăха та манмалла мар.

Халĕ, совет писателĕсен Пĕтĕм Союзри иккĕмĕш съездне, çавăн пекех чăваш писателĕсен тăваттăмĕш съездне хатĕрленнĕ май, пирĕн хамăр ĕçри çитĕнӳсемпе çитменлĕхсене тĕплĕн пăхса тухмалла, пĕтĕм творчествăлла ĕçе хускатса çĕклемелле, çырма тытăннă произведенисене çырса пĕтерме тăрăшмалла, çĕнĕ ĕмĕтсем тытса, малтан малалла каймалла.

Пирĕн умра коммунизм ирĕ çиçсе тăрать. Хавалсă çурхи ир. Кун пек чухне чĕрере пĕр кăмăл çеç — халăх ырлăхĕшĕн лайăхрах ĕçлесси. Çапла чĕнет пире Коммунистсен аслă партийĕ.

МУСКАВ. Май уявĕнче ĕçыннисен колоннисем Хĕрлĕ площадьпе иртсе пыраççĕ.

(ТАСС фотохроники).

МАЙ УЯВĔ ШУПАШКАРТА. Спортсмен-мотоциклистсен колонни.
П. Ефремов фотоӳкерчĕкĕсем.

МАЙ УЯВĔ ШУПАШКАРТА. Шкул ачисем трибуна умĕнчен хаваслăн ташласа иртеççĕ. (çӳлти.) Пир-авăр фабрикинче ĕçлекенсен колонни. (аялти.)

ХАЛĂХ ЮРĂÇИ

Чăваш халăх поэчĕ Семен Васильевич Эльгер утмăл çул тултарчĕ.

Эльгер — халăх юрăçи. Унăн сăввисемпе поэмисенче, калавĕсемпе повеçĕсенче, романĕсемпе драмăлла произведенийĕсенче чăваш халăхĕн тĕрлĕ саманари кун-çулне куратпăр. Икĕ тĕнче — историлле икĕ тапхăр: пĕри — харампыр-эксплуататорсен пусмăрĕнче хĕн-хур чăтса пурăннă ĕç-халăхĕн асаплă та паттăр кĕрешӳре иртекен кун-çулĕ, тепри—хамăр тăван çĕршывра Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе тата аслă вырăс халăхĕ тăванла пулăшнипе, çав пусмăр тĕнчине тĕпрен аркатса, коммунизмла çĕнĕ пурнăç тума тытăннă кун-çул,—çак тапхăрсемпе çыхăннă та Эльгерĕн пĕтĕм творчестви.

Эльгер ячĕ — пирĕншĕн хаклă ят. Октябрь тивлечĕпе ирĕке тухнă чăваш халăхĕн культурине çитĕнтерес ĕçре Семен Васильевич нумай вăй хурса ĕçленĕ. Кашни чăваш совет писателĕ: манăн çывăх вĕрентекенĕм Семен Васильевич Эльгер, тесе, чĕререн хаваланса калать. Вăл питĕ тĕрĕс, мĕншĕн тесен Семен Васильевич писательсене ăшă сăмахпа та, ĕçпе те пĕрмаях пулăшса тăрать, хаклă канашсем парать.

Эльгер пултаруллă та талантлă поэт. Çапла пулин те, вăл хăйне пысăка хумасть, мăнкăмăлланмасть, мухтанас, вĕçкĕнленес йăли унăн нихçан та пулман. Ун патне пĕр-пĕр ĕçпе пырсан, вăл тем пек хапăл туса йышăнать, çавăнпа: ĕçлĕ çынна чăрмантартăм, тесе ирĕксĕрех вăтанатăн, хĕрелетĕн. Анчах вăл малтанхи туйăм çеç, сăмахлама тытăнсанах, хăвăн умăнта чăваш халăхĕн паллă поэчĕ иккенне манса каятăн, çывăх тăван пек калаçать вăл, санăн ĕçĕ-хĕлӳ çинчен ыйтса пĕлет, шухăш-кăмăлна туйса илет, пуçра пысăк ĕмĕтсемпе шухăшсем хускаттарать, хĕрсе ĕçлеме хĕтĕртет.

Семен Васильевич Эльгер—РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ. Хăй ĕçне вăл кунта та лайăх та тĕплĕн туса пырать. Почта ун патне кашни ир темĕн чухлĕ çыру илсе пырать—Вăрмар колхозникĕсем ăна çĕрĕçне çĕнĕ техникăпа ĕçлени çинчен пĕлтереççĕ, Çĕмĕрле рабочийĕсем çĕнĕ пьесăсем ярса пама ыйтаççĕ, Севастополь морякĕсемпе Хабаровскри совет салтакĕсем, Мускав студенчĕсемпе кĕçĕн шкулта вĕренекен ачасем, учительсем, агрономсем пурнăçри ытти нумай тĕрлĕ ыйтусем пирки çыраççĕ. Эльгер çав çырусене пĕрне те ответсăр хăвармасть, кашнин валли ырă канаш та ăшă сăмах тупать. Çав вăхăтрах вăл çĕнĕ произведенисем çырма ĕлкĕрет. Чăнах та, Эльгер ырми-канми ĕçлеме пултарнинчен тĕлĕнсех каятăн. Писательсен кашни çĕнĕ кĕнекине вуласа тухать вăл, театрта пулать, секци пухăвĕсенче çĕнĕ произведенисем сӳтсе явнă чухне те хăйĕн кирлĕ сăмахне калать.

Халăх поэчĕн пурнăç çулĕ çăмăллăн пыман. Вăл Йĕпреç районĕнчи Мăн Упакасси ялĕнче хресчен çемйинче 1894 çулхи (кивĕ стильпе) апрелĕн 19-мĕшĕнче çуралнă. Ĕлĕк чăваш ачин сăпки çине хĕвел çути ӳкмен. Кăшт пысăклансанах вăл пилĕк авса, тар кăларса ĕçлеме вĕреннĕ. Эльгерĕн те çавăн пекех иртнĕ ача чухнехи кунĕсем. Çут-çанталăкăн илемĕпе вăл хирти йывăр ĕçре лайăххах паллашнă, Кушлавăш сĕм вăрманĕн мăнаçлă шавĕ, Хумпуç уйĕсенче тырă сĕрĕшни, çӳл тӳпере тăри юрлани — Тăван çĕршывăн ытарма çук илемĕ халăхăн тертлĕ ĕçĕпе хутшăнни пулас поэтăн чун-чĕрине мĕн çамрăкран кĕрсе юлнă. Эльгер çав пурнăç кĕввипе ӳснĕ, малашне лайăх сăвăсем çырма вăй пуçтарнă.

Катари чăваш ялĕсене те пĕрремĕш революцин хумĕ çитсе перĕнет. Ирĕклĕх тилмĕрнĕ ĕççынни чуралăх саманипе пурăнма текех килĕшмипулать, унăн класлăх сисĕм-туйăмĕ вăранать. Тискер юнĕçенсен тымарĕсем хускалаççĕ пулин те, халăхра Бурцев пек, Муçça пек, Çитăр Иванĕ пек, Долбилов пек, авса авăнми çирĕп паттăрсем ӳссе çитĕнеççĕ. Аслă вырăс халăхĕ пулăшса пынипе вĕсем кунсерен вăйлăланса пыраççĕ. Çапла вара, пĕтĕм Россия капитализмĕн аварĕнче Ехрем хуçа пеккисем чăваш халăхне кун кăтартми хĕсĕрленĕ пулсан та, пире аслă вырăс халăхĕ тăванла пулăшни чăваш халăхĕн ĕмĕр çывран ăсне хускатма, хăйне çунат хушма пулăшнă. Аса килеççĕ манăçми ятсем: И. Я. Яковлев, хамăрăн пĕрремĕш шăпчăк Константин Иванов, канăçсăр чун Шелепи,—çак хаклă ятсемпе пĕр танах туятпăр эпир Семен Васильевич Эльгер ятне те.

Эльгерĕн творчестви нумай енлĕ. Вăл пĕчĕк статьясемпе очерксем те, сăвăсемпе поэмăсем те, романсемпе драмăлла произведенисем те çырать,—анчах вăл кирек мĕн çырсан та—поэт. Унăн кашни йĕркинче халăх кăмăл-туйăмĕ, халăх хăвачĕ, халăх пурнăçĕпе çыхăнса тăракан сăнарсем. Тăван халăхăн уйрăмлăхĕсене ăста кăтартать вăл. «Хĕн-хур айĕнче» поэмăра чăваш халăхĕ, Емельян Пугачев çыннисем ертсе пынипе, пусмăрлăха хирĕç епле паттăррăн кĕрешнине куратпăр эпир, «Шурăмпуç килсен» романра 1905—1907 çулсенчи пĕрремĕш революци вăхăтĕнче чăваш ĕçхресченĕсем те хăйсен гражданла тивĕçлĕхĕсемшĕн революцилле кĕрешĕве хутшăнни çинчен вулатпăр, «Вăрçă кунĕсем» («Вутпа çулăм витĕр») романра халăхăн çирĕммĕш ĕмĕр пуçламăшĕнчи трагедилле тапхăрĕпе, вăрçăра асапланакан салтакăн революцилле ăнланăвĕ епле ӳссе пынипе паллашатпăр, «Вунсаккăрмĕш çул» ятлă драмăлла поэмăра çамрăк Совет влаçĕшĕн, Тăван çĕршывшăн шурă гвардеецсене хирĕç паттăррăн çапăçнине куратпăр, «Вăл вилĕмсĕр» поэмăра Аслă Отечественнăй вăрçăра совет салтакĕсем нимĕç фашисчĕсене епле аркатни çинчен вулатпăр.

Кирек хăш тапхăра илсе пăхсан та, Эльгер произведенийĕсенче тăван халăхăн шухăш-кăмăлне туйса тăратпăр, унăн ĕçĕпе те ĕмĕчĕпе паллашатпăр.

Çавăн пек паллă тапхăрсене кăтартса çыракансем чăваш писателĕсенчен тата ыттисем те пур. Ку ĕçе пирĕн çамрăк писательсем Семен Васильевичран вĕренсе пыраççĕ. Эльгер нумай-нумай ĕçсемпе событисене хăй куçĕпе курнă; вăл мĕнле курнă, мĕнле хăватпа туйнă, çавна литературăн витĕмлĕ те илемлĕ сăрĕсемпе сăрласа парать. Чĕлхи те унăн халăх чĕлхине çывăх тăрать, вăл кăткăс сăмах çаврăнăшĕсене ытла хисеплесех каймасть, ăнланмалла пултăр, картинăсене туллин уçса паракан сăмахсем пулччăр, тет вăл. Тӳррипе каласан, унăн произведенийĕсене вулана чух хамăр сĕтел çинче кĕнеке пуррине те манса каятпăр. Произведенире каласа панă ĕçсем пире пĕтĕмпех тарăн шухăша яраççĕ, малалла вулама илĕртсе тăраççĕ. Аса илерха Чакка паттăрлăхĕшĕн савăннă кăмăла,—вăл сăнар пирĕн чуна çĕклентерсе тăрать. Чакка чăн та халăх паттăрĕ иккенне эпир чунчĕререн туятпăр. Е сăхă та куштан Алапите астăвăр, вулакансем ăна пĕтĕм чĕре хăвачĕпе курайми пулаççĕ.

Чăваш АССР халăх поэчĕ Семен Васильевич Эльгер хăйĕн хваттерĕнче.

Пире Левен суранĕ ыраттарать, Долбиловпа Бурцевăн организаторла пултарулăхĕ савăнтарать. Çырса кăтартнă событисене вуланă хыççăн эпир хамăр таврара мĕн-мĕн пулса иртнине пĕлекенсем пулатпăр. Çавсене пĕлни пирĕн ăса çирĕплетет, малалла ӳсме пулăшать, коммунизм тунă чух пĕтĕм пултарулăхпа ĕçлеме хушать.

Кĕнеке çыраканпа вулакан хушшинче кирек хăçан та пысăк туслăх пулмалла. Çав туслăх çăмăллăн çыхăнмасть, писательпе вулакан пĕр-пĕрипе куçа-куçăн курнăçмасăр, кĕнеке вуланă чухне çеç тĕл пулаççĕ. Вулакан хисеплетĕр, хаклатăр тесен, писателĕн хăйĕн вăйлă пулмалла, пурнăçа вăл ыттисенчен нумайрах пĕлмелле, инçетрех курмалла, вулакан хăйĕн кулленхи пурнăçĕнче асăрхайман сăнсене чухламалла, аса килмен шухăшсене аса илтермелле. Этемĕн кăмăлне уçма, савăнтарма, çĕклеме, кирлĕ чухне хуйхăртма та писателĕн ăста пĕлмелле. Çавăнпа ăна этем чунĕн инженерĕ тесçĕ те. Çак пархатарлă ĕçре писателĕн пĕртен-пĕр хăват пулма пултарать—талант. Анчах талант вăл ырми-канми ĕçлемесĕр, тăрăшмасăр нимĕне те тăмасть. Çак тĕрĕслĕхе С. В. Эльгер пĕр вăхăта та манмасть. Унăн виçĕмçул ачасем валли çырса кăларнă «Ешĕл хунав» кĕнекине çеç илсе пăхар, унта та вулакан хăй валли темĕн чухлĕ çĕнĕ хыпар тупать.

Вулакансем Эльгерпе ялан туслă. Унăн нумай сăввисене мĕн çамрăкран пăхмасăр калама вĕренеççĕ те манмаççĕ. Кам астумасть «Хурçă карап» сăвва? Эльгер унта совет халăхĕн ертсе пыракан паттăр вăйне—Коммунистсен партине тата ăна организацилекен аслă Ленина пĕтĕм чун-хавалĕпе сăнласа кăтартать. Çав сăвва çырни вăтăр çул çитет пулин те, вăл, паян çырнă пекех, хăватлăн янăрать.

Эльгер творчестви пĕтĕмпех халăх пурнăçĕпе çыхăннă. Унăн поэзийĕ—социализм хĕвелĕпе çуталнă искусство, ĕçри хаваслăхпа çĕкленнĕ халăхăн чун-хавалĕ. Çавăнпа Эльгере Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн 1940 çулхи июнĕн 23-мĕшĕнчи Указĕпе Чăваш республикин халăх поэчĕ ятне панă.

Эльгерĕн пархатарлă ĕçĕсене хисеплесе, Совет правительстви ăна Ленин орденĕпе, Ĕçлĕх Хĕрлĕ ялав орденĕпе тата «Аслă Отечественнăй вăрçăра хастар ĕçленĕшĕн» медальпе наградăланă.

Семен Васильевич Эльгер вăтă мар-ха. Халĕ унăн шăпах творчестви хĕрсе çитнĕ вăхăт, вăл пысăк произведенисемпе ĕçлет. Çакăнпа пĕрлех вăл пирĕн çамрăк писательсене пĕрмай пулăшса тăрать. Вăл хăй редакцилене кĕнекесен, çамрăк авторсене панă рецензисемпе консультацисен шутне тĕрĕссипе пĕлсе çитме те çук. Вĕсемсĕр пуçне вăл халăх хушшине час-часах тухса çӳрет, депутат пулнă май, халăхăн нумай тĕрлĕ ĕçне тăвать.

Халăх юрăçине Семен Васильевич Эльгере утмăл çул тултарнă ятпа пĕтĕм таса чĕререн ырă сывлăх сунатпăр, тăван халăх валли малашне те лайăх кĕнекесем çырма сĕнетпĕр.

Н. ИЛЬБЕК.

АГРОНОМ



Очерк

Василий РЖАНОВ

1. „Эсир йӑнӑшатӑр, Василий Николаевич...“

Ялхуҫалӑх министерствинче черетлӗ канашлу пынӑ. Трибуна умне оратор хыҫҫӑн оратор тухнӑ. Пӗрисем ҫуракине вӑрлӑх хатӗрлес ӗҫ кая юлса пыни ҫинчен асӑрхаттарнӑ, теприсем агрономсене яла час-час кайса килме лайӑххрах майсем кирли ҫинчен чарӑнса тӑнӑ.

Малти ретре пӗр хура куҫлӑ ҫамрӑк хӗр кӑна, сӑмах хушмасӑр, тарӑн шухӑша кайса ларнӑ. Анчах та, юлашки оратор колхозсене кайса ҫӳреме юртӑпа хытӑ чупакан лашасем кирли ҫинчен питӗ ҫивӗч ыйту лартнӑ май, пирӗн хӗр икӗ хура шӑрҫа пек куҫӗсемпе кӑшт трибуна еннелле пӑхса илнӗ те юнашар ларакан юлташне шӑппӑн ҫапла каланӑ:

— Ӗнтӗ колхозсене рысакпах ҫӳрес пулсан, малтан ӑна кӳлме пӗлни кирлӗ... Тата юрттипе-сиккипе ҫӳресен, тырӑ тӑвас вырӑнне шӑхӑрса юласси кӑна пулӗ...

— Тӗрӗс, питех те тӗрӗс шухӑшлатӑн, Люба,—тенӗ институтра пӗрле вӗреннӗ юлташӗ.—Тен, ку шухӑша трибуна ҫинчен тухса калӑн?!.

— Ҫук, малтан лаша кӳлме хӑмӑн вӗренес шухӑшӑм пур-ха, — тенӗ Люба.

Перерыв вӑхӑтӗнче коридорта Любӑпа сарлака хулпуҫҫиллӗ, тулли питлӗ, пӗр вӑйпитти ҫын тӗл пулса калаҫасшӑн пулчӗ. Вӑл, аллисене сарса, катаранах ӑшшӑн сӑмах хушрӗ:

— Каҫарӑр, хӗрӗм, хамӑр енчисем пулсан та, сирӗнпе министерствӑра паллашма тивет...

— Пурӑнан пурнӑҫра пулать ҫав, — терӗ Люба, именерех. — Пӗр касра пурӑнаҫҫӗ, паллашасса Мускавра е Шупашкарта паллашаҫҫӗ...

Ҫавӑн пек тӗл пулчӗҫ те ӗнтӗ Карапай-Шӑмӑршӑ колхоз председателӗ Василий Николаевич Падюковпа Шӑмӑршӑ райсемхоз агрономӗ Любовь Дмитриевна Кологреева. Шупашкара канашлӑва киличчен вӗсем пӗр-пӗрин ҫинчен нумай ырӑ сӑмах илтнӗ, Шӑмӑршӑ урамӗпе иртсе ҫӳренӗ чух та тӗл пулкаланӑ, анчах ҫумма-ҫуммӑн ларса калаҫманччӗ-ха. Паян, министр заместителӗ патӗнче пулнӑ хыҫҫӑн, Василий Николаевич Падюковӑн Люба Кологреевӑпа курнӑҫмаллах пулнӑ, — мӗншӗн тесен Карапай-Шӑмӑршӑ колхозне ҫӗр ӗҫне чӗререн юратакан ӑста агроном кирлӗ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ артель членӗсем хӑйсен председательне Шупашкара, министерствӑна, ӑсатас умӗн хыттӑнах наказ панӑ:

— Тулӑклине тупса кил, ҫӗр ӗҫне юратаканнине! — тенӗ пӗрисем.

— Асту, хут ҫырма юратаканни ан пултӑр тата,—асӑрхаттарнӑ теприсем.

— Министрӗпех калаҫса пӑх, пирӗн колхозшӑн пур агроном та пӗрешкелех пулас ҫук, — канаш панӑ ваттисем.

Министерствӑра Падюкова колхоз агрономӗ пулма Люба Кологреевӑна сӗнчӗҫ. Ҫавӑнпа та канашлу вӑхӑтӗнче вӑл ӑна чылай сӑнарӗ, юлашкинчен, хӑйӗн тӗп шухӑшне пӗлтермесӗр, Любовь Дмитриевна Кологреевӑпа куҫа-куҫӑн курса калаҫасшӑн пулчӗ.

Акӑ вӗсем, пӗрне-пӗри алӑ панӑ хыҫҫӑн, кантӑк умне пырса тӑчӗҫ. Хӗвел, хӑйма пек шурӑ пӗлӗт айӗнчен тухса, кулса ячӗ, чӳречерен хӗртсе пӑхма пуҫларӗ. Часах ҫурт ҫинчен тумла шӑпӑртатса юхма тытӑнчӗ.

— Ҫуркунне ҫитрӗ, Любовь Дмитриевна, ҫуркунне!— терӗ Василий Николаевич, калас сӑмах хӑех чӗлхе вӗҫне килнипе савӑнса.

— Эпир кунта заседанире сӑмах ҫаптарса ларатпӑр,— пӑшӑрханса илчӗ Люба. — Ман шутпа, халь пирӗн пурсӑмӑрӑн та колхозсенче пулмалла...

— Мӗншӗн-ха сирӗн унашкалах васкамалла, Любовь Дмитриевна? — юриех шӳт туса тӗпчесшӗн пулчӗ Падюков.— Эсир райсемхозран райсельхоза кӑна куҫатӑр вӗт?

— Сирӗн шутпа, эпӗ пӗр канцелярирен тепӗр канцелярие куҫма кӑна васкатӑп-мӗн... Ҫапла-и, Василий Николаевич?

— Агрономшӑн пулсан, канцеляри ӗҫӗ тырӑ акниех мар ӗнтӗ, — терӗ колхоз председателӗ, куҫӗсене чеен хӗскелесе.

— Вырӑнлӑ сӑмах. Анчах эсир ман пирки йӑнӑшатӑр, Василий Николаевич, — ӳпкелешрӗ Люба-агроном. Унтан, пӗр вӑхӑт сӑмах хушмасӑр тӑнӑ хыҫҫӑн, вӑл ҫирӗппӗн каларӗ:

— Эпӗ нимӗнле канцелярире те ӗҫлеме шухӑшламастӑп, колхоза ӗҫлеме каятӑп... Паянах, хӑть ҫак сехетрех...

— Чӑннипех калатӑр-и эсир ку сӑмаха? — ӗненмен пек пулса, татах тӗпчеме тӑчӗ Падюков.

— Ҫынна сӑмахран мар, ӗҫрен пӗлеҫҫӗ,— терӗ Люба, шӑнкӑрав йыхӑрнипе лару залне кӗме хатӗрленсе.

Василий Николаевич Падюков ҫак вӑхӑтра министр заместителӗн кабинечӗ еннелле ҫапла шухӑшласа утрӗ: «Ҫамрӑк пулсан та, тен, пире кирлӗ агроном?!. Ӗҫрен хӑраса тӑмӗ, йывӑрлӑх тухса килсен те пӑрахса тармӗ... Ашшӗ ӗҫре ӳркенмен ҫын, Никишино ялӗнчи вырӑс хресченӗ... Чылай вӑхӑт колхоз председателӗ пулса ӗҫлерӗ... Шӑмӑршӑ таврашӗнче ӑна хисеплемен ҫын ҫук ӗнтӗ... Хӗрӗ тата — каснӑ-лартнӑ ашшӗ пекех... Ҫӗр ӗҫӗнчен уйӑрӑласшӑн мар!» Ҫак шухӑшсемпе Василий Николаевич Падюков кабинета ҫӑмӑллӑн утса кӗрсе кайрӗ.

Ҫав кунах Люба Кологреевӑна министр заместителӗ хӑй патне чӗнсе илчӗ, вӑл ӑна Карапай-Шӑмӑршӑри Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз агрономӗ пулма приказ пачӗ. Тата ҫула тухас умӗн ҫапла каларӗ: «Пуринчен ытла эсир вӑрлӑх сортне лайӑхлатас ӗҫе ҫирӗппрех тытӑнӑр — ку вӑл сирӗн тӗп задача»,—терӗ.

2. Карапай-Шăмăршă

Пур-ши тата кунтан илемлĕрех вырăн ку таврара?

Ака уйăхĕнче Патăрьел мăн çулĕпе вăрман урлă килсе тухсан: «Ку ял мар, чечекленекен сад», тейĕн.

Хĕлле, шартлама сивĕре иртсе çÿренĕ чух, сирĕн умма ял вырăнне юмахри пек шур мамăкпа витĕннĕ çап-çутă усланкă тухса тăрĕ...

Йĕри-таврах вăрман. Çĕр çулхи чăрăшсемпе хырсем çулла та хĕлле те хăйсен улшăнман симĕс тумĕпе яла илем кÿреççĕ.

Карапай-Шăмăршă çу уйăхĕн пуçламăшĕнче уйрăмах илемлĕ. Шăп çакăн пек вăхăтра, виçĕ çул каярах, яла Люба Кологреева агроном килсе çитнĕ. Вăл кун колхозра хĕрсех çуртри акнă. Люба, тусанпа хупланнă грузовик çинчен анса, колхоз правленине кĕрсе тăмасăрах, хирелле тухса утнă.

Акă унăн куçĕ умне чи малтан чуна илĕртекен усланкă мар, муклашкаллă-хăйăрлă тăм тăпра сарăлса выртни курăнчĕ. Кунсăр пуçне, Люба çакна та асăрхарĕ: Карапай-Шăмăршă çĕрĕ вырăнĕ-вырăнĕпе ытла та çырма-çатраллă иккен.

Уй варринче Люба, пĕр чăмăркка тăпра алла илсе, шухăша кайса тăчĕ: «Сухаласса ĕнтĕ ĕнер касхине е çĕрле сухаланă, анчах паян хĕвел питтинче ку тăпра типсе муклашкаланса ларма пуçланă та... Ăçта-ха сăлтавĕ? Паллах, ку çĕр, сывмар çын пек, халран кайнă, начарланнă, унăн сĕткенĕ пĕтнĕ...» Люба çапла шухăшласа тăнă вăхăтра çулпа икĕ харсăр ача пĕр лав вăрлăх турттарса пыратчĕç. Малтанах вĕсем иккĕшĕ те, ютшăнса, Любăна курман пек пулчĕç, çапах та, кăшт маларах иртсе кайсан, пĕри хăйĕн юлташне юриех: «Ыйтса пăх-ха, мĕн ку яштака майра пирĕн сухаланă çĕр тăрăх ярăнса çÿрет?» терĕ.

— Эй, майра аппа! Мĕн, эсир тăри юрланине итлеме килнĕ-и?—кăшкăрчĕ хайхи.—Итлĕр, итлĕр! Пирĕн Карапай-Шăмăршăра çулталăкĕпех тăрисем юрлаççĕ, тÿпере те кăнкăвак...

Люба, чăваш чĕлхине пĕлмесен те, сăмах хăй çинчен пынине аванах чухларĕ.

— Чим, ачасем! Хăш уя каятăр эсир? — чĕнчĕ вăл, лав патнелле пырса.

— Тулă акнă çĕре, — терĕ пĕри вырăсла.

— Кам пулатăр эсир? — ыйтрĕ тепри, пĕлесшĕн пулса.

— Сирĕн агроном — Кологреева.

— Шупашкарта ялхуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухни-и? — пĕр харăс ыйтрĕç ачасем, лавне тăратса.

— Çавă-çке, — терĕ Люба, хăйне ачасем пĕлнинчен тĕлĕнсе. — Ăçтан пĕлме пултартăр-ха эсир ман çинчен, çамрăк тусăмсем?

— У-у, эсир пирĕн колхоза ĕçлеме килесси çинчен пĕтĕм ял пĕлет! — шавлăн каласма пуçларĕç ачасем. — Хăпарса ларăр кунта... Ларăр, ларăр!

— Шкулта вĕренетĕр пулĕ-çке?

— Çиччĕмĕш класра... Паян — канмалли кун, аттесене пулăшас терĕмĕр... Ну, атя, эй!

Виççĕмĕш уйра Любăна бригадир Петр Столяров кĕтсе илчĕ. Люба, халь çеç тултарса килнĕ михĕрен пĕр ывăç тулă илчĕ те, ывăçран ывçа юхтарса, сăвăрма пуçларĕ.

— Кашни пĕрчĕ — пĕр ылттăн! — савăнăçлăн мухтанчĕ бригадир.

— Чăнах та, эсир каларĕш, кашни пĕрчĕ — ылттăн,— килĕшрĕ Люба. — Лайăх çемçетнĕ, кĕрпеклĕ тăпра çине аксан, ку ылттăн пĕрчĕсенчен пĕр тăваткал метрта сахалтан та 300—400 пучах çитĕннĕ пулĕччĕ, е тепĕр майлă каласан, пĕр гектартан 120—150 пăт тулă пухса илме май пулĕччĕ...

— Мĕн, пирĕн çĕр çав териех япăх-и вара? — кăмăлсăртарах пулчĕ бригадир.

— Çав териех япăх мар, çав териех пăсăк, — терĕ агроном, алăри тулă пĕрчисем çине хĕрхеннĕ пек пăхса.

Унтан вĕсем, сеялкăпа тырă акнине чылай вăхăт сăнаса, уй тăрăх утрĕç. Сошниксемпе вăрлăх пăрахса пыракан кĕпçесем хушшине хăйăрлă тăм муклашкисем час-часах капланса ларнине кура, Люба пĕрре çеç мар асăрхаттарчĕ:

— Куратăр-и, ăçта сапалатпăр эпир хамăрăн ылттăна? Ĕлĕк, акана тухсан: «Муклашкасем чăх çăмарти пек анчах тăрса юлчăр, унсăрăн муклашка айĕнчен тырă шăтса тухмасăрах выртса юлĕ», тенĕ. Кăна ĕлĕк, асаттесем сухапа çиелтен шăйăрса ака тунă чух, каланă! Халь, пирĕн ĕмĕрте, кам çырлахтăр-ха авалхи виçепе? — терĕ Люба, сеялка умĕнче капланса ларнă тăпра муклашкисене аллисемпе сирсе...

— Ара, ку майра аллине вараласран хăраса тăмасть-çке, пĕшкĕнсех ĕçлет! — шавлăн каласма тытăнчĕç уй хĕррипе иртсе пыракан хĕрарăмсем.

— Мĕнле майра пултăр? Эсир хăвăр майрасем, вăл — пирĕн агроном! — хирĕç тавăрса каларĕç вăрлăх турттаракан ачасем.

Çак вăхăтра агрономпа бригадир хушшинчи сăмах малалла кайрĕ:

— Çĕртен çултан-çул тырă ытларах илес тесен, ăна пĕрмаях çĕнетсе пымалла... Ака тăпри çакнашкал çăпата калăпĕ пек муклашкаллă мар, кĕрпеклĕ пулмалла. Çавăн пек структураллă тăпрана çуллахи çумăр, юр шывĕ тата сывлăшри нÿрĕ пĕтĕмпех сăрхăнса кĕрет, анчах кун пек пăсăк, хытса çитнĕ тăпрана çуллахи çумăр 30 процентран ытлашши ниепле те сăрхăнса кĕрес çук, юр шывĕ — пĕр тумлам та!

... Агроном 3-мĕш уйра пулнине пĕлсен, колхоз председателĕ Падюков часах кунта килсе çитрĕ. Хĕпĕртенипе вăл чи малтан Любăна, колхоза ĕçлеме килнĕ ятпа, чĕререн саламласшăнччĕ, анчах, пĕрне-пĕри алă париччен, унăн агрономпа бригадир хушшинчи каласăва хутшăнмалла пулчĕ.

— Василий Николаевич, эсир пĕлме кирлĕ, — ыйтрĕ Люба, — курăк вăрлăхĕ миçе гектар акнă кăçал пирĕн колхоз?

— Вуннăран кая мар...

— Вуннă?! Кирлипе танлаштарсан, ку калама çук сахал... Вуннă мар, вунă хут ытларах акмалла пулнă!

— Ăнланатăп, Любовь Дмитриевна, лайăххах ăнланатăп,— терĕ колхоз председателĕ, шухăша кайса.—Эсир ĕнтĕ пирĕн çĕре Вильямс ученăй меслечĕпе çĕнетесшĕн...

— Тĕрĕс ăнланатăр, Василий Николаевич! Çак тăмлă çĕр çинче тырă тухăçлă пултăр тесен, пирĕн, чи малтан, Вильямс академик меслечĕпе усă курмалла та.

Люба шухăшĕпе, тырра курăкпа ылмаштарса акни начарланнă уй тăприне питех те кĕске вăхăтра кĕрпеклĕ, тырă лайăх пулакан çĕр туса хума май парать, тепĕр енчен, выльăхсем валли курăк апачĕ те çителĕклĕ хатĕрлеме пулăшать. Çапла вĕрентнĕ те ĕнтĕ Любăна институтра. Падюков, колхоз председателĕ, Вильямс курăк акса тырпул тухăçне чылаях хăпартма май пурри çинчен вĕрентнине хирĕç тăман, анчах вăл ăна ĕненсех те кайман. «Мĕнле-ха капла, тырăпа хутăштарса акнă курăк хăй тĕллĕн çĕр хăватне çав териех çĕклеме пултартăр? Ку ĕç тÿнтерле пулсан?.. Тырри те пăт-пат кăна шăтса тухĕ, курăкĕ те кукша пуç çинчи çÿç пĕрчисем пек курăнкаласа ларĕ...» — шухăшланă Василий Николаевич Падюков. Çавăнпа та пуль ĕнтĕ колхоз çав çул курăка 10 гектартан ытлашши акасшăнах пулман. Халь Люба-агроном, колхоза ĕçлеме килсе çитсенех: «Вунă гектар мар, вунă хут ытларах акмаллаччĕ!» — терĕ.

Çакăн хыççăн çулталăка яхăн иртрĕ. Люба парторганизаци пулăшнипе агрозоотехника курсне йĕркелерĕ, унта хĕллехи вăрăм каçсенче колхозниксемпе нумай хутчен занятисем ирттерчĕ, кăнтăрла, кашни кун тенĕ пекех, çуракине вăрлăх хатĕрлес ĕçе çине тăрса ертсе пычĕ. Люба сĕннипе колхоз çав çултан пуçласа «сортлă мар тырра пĕр пĕрчĕ те акас мар» тесе решени йышăнчĕ. Ĕнтĕ çураки çывхарса килнĕ май, колхоз хĕрĕсем агрономпа пĕрле кĕлетсенчи пĕтĕм вăрлăха юрласах сортларĕç, правлени чи лайăх сортсем çĕнĕрен туянчĕ. Çав вăхăтрах колхоз хăйĕн агрономĕ хушнипе пусă çаврăнăш планне тепĕр хут пăхса тухрĕ, çĕре лайăхлатас шутпа, тырра курăкпа ылмаштарса акас системăна куçма килĕшрĕ. Çапла колхоз виçĕ тĕрлĕ пусă çаврăнăшĕ туса хучĕ: тырпул акмалли — вунă уйлă (937 гектар), выльăх апачĕсем туса илмелли — сакăр уйлă (90 гектар), çаран тата кĕтÿ çÿретмелли — вунă уйлă (202 гектар). Акана тухиччен Люба çуртри пуссине 3000 тонна тислĕк, 190 центнер минераллă удобрени кăларттарчĕ. Агроном сĕннипех правлени уй-хир бригадирĕсен йышне çĕнĕрен пăхса тухрĕ. Петр Столяров пек агротехникăна ăнланман, çăмăлттай бригадирсем вырăнне Василий Петьков, Василий Арбузов пек çĕр ĕçне юратакан, пуçаруллă колхозниксене лартрĕç.

Çураки вăхăчĕ килсе çитрĕ. Карапай-Шăмăршă колхозĕ, агроном ертсе пынипе, пирвайхи хут акана тухрĕ. Ку ĕнтĕ Любăшăн питех те пысăк экзамен пулчĕ, мĕншĕн тесен нумайăшĕ: «Пирĕн çĕр çинче тырă тăвассиех пулĕ-ши?» тесе

иккӗленнӗ. Ҫавӑнпа та пуль ӗнтӗ, кунти ҫынсем ӗлӗкренпех тырӑ ҫине шансах кайман, ытларах аякра ӗҫлесе тупӑш илме тӑрӑшнӑ. Ҫакна пула, ҫулсерен ҫӗнетмен ҫӗр хытсах пынӑ, тесетинрен 40—50 пӑтран ытла тӗштырӑ пуҫтарса кӗни пулман. Колхоз тунӑранпа ҫӗр тухӑҫлӑхӗ чылаях ӳсрӗ, уйрӑмах машина-трактор станцийӗ ӗҫлеме пуҫланӑранпа кунта пысӑк улшӑну пулчӗ. Ҫапах та, малта пыракан колхозсемпе танлаштарсан, Карапай-Шӑмӑршӑ колхозӗн тырӑ туса илес ӗҫ ӑнӑҫлах пулман-ха. Ҫавна кура, колхоз председателӗ Василий Николаевич Падюков, халӑхпа пӗр шухӑшлӑ пулса, агронома чӗнсе илчӗ те.

Люба ҫулталӑк хушшинче ҫӗр ӗҫне ӑслӑлӑх кӑтартнӑ пек йӗркелессишӗн нумай тӑрӑшрӗ, анчах ӗҫ мӗнле вӗҫленесси никамшӑн та паллӑ пулманччӗ-ха. «Кӗркунне кӗлетсем тулли тырӑ пулсан — аван ӗҫленӗ, тейӗпӗр, унччен туман тырра пӑтпа виҫес мар»,—тенӗ ватӑ колхозник Еремей Сергеевич.

... Хӗлӗпе ҫунӑ юр уй тӳпинчен кайсанах, ирхи шӑн ҫийӗн Люба ыраш калчи речӗсем урлӑ икӗ сеялкӑпа клевер акма тытӑнчӗ.

— Мӗн хӑтланать ку хӗр! — тӗлӗнмеллипех тӗлӗнчӗҫ хӑшӗ-пӗрисем.

— Ҫӑкӑр вырӑнне пире курӑк ҫитересшӗн пуль?!—иккӗленчӗҫ теприсем.

— Чавкапуҫӗнчен ӗнтӗ яшка тӑвасси те пулмӗ...

Темле сӑмах илтсен те, Люба хӑйӗн ӗҫне йӗркипе туса пычӗ. Виҫӗ кун хушшинче вӑл ыраш калчи ҫине, унтан пушӑ уя 100 гектар клевер тата ытти нумай ҫул ӳсекен курӑксем актарчӗ. Ҫӗр пӑсланма пуҫласан, колхоз кӗрхи ҫӗртме ҫийӗн ҫуртри акрӗ. Люба ҫав кунсенче хӗвел тухса хӗвел ларичченех уйран таврӑнмарӗ. Бригадӑран бригадӑна, пӗр трактор патӗнчен тепӗр трактор патне ҫӳрерӗ. Ака ӗҫне вӑл куҫран вӗҫертмерӗ.

— Вӑрлӑха хӗрхенсе акас мар, — канаш пачӗ вӑл бригадирсене. — Нумай пӗрчӗрен нумай тырӑ шӑтса тухать, хӗрхенсен хӗрлӗ йытӑ ҫиет.

Пӗр гектар ҫине Люба 200-шер килограмм тулӑ актарчӗ, иртнӗ ҫулсенче гектар пуҫне 170—180 килограммран ытла акни пулманччӗ-ха. Мӗншӗн-ха Люба вӑрлӑх нормине чылаях ӳстерчӗ? Ку ӗнтӗ ӑнсӑртран шухӑшласа кӑларнӑ япала пулман. Кӑҫал колхоз сортлӑ та шултра пӗрчӗллӗ тулӑ акрӗ. Люба сӑнанӑ тӑрӑх, сортсӑр тулӑн пин пӗрчийӗ 24 грамм туртать пулсан, акма суйласа илнӗ сортлӑ тулӑн пин пӗрчийӗ 35 грамм таять. Кунашкал шултра вӑрлӑха хӗрхенсе нормӑран чакарса аксан, тырӑ ытлах та сайра пулнӑ пулӗччӗ, — ун чух вара: «Пӗр пӗрчӗрен пин пӗрчӗ пултӑр!» тени пушӑ сӑмах кӑна. Ҫавӑнпа та Люба иртен пуҫласа каҫченех уйра ӗҫлерӗ, тракторсемпе тырӑ акакансен ӗҫне тимлӗн сӑнаса пычӗ. Унччен вӑл пӗтӗм вӑрлӑха хӗвел питӗнче шӳтерчӗ, акасса ретлӗ сеялкӑпа актарчӗ.

Хресченӗн ҫуркуннехи чи пысӑк савӑнӑҫӗ — уй-хир ешернинче. Ирпе ирех хире тухса, тырӑ хӑватлӑ шӑтнине курсан, вӑл хӑйӗн килне ҫав тери хавхаланса таврӑнать.

Люба та ака ӗҫне сӑнама колхоз председателӗпе пӗр хутчен кӑна мар уя тухса пӑхрӗ, анчах ӑна тулӑ хирӗ хаваслантармарӗ: вырӑнӗ-вырӑнӗпе калча питӗ вӑраххӑн, асапланса шӑтса тухнӑ...

— Сывлӑш ҫитмест, Василий Николаевич, сывлӑш!—терӗ Люба, председатель умӗнче хӑй айӑплӑ пек пулса.

— Тата темле сывлаттармалла ӗнтӗ ку тӑмлӑ ҫӗре, — тарӑхрӗ Падюков.

— Коротков пек, кашни гектар ҫине ҫулсерен 30—40-шер тонна тислӗк, 6—7-шер центнер минераллӑ удобрени кӑларма пуҫласан, пирӗн ҫӗр те лайӑххах сывлӑш ҫавӑрӗ, Василий Николаевич,—ҫирӗппӗн каларӗ агроном.—Эпир кӑҫал гектар пуҫне мӗн пурӗ те 8 тонна тислӗк, пилӗкшер пӑт тенӗ пек минераллӑ удобрени кӑлартӑмӑр... Сахал ку, чӑтма ҫук сахал!

Председатель хирӗҫ нимӗн те шарламарӗ. Унӑн, Любӑнни пекех, пӗр шухӑш—«Мӗнле те пулин тулӑ калчине вӑй илме парасчӗ!» Хӑйӗн шанчӑкне вӑл халӗ пӗтӗмпех агроном ҫине хучӗ.

Люба ҫав кунах акнӑ тулла сӳрелеттерме кирли ҫинчен шухӑшларӗ. Анчах ҫуркуннехи пылчӑк ҫийӗн сӳрелеме хӑрушӑ, вӑхӑта ытла вӑраха яни те пысӑк сиен кӳме пултарать, мӗншӗн тесен, тӑпра типсе хытнӑ вӑхӑтра сӳрелесен, нумай калча кӑкланса тухма пултарать. Люба, ку ӗҫе кирлӗ вӑхӑтра туса иртерес тесе, сехетрен сехете уя тухса сӑнать, ҫӗр кӑшт типме пуҫласанах, вӑл бригадирсене тулӑ уйне йывӑҫ шӑллӑ ҫӑмӑл сӳресемпе сӳрелеттерет.

Тепӗр икӗ кунран тулӑ калчи симӗсленсе хӑпарчӗ. Ку ӗнтӗ колхозниксен кӑмӑлне ҫӗклерӗ пулсан та, ыраш калчи ҫийӗн клевер акнӑ уй нумайӑшне кӳрентерчӗ, ҫавӑнпа та пуль, хӑшӗ-пӗрисем агроном ҫине чалӑшшӑн пӑхма тытӑнчӗҫ. Люба ҫакна хӑй те лайӑх туйрӗ: ыраш ӳснӗҫемӗн хӗвел ҫуттинче сайра-сайра курӑнать, клеверӗ ыраш айӗн ашкӑрнӑ кӑна. «Халӗ ӗнтӗ курӑк ҫимелле-и?» — шавланӑ хӗрарӑмсем, ыраш вырма тухсан.

Чӑнах, вӑтам шутпа, колхоз тӗштырӑ иртнӗ ҫулхинчен ытларах туса илчӗ пулсан та, обществолла выльӑх-чӗрлӗх валли курӑк апачӗ юлашки ултӑ ҫул хушшинче пирвайхи хут ҫителӗклӗ акса ҫитӗнтерчӗ пулсан та, — «Пирӗн ытлашши мухтанмаллиех ҫук-ха».—терӗ колхоз председателӗ Падюков авӑн ҫапса пӗтернӗ кун. Кӑна Василий Николаевич иккӗленмесӗрех, чи малтан ыраш калчи ҫийӗн клевер акнӑ уя асӑнса каларӗ. Кунта пӗр гектар пуҫне 40 пӑтран ытла тырӑ пуҫтарса кӗртесси пулмарӗ.

Куншӑн пуринчен ытла Люба пӑшӑрханчӗ. «Мӗн калӗ ӗнтӗ мана халӑх? Тен, манран малашне те усси сахал пулӗ?» — терӗ вӑл, тарӑн шухӑша кайса. Нимрен ытла Люба халӑх шанчӑкне ҫухатасран хӑрарӗ. «Пӗрре шанӑҫа ҫухатсан, урӑх нихҫан та тупас ҫук...»

— Шухӑшланӑ ӗҫ ӑнсах каймарӗ, Еремей Сергеевич,—чунтан калаҫасшӑн пулчӗ Люба пӗррехинче ватӑ колхозникпе. — Кӗлетсене тултармалӑххах тырӑ тӑваймарӑмӑр кӑҫал...

— Кӑмӑлна вӑхӑтсӑр хуҫас мар, хӗрӗм, — терӗ Еремей Сергеевич, — пурнӑҫ вӑл пӑрнӑҫсӑр пулмасть, тырӑ туса илесси ҫӑмӑл ӗҫ мар.

— Вӑл ҫапла та-ха, пирӗн тырпул тухӑҫне хӑвӑртрах хӑпартмалла-ҫке...

— Хут ҫинче ҫырнӑ пек пулса пырсан, тем пекехчӗ те, анчах тыррине хут ҫине мар, ҫӗр ҫине акмалла-ҫке,—аякран ҫавӑрса каларӗ Еремей Сергеевич. — Эсӗ, хӗрӗм, асӑрхарӑн пулӗ: ҫул хӗрринчи ҫереме ӑнсӑртран тракторпа сухаласа акнӑ вырӑнта ыраш лаша пӗкки курӑнми вӑйлӑ ҫитӗнчӗ — пӗвӗ хӑмӑш пек, пучахӗ чакан пек! Ана варринелле вӗлтӗркке кӑна пулчӗ... Мӗншӗн-ха пӗр пек тӑмлӑ ҫӗр ҫинчех тырӑ пӗр пек ҫитӗнмерӗ? Мӗншӗнни курӑнсах тӑрать: ҫул хӗрринчи ҫӗр, чылай вӑхӑт сухаламасӑр, канса выртрӗ, ака ҫӗрне, пӗр канӑҫ памасӑр, ҫулсерен чаваласа кӑна пыратпӑр...

— Сирӗн шутпа, Еремей Сергеевич, лайӑх тырпул туса илес тесен, акмалли ҫӗре акмасӑр вырттармалла... Ҫапла-и?—ыйтрӗ Люба.

— Ака-суха ӗҫне, ҫӑпатана пӗр калӑппа тунӑ пек туса пырсан, усси нумаях пулмӗ... Ҫӗр, кӑшт кансан, юсанаканччӗ, халь эпир ӑна пӗрре те канӑҫ памастпӑр. Ҫерем уҫса е вӗтлӗх кӑкласа акнӑ ҫӗрӗн хӑвачӗ тата ытларах... Ахальтен мар пуль ҫав, чӑвашсем ӗлӗк: «Ҫерем усрӑм — вир акрӑм, вирӗ пулчӗ пӑрҫа пек», тесе юрлатчӗҫ. Пирӗн колхозӑн вӗтлӗх кӑкласа акмалли ҫӗр йӗри-тавра сахал мар ӗнтӗ. Кӑклама ӳркенмесен, мӗн чухлӗ тырӑ туса илнӗ пулӑттӑмӑр!

— Ҫак вӑхӑтрах акмалли ҫӗре пӗтӗмӗшпех ҫӗнетсе пырсан! — хавхаланчӗ Люба.

— Ку тӗлӗшпе ӗнтӗ, эсир пирӗн колхоза киличчен, ытлашши хускалниех пулманччӗ-ха, — мухтарӗ старик ҫамрӑк агронома.

— Ӗҫӗ курӑнсах каймасть-ха, Еремей Сергеевич,—терӗ Люба, ним мухтанмасӑр.

— Пӗр курӑк акнипех ҫӗре ҫӗнетме йывӑртарах пуль ҫав, — тӗксе илчӗ Еремей Сергеевич, шухӑша кайса. — Эх, ҫав вӑрман таврашӗнчи ҫӗрӗк тӑприне пӗтӗм уй-хире сапаласан, пирӗн ҫӗр самаях кӑпӑшкаланнӑ пулӗччӗ... Ку имҫам халь вӑрманта ахалех купаланса выртать.

Старикпе агроном нумайччен калаҫрӗҫ. Юлашкинчен Еремей Сергеевич:

— Эсӗ, хӗрӗм, урапа ҫинчен ӳксе юлас мар тетӗн пулсан, тилхепине алӑран ан вӗҫерт, тата хытӑрах ҫавӑрса тыт, — терӗ.—Ҫулӗ саншӑн паллӑ, куҫусем те пирӗннинчен маларах пӑхаҫҫӗ... Ӗлӗк эпир, чӑвашсем, тырӑ аван пултӑр тесе, ака хыҫҫӑн чӳклеттӗмӗрччӗ, ӳксе виҫ хут турра пуҫҫапаттӑмӑрччӗ, тырри ҫапах та пулмастчӗ... Халь никам умӗнче те пуҫҫапма кирлӗ мар, турри — эпир хамӑр...

3. Çĕр çĕнелет

... Çу иртрĕ те кĕр çитрĕ. Карапай-Шăмăршăра ĕç хĕрӳлĕхĕ чакмарĕ. Люба Еремей Сергеевичпа калаçнă хыççăн хăйĕн шухăшĕсене председательпе парторганизаци секретарьне каласа пачĕ, халь вĕсем пурте килес çул чăнласах кĕлетсем лăк тулмалăх тырпул çитĕнтерессишĕн çĕнĕ наступлени пуçласа ячĕç. Ыраш акса пĕтерсенех, машина-трактор станци бригади кĕрхи çĕртме тума тухрĕ. Çак вăхăтра Василий Петьковăн уй-хир бригади вăрман таврашĕнчи çеремсене ватма пуçларĕ, Василий Арбузовăн бригади вĕтлĕх кăкларĕ. Лаврентьев бригади çĕртме пуссине лавĕ-лавĕпе вăрмантан торф турттарчĕ.

Çак çулчен çĕртме сухине колхоз 18—20 сантиметртан тарăн туманччĕ-ха, кăçал агроном хушнипе трактористсем 25—27 сантиметр тарăнăш сухаларĕç.

Курăк акнă уйра кĕрпекленме пуçланă тăпрана сиен кӳрес мар тесе, тата ку тăпрара пухăнса çитнĕ органикăлла япаласене сыхласа хăварас тесе, Люба курăк сийне кĕрĕн юлашки кунĕсенче кăна сухалаттарчĕ. Юр ӳксе çуна çулĕ ларсан, колхозниксем, хăйсен хастар председателĕ ертсе пынипе, Канашран минераллă удобренисем турттарма пуçларĕç, каярахпа, лăпăска юр çунă вăхăтра, ана çине тислĕк тăкса, пысăк купасем туса хучĕç. Апрелĕн малтанхи кунĕсенче, шăн тăпра çийĕн, колхозницăсем агрономпа пĕрле кĕрхи калчана апат пачĕç. Ку вăхăтра çĕр питех те нӳрлĕ пулнă, çавăнпа та уй тăрăх сапнă тислĕк, кĕл, çĕрĕк тăпра, хăвăрт ирĕлсе, калча тымарĕсене лайăх шӳтернĕ.

Юр айĕнче вăйсăрланнă тырă апат панă хыççăн селĕм çитĕнме пуçларĕ.

Тепĕр эрнерен кĕрхи тулăпа ыраш калчине колхозницăсем татах апатлантарчĕç: ку хутĕнче вĕсем ăна сульфатаммонипе суперфосфат пачĕç. Ун хыççăн калча речĕсем урлă «зигзаг» сӳрепе икĕ хутчен сӳрелерĕç.

Çуракине Карапай-Шăмăршăсем татах та хастаррăнрах ирттерчĕç. Унчченхи çулсенче ака 13—15 кун хушши тăсăлнă пулсан, çав çул колхозниксем 7—8 кун хушшинчех ĕçе вĕçлерĕç. Пахалăх енчен те ӳкĕнмелле пулмарĕ: тĕштырăсен вăрлăхĕсене акма пуçличчен имçамсемпе чӳхенĕ, нитрагинпа хутăштарнă тата яровизациленĕ. Çавăнпа пĕрлех çуртри акмалли уйсене, çĕртмерен пуçне, виçĕ хут кăпăшкалатнă.

Еремей Сергеевич «Ака-сухана, çăпатана пĕр калăппа тунă пек туса пырсан, усси нумаях пулмĕ» тесе асăрхаттарнине те шута илнĕ темелле. Люба ку çуркунне клевере ыраш калчи çийĕн мар, çурхи тулăпа пĕрле 80 гектар актарчĕ, тимофеевка вырăнне ытларах пăрçа, ясмăк акрĕç. Василий Петьковăн бригади, кĕркунне хура пусă тăрăх ыраш акнисĕр пуçне, халь уçнă çерем çийĕн пирвайхи хут вир акрĕ; Василий Арбузовăн бригади те вĕтлĕх кăкланă вырăна 5 гектар вир акрĕ. «Ку вăл пирĕн малтанхи тĕрĕслӳ!» — терĕ Василий Николаевич Падюков. Çав вăхăтрах колхоз пахча çимĕç акса тумалли лаптăка та, улма-çырла садне те пысăклатрĕ; пулă ĕрчетме, ялпа вăрман хушшинчи юханшыва пĕвелесе, кӳлĕ пек пысăк пĕве туса хучĕ, пĕве шывĕ хăпарса улăхалла сарăлсан, кунта, çурхи хĕвел çуттинче, ушкăнăн-ушкăнăн хур-кăвакалсем ишме пуçларĕç.

... Чăвашăн йăли ĕмĕртенпех çавнашкал ĕнтĕ: ака-суха пĕтерсен, савăнăçлăн ĕçсе-çиесси, юрласси, ташласси... Хăйĕн хăватлă ĕçĕпе мухтанасси те пулать. Еремей Сергеевич та кăçал акатуйĕнче пулмасăр чăтса тăраймарĕ. 60 çула çитрĕ пулсан та, çуракине тухнăранпа вăл пĕр ĕçрен те юлман. Халь вăл, укăлча тулашĕнчи симĕс тинĕс пек тырă пуссине туха-туха пăхса, чĕререн хавасланать. Акатуй кунĕ вăл Люба-агронома хăй патне ăшă кăмăлпа сăра ĕçме чĕнчĕ:

— Кĕрсе тухăр пирĕн пата, Любовь Дмитриевна, ака туса пĕтерни ятпа...

— Спасибо, Еремей Сергеевич! Лаша пĕкки курăнми тырă çитĕнсен, чĕнмесĕрех пырăп... Халь пуласси курăнсах каймасть-ха.

— Пулать тырă кăçал, пулать! — терĕ Еремей Сергеевич, кĕсъерен хут татăккипе чĕркенĕ ыраш калчине кăларса.— Куратăр-и, Любовь Дмитриевна? Ултă тымарлă! Ыраш калчи ултă тымарлă пулсан, ыраш вăйлă çитĕнессине пĕлтерет, тăватă тымарлă пулсан, вăрлăхлăх кăна çитĕннĕ пулĕччĕ... Тата çакна та асăрхарăм эпĕ, Любовь Дмитриевна: çул çуркунне



Кăç пулнă-пулманах Улатăр районĕнчи «Победа» колхоз урамĕсенче электричество çутăлса каять. Колхозăн 350 çын вырнаçакан культура çуртне халăх пухăнать. Кунти библиотекăра икĕ пин том ытла тĕрлĕрен литература пур, хаçат-журнал та çителĕклĕ. Культура çуртĕ çумĕнчи драма кружокĕ колхозниксене тăтăшах тĕрлĕрен спектакльсем лартса парать.

Культура çуртĕн пуçлăхĕ Иван Иванович Васянин ертсе пынипе, драмкружок совет драматургĕсен пьесисемпе пĕрлех Европăри классиксен произведенийĕсене те лартать. Колхозниксем спектакльсене юратса пăхаççĕ.

Ӳкерчĕксенче: Француз драматургĕ Мольер çырнă «Лекарь поневоле» пьесăри сценăсем.

П. Ефремов фотоӳкерчĕкĕ.

тĕмескеленсе юлчĕ — тырă аван пулать кăçал, Любовь Дмитриевна!

— Тĕлĕнтеретĕр эсир, Еремей Сергеевич,—терĕ Люба, йăл кулкаласа.

— Тĕлĕнмелли унта нимех те çук,— пат татса каларĕ старик, — сăнаса пыни тĕрĕс пулаканччĕ.

Чăнах та, çав çул Карапай-Шăмăршă уй-хирĕсем хăйсен çĕнĕ илемĕпе илĕртрĕç: ырашпа кĕрхи тулă калчисем çуркунне симĕс пустав пек тăсăлса выртрĕç, çитĕнсе çитсен тырри вырăнĕ-вырăнĕпе Атăл пек хумханакан пулчĕ... Çурла уййăхĕн юлашки кунĕсенче вырса пĕтерсен, çакă палăрчĕ: Василий Петьковăн бригади хăйĕн çĕр лаптăкĕнчи кашни гектартан вăтам шутпа ыраш 16,2 центнер, тулă 8,10 центнер, вир 32,85 центнер, пăрçа 18,31 центнер туса илчĕ, Василий Арбузовăн бригади вĕтлĕх кăкласа акнă вырăнта гектар пуçне 20-шер центнер вир çитĕнтерчĕ.

Клеверĕ çава илми ӳсрĕ: гектартан 40—50-шар центнер утă тухрĕ. Вăррине государствăна сутса, колхоз 50 пин тенкĕ тупăш илчĕ.

Çĕрулми гектартан вăтам шутпа 800—900 пăт тухрĕ.

Ĕнесен сĕт тухăçлăхĕ те самаях ӳсрĕ. Иртнĕ çулсенче пĕр ĕнерен 400—500 литр сĕт суса илнĕ пулсан, кăçал 1350—1500 литртан иртрĕ.

Мĕн каласси пур, Карапай-Шăмăршă колхозĕшĕн ку уйрăм цифрăсем чăннипех те пысăк ӳсĕмсем тунине пĕлтереççĕ. Чапа тухма юратаканнисем кун пек паха тĕслĕхсене хăйсен отчечĕсенче ытларах палăртса мухтаннă та пулĕччĕç. Анчах Василий Николаевич Падюковпа Люба-агроном хăйсен малтанхи хăшпĕр ӳсĕмĕсем çине пачах урăхла пăхрĕç. Пĕр енчен, вĕсем çулталăк хушшинче тунă ĕçсене тĕпчесе тухнă чух, чи малтан, халăх умне хăйсен çитменлĕхĕсене кăларса, тĕплĕн туйса илме тăрăшрĕç, тепĕр енчен, — колхозăн тумалли мелсем темĕн чухлех пуррине палăртрĕç.

— Коллектив ĕçне уйрăм тĕслĕхпе кăна хаклани хамăра хамăр улталани пулать, ĕçе пĕтĕмĕшпе илсе тишкерсе тухни кирлĕ, — терĕ Падюков, партин Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенине сӳтсе явма ятарласах пуçтарăннă пĕрлехи пухура. — Пĕтĕмĕшпе илсен, эпир пур ялхуçалăх культурисене те мĕнпур акмалли çĕр лаптăкĕнчен пĕр пек пысăк тухăçлă тырпул туса илеймерĕмĕр-ха...

— Çанталăкран иртсе каяймăн! — аллисене сулчĕç 3-мĕш бригадăри колхозниксем.

— Çанталăка тархаслани те кирлĕ мар! — çавăнтах хирĕç таварчĕ Люба-агроном, председатель калас сăмаха малалла тăсса.—Хăшĕ-пĕрисем кунта çурхи тулă пирки пуçĕсене усрĕç пулмалла. Чăнах та, пĕр тикĕс çитĕнсе çитнĕ тулах ăшă тивнипе пĕрĕнчĕ—гектартан 8 центнертан ытла илеймерĕмĕр. Ун вырăнне эпир, малашне мĕнле пулассине пĕлсе ĕçленĕ пулсан, икĕ хут ытларах ыраш туса илме пултарнăччĕ пуль?!. Анчах пирĕн асăрхамасăр пĕр пысăк йăнăш пулчĕ: вăрман хĕрринче нумай тултарнă юр чылайччен ирĕлмесĕр выртнипе, тата чылай вăхăт вăрманти юр шывĕ анасем çийĕн юхса тăнипе, 120 гектара яхăн ыраш калчи çаралса юлчĕ. Кăна эпир сирĕнпе кирлĕ вăхăтра шута илеймерĕмĕр; çавна пула, вăрман хĕрринчи уйсенче эпир сахалтан та 500—600 центнер тĕштырă çухатрăмăр. Шухăшласа пăхăр-ха: çак пĕр тикĕс шăтнă ыраш çитĕнсе пиçсе çитсен, колхозăн кĕлечĕсене пухăнса кĕмеллеччĕ вĕт-ха... Ку ĕнтĕ çанталăкран мар, пĕтĕмпех хамăртан килнĕ! Пирĕн тахçанах вăрман хĕррипе канав алтмалла пулнă, ун чух вăрмантан юхса тăракан шыв калчана сиен тăваймастчĕ...

Пухура пĕр вăхăт тĕрлĕрен сасăсем кĕрлесе илчĕç.

— Канав алтса тухасси — йăран хушшине чакаласси мар çав...

— Вăрман тăршшĕпех илсен, çичĕ çухрăмĕ ытлашшипех пулать ĕнтĕ... Мĕнле алтса çитерес ăна?

— Алтмасан, эпир çулсерен тата нумай тырă çухатма пултаратпăр... Хăшĕ пирĕншĕн хаклăрах? — ыйтрĕ Люба пуху шăпланнă вăхăтра.

— Ĕç йывăр пулсан, çиме тутлă пулакан... Мĕн ытлашши калаçмалли пур унта, — терĕ Еремей Сергеевич, вырăнтан тапранмасăр.

Люба старик çине кăмăллăн пăхса илчĕ те сăмаха малалла тăсрĕ:

— Кунсăр пуçне, пирĕн колхозăн тĕштырă татах та ытларах туса илме чăн-чăн лайăх мел пур. Кăна халь эпир пурте аванах пĕлсе тăратпăр: 2-мĕшпе 4-мĕш уй-хир бригадисем, çерем уçса тата вĕтлĕх кăкласа, вир акрĕç, Еремей Сергеевич каларĕш, «вирĕ пулчĕ пăрça пек»: гектартан вăтам шутпа 20—32 центнер тап-таса тырă кĕлете пухса кĕтĕмĕр! Пирĕн колхоз кунашкал усă курман, вĕтлĕхлĕ çĕр 182 гектар ахалех хупланса выртать, шухăшласа пăхăр-ха, çав çĕр лаптăкĕнчен гектар пуçне 32 центнер мар, çирĕм центнер та мар, 15-шер центнер кăна пулсан та, кăçалхинчен 10200 пăт тĕштырă ытларах туса илнĕ пулăттăмăр! Çак вăхăтрах пĕтĕм акмалли çĕр лаптăкĕнчен гектар пуçне вăтам шутпа пĕлтĕрхинчен 3—4 центнер ытларах тĕштырă туса илсен? Ун чух пирĕн колхозăн мĕнпур тырпул тухăçлăхĕ тата 10—12 пин пăта яхăн хушăннă пулĕччĕ!

— Ку ĕнтĕ вăл, — терĕ Люба, тата хавасланарах,— пирĕн сĕтел тулли пулас апат-çимĕç, сĕт-çу, хитре çи-пуç, çĕнĕ çуртсем; колхоз валли — 500—600 пуç ĕне-сурăх вырнаçтармалăх çĕнĕ витесем, фермăри йывăр ĕçсене çăмăллатма пулăшакан механизмсем, механизациленĕ йĕтемсем, 100, 150, 250 тонна кĕрекен силос башнисем, 400 тонна кĕрекен тырă хумалли складсем, çĕрулми усрамалли подвалсем, минераллă удобрени хумалли сарай, автомашинăсем, электричествăпа ĕçлекен арман, çăм чавмалли машина, урапа-çуна тумалли мастерской; фермăсенче ĕçлекенсем валли — общежити, столовăй; кашни хуçалăха — электричество, радио... Çакна пирĕнтен парти кĕтет те!

Пуху пĕр вăхăтлăха шăпах пулчĕ. Агроном сăмахĕ халăхăн чĕри патнех пычĕ. Пĕр Пыркин бригадир кăна ассăн сывларĕ:

— Кирли ĕнтĕ шутсăрах нумай, темле туса çитерес...

— Тырпул мĕнпур акмалли çĕр лаптăкĕнчен пĕр пек пысăк тухăçлă илсен кăна эпир хамăра мĕн кирлине çителĕклĕ туса çитерме пултаратпăр, — татах ăнлантарчĕ Люба.

— Тĕрĕс калать пирĕн агроном, лăпланса ларсан, шухăшлани кăна пулĕ. — сăмах илчĕ колхозник Михаил Демидов.—Пăхар-ха уйри çырма-çатрасене—мĕнле вĕсем акмалли çĕрĕн сĕткенне çăтса тăраççĕ! Ман шутпа, пур уйсенче те пĕр пек пысăк тухăçлă тырпул туса илес тетпĕр пулсан, çырмасене халех тикĕслетме тытăнмалла...

— Вĕтлĕхе кăкламалла, канав алтмалла, çырма-çатрана тикĕслетмелле... Пушă алăсемпе чакаламалла-и? — пӳлсе каларĕ колхозница Захарова.

Парторганизаци секретарĕн заместителĕ Амосов кун пирки çакна палăртрĕ:

— Ман шухăшпа,—терĕ вăл, — ку йывăр ĕçсене тума пире никамран малтан МТС пулăшĕ... МТС директорĕ Емельянов юлташ — хаçат вулакан çын, пленум решенине ăнланма кирлĕ.

— Вуласса вулать пулĕ те, анчах вăл час манакан,— терĕ бригадир Василий Петьков.—Пĕлтĕр вăл, вĕтлĕх кăклама пулăшатăп тесе, сăмах панăччĕ, ĕçне тумарĕ... Удобренисем турттарма та пĕрмай ăна тархасламалла.

— Пирĕн МТС çыннисем йывăр ĕçсене тăвасшăнах мар çав, — янăрарĕç пухура сасăсем, — Илларионов бригадир хăяккăн тайăнса кăна çӳрет, тракторист помощникĕ Степанов тени пĕрмай ĕçкĕре...

— Пытармасăр каласан, пирĕн Пыркин бригадир та кăçал хĕлĕпех туй турĕ,—кулса ячĕ пуху...

Карапай-Шăмăршă колхоз членĕсем, КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн тата партипе правительствăн ун хыççăнхи постановленийĕсене сӳтсе явса, хăйсен умне нумай ыйтусем лартрĕç. Парти райкомĕ пулăшнипе колхоз хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсене 1954—1956 çулсенче аталантармалли плана пĕр кăмăллă пулса йышăнчĕç. Ку планра эпир уйрăмах хаклă апат-çимĕç культурисене—ыраш, кĕрхи тата çурхи тулă, хуратул, вир, пăрça — нумайрах туса илессишĕн çĕнĕ хавхалану пуçланса кайнине куратпăр. Çавăнпа та ĕнтĕ 1956 çул вĕçне колхоз хăйĕн акмалли çĕр лаптăкне татах 220 гектар пысăклатма пулчĕ. Кăна пурнăçа кĕртес тесе, колхозниксем, МТС пулăшнипе, 1954 çулта 80 гектар, 1955—1956 çулсенче 70-шер гектар вĕтлĕх кăкласа, тулă, вир акма палăртрĕç. Кунсăр пуçне, Карапай-Шăмăршăсем кăçал 30 гектар ака тумалли çĕр çинче çырмасемпе варсене тикĕслеççĕ, вăрман хĕрринчи уй-хир тавра 7,5 километр тăршшĕ канав чавса тухаççĕ. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, çĕрулми, пахча çимĕç, сад лартса ӳстермелли çĕр лаптăкĕсем те виçĕ çул хушшинче икĕ хут ытларах ӳсеççĕ. Колхозăн анлă çĕрĕ çинче вăйлă тырпул çитĕнтерессишĕн тăрăшни халех курăнать: çураки умĕн колхоз çамрăкĕсем механизаторсемпе пĕрле 2300 тонна тислĕк, 300 тонна торф, 30 тонна минераллă удобренисем уя турттарчĕç. Çак вăхăтрах парти чĕннипе Карапай-Шăмăршă колхозникĕсем хăйсен виçĕ çуллăх планĕнче выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем çителĕклĕ туса илме палăртаççĕ. Кунта эпир 1956 çулта кашни ĕнерен 2550 литр сĕт суса илессине куратпăр, урăхла каласан, кашни 100 гектар çĕр пуçне 455 центнер сĕт суса илмелле; кашни сурăхран — 4 килограмран кая мар çăм, кашни чăхран — 110 çăмарта. (1956 çулта чăхсен йышĕ 1200 пуçа яхăн пулать, вĕсенчен 120 000 çăмарта илмелле). Колхозшăн чи тупăшли сысна ферми пулать. Кунта 1954 çултан пуçласа кашни çул 109-шар сысна самăртаççĕ, кашни сыснаран 100—200 килограмран кая мар аш-какай туса илеççĕ.

4. „Вăл—пирĕн депутат! Мускава каять..."

Патĕрьел аслă çулĕпе пирĕн «Победа» инçете-инçете çутатса пырать. Çул ик аяккинчи уй тӳписенчен юр кайса пĕтнĕрен, каçĕ питех те тĕттĕм туйăнать. Хутран-ситрен машина умне сасартăк мулкачсем сике-сике тухаççĕ, фара çуттипе куçĕсем алчăраса кайнипе, çул тăрăх вилес пек ыткăнаççĕ; кустăрма айне пулмасан, тĕттĕм çĕрелле сулăнса, вăльт çухалаççĕ. Вара вĕсене курма çук — мулкачсен хĕллехи шап-шурă тумĕ те таврари уй-хир пек тĕксĕмленнĕ. «Мĕн тăвăн-ха, çанталăкăн хăйĕн йăли! хĕл каять те çур килет... Мулкач та çавна майлашать...»

Çапла хамăр хушăра калаçкаласа пынă вăхăтра, сисмерĕмĕр те, уй урлă каçса, Шăмăршă вăрманне кĕрсе пынă пек

КУККУК

Юрий СКВОРЦОВ

Итлесемччĕ эс, куккук кайăкăм,
Қаласам мана, чăпар кайăкăм:
Авăтса куллен ывăнмастăн-ши?
Тек «ку-ку» тесе мĕн шуглатăн-ши?
Ай, куккук пăхать яш вăрман çине,
Тырпулпа пуян уй-хирсем çине.
— Ак ку пирĕн,—тет,—
Ай, ку пирĕн,—тет,—
Қу — вăл халăхăн —
Ирĕк халăхăн.

Итлесемччĕ эс, куккук кайăкăм,
Қаласам мана, чăпар кайăкăм:
Шугласа капла эс тухайăн-ши?
Хир-вăрман шутне эс тупайăн-ши?
Ай, куккук пăхать çĕн ялсем çине,
Ытарми хитре çĕн хула çине.
— Ак ку пирĕн,—тет,—
Ай, ку пирĕн,—тет,—
Қу — вăл халăхăн —
Аслă халăхăн.

Авăт-авăтсам, куккук кайăкăм,
Шутла-шутласам, чăпар кайăкăм;
Яла-хула шутне, тен, тупатăн эс,
Ман çĕршыв вĕçне, тен, тухайăн эс.
Ай, куккук вĕçет—инçете вĕçет,
Ман пуян çĕршыв анлăшне виçет.
— Ак ку пирĕн,—тет,—
Ай, ку пирĕн,—тет,—
Қу — вăл халăхăн —
Паттăр халăхăн.

туйăнчĕ, унтан часах пирĕн куçа уçланкă варринчи ял хула пек çап-çутă ялтăртатса тăни курăнса кайрĕ.

— Ăçта эсĕ пире, иптеш, пĕлмен вырăна илсе килетĕн?—пĕр шӳт тумасăр ыйтрĕ шофертан ман юлташ.

— Халиччен Шупашкартан килекен уполномоченнăйсене Карапай-Шăмăрша куçа хупсах турттарса килкеленĕччĕ, сирĕншĕн темле...— кулчĕ шофер.

— Чăнах, ку Карапай-Шăмăршă-мĕн! Қаçхине те вăл хăйне евĕр хитре-çке, — хĕпĕртерĕ пирĕн юлташ.

— Сирĕн кунта çулла килмеллеччĕ, — илĕртсе каларĕ шофер. — Кӳлĕ хĕрринче вăлтапа пулă тытнă пулăттăмăр—вăт ăçта илем!

Яла кĕрес умĕн пирĕн кăштах чарăнса тăмалла пулчĕ: хирĕç, шăннă тăпра çийĕн, тракторпа темĕн чухлĕ тислĕк турттарса тухрĕç. Çак вăхăтрах уй хапхинчен тепĕр трактор кĕрлесе тухрĕ.

— Карапай-Шăмăршăра çывăрма пĕлмеççĕ-мĕн?!.—татах хавхаланчĕ ман юлташ.

— Тăрăшмасан, пулла та шывран кăлараймăн... Вăхăчĕ халь çавнашкал, — терĕ шофер.

Ку ялта эпир пĕлтĕр кĕркунне пулнăччĕ, унăн анлă урамĕсемпе сахал мар иртсе çӳренĕ, пĕр вăхăт пурăнса та куртăмăр. Çавăнпа та халь, уй хапхинчен пырса кĕрсенех, çĕннипе кивви куç умне тухса тăрать. Фара çуттипе эпир унтакунта крыльцаллă çĕнĕ пӳртсене асăрхарăмăр, — халь çеç лартнă пурасем сахалах мар иккен. Кашни чӳречерен электричество çутти ялтăрать. Нимрен ытла пирĕн чĕресене малтанхи тĕлпулу хумхантарчĕ. Яла пырса кĕрсенех, клуб патĕнче пире колхоз ачисем хупăрласа илчĕç, пĕр-пĕрне пӳлсе, пĕлесшĕн çунчĕç:

— Эсир Шупашкартан пирĕн агронома ăсатма килнĕ-и?

— Ăçта каять вăл? — пĕлмен пек пултăмăр эпир.

— Мускава каять вăл, Мускава! — пĕр харăс пĕлтерчĕç ачасем.

— Мускава... Нимĕн те пĕлместĕр эсир, — терĕ пĕр чĕкеç шатриллĕскер, пуçне каçăртса. — Любовь Дмитриевна Кремльте пулать — вăл пирĕн депутат!

— Кам каларĕ сана, ачам? — лăпкарăмăр ăна пуçĕнчен.

— Пирĕн атте пурне те пĕлет...

Мĕн тери пысăк савăнăç ку ялйышшăн. Нумаях пулмасть Карапай-Шăмăршă артелĕн членĕсем пĕр кăмăллă пулса хăйсен çамрăк агрономне СССР Верховнăй Совечĕн депутатне суйларĕç, халь мĕнпур ватти-вĕтти тенĕ пек, Любовь Дмитриевна Кологреевăна Мускава СССР Верховнăй Совечĕн 1-мĕш сессине ăсатма пухăнчĕç. Люба пĕчĕк те лутра пӳртре Татьяна Тимофеевна колхозница патĕнче пурăнать. Кунта халăх лăк тулли. Кашниех çул сăмахĕ каласшăн.

— Пысăк ĕмĕтпе пурăнатпăр, халăх ырлăхĕшĕн тăрăшнăшăн пирĕнтен пуринчен те правительствăна тав ту,—тет Еремей Сергеевич.

Колхоз председателĕн хăйĕн уйрăм наказ:

— Кăçал миллионер пулма сăмах патăмăр пулсан, пире те пулăшу кирлĕ пулать,—тет вăл.—Ытларах колхозри йывăр ĕçсене çăмăллатакан машинăсем туса кăларма ыйт... Çĕрулмине тăваткал тĕммĕн лартма май паракан машинăна хăвăртрах туянсан — тем пекехчĕ те!

— Тата çакна калама ан ман, Любовь Дмитриевна:—хутшăнчĕ бригадир Василий Петьков,—тислĕкпе минераллă удобренисене алăпа сапаласа ывăнтăмăр, ку ĕçе тума колхоза хăвăртрах универсальнăй машинăсем ярса пама ыйтатпăр.

Колхоз хĕрĕсем хăйсем тĕллĕн Любăна: «Мана пурçăн тутăр», «Мана косынка илсе килĕр», тесе пăшăлтатрĕç.

Пӳрте колхоз ямшăкĕ кĕрсе тăчĕ.

— Эпĕ хатĕр, Любовь Дмитриевна! — терĕ вăл.

— Тур лашине кӳлтĕн пуль, Петрусь? — ыйтрĕ председатель.

— Çавна пулмасăр! Мĕнле-ха, хамăр депутата чуман лашапа ăсатан...

— Ну, манăн кайма вăхăт, тăвансем,—алă парса сывпуллашрĕ Люба-агроном. — Акана пĕр сехет те вăраха ан ярăр, çанталăкĕ кăçал шанчăклах мар — улталанас марччĕ.

— Мĕн шухăшланине пурне те тăвăпăр. Чипер кайса килмелле пултăр! — терĕ Василий Николаевич.

Хура тур лаша ялтан тухса куçран çухаличченех Карапай-Шăмăршă колхозникĕсем хăйсен агрономне ăшшăн алă сулса ăсатрĕç.

ÇАПĂÇУ ХИРĔНЧЕ

(Поэма сыпăкĕ)

Иван ПИНЯЕВ

Ир пулчĕ —
тул çутăлчĕ
сад пахчинче.
Ак вуннăмĕш хут
фашистсем
Атака пуçларĕç,—
сăрт-ту хысĕнчен
Кĕреççĕ сада вĕсем
сĕкĕнсе.
Уйри тырпула
нимĕскер юлмиччен
Тантаççĕ;
пит чăрсăр хайсем
ӳсĕрпе.
Эпир,
хĕрсе кайнă тупăсенчен
Персе,
çапăçатпăр
тăшман çарĕпе.
— Огонь!—
кăшкăрать суранланнă комбат,
Хуплать,
чăмăртать аллипе
аякне.—
Тепре çунтарар-ха!
Кăтартăпăр сад
Çав урнă тăшманăн
тискер йăх-яхне!..
Кĕрлет сад пахчи;
снаряд та
снаряд
Вĕçет шăхăрса,
çурăлать ахлатса.
Шап-шурă çеçке
пуç çине тăкăнать,
Çĕре
лапка юр çунă пек
шуратса.
— Огонь!—
кăшкăрать те комбат пур вăйран,
Каять тайăлса
чис тĕмĕ çине.
— Сережа!
Мĕн пулчĕ?
Сережа!
Суран?..—
Чупатăп,
васкатăп эп
тусăм патне.
Çаплах
ӳхĕреççĕ садра
тупăсем,
Куçа—
пăхма çук—
йӳçĕ тĕтĕм çиет.
Каллех кăшкăратăп:
— Сережа, чĕнсем!—
Вăл усрĕ куçне,
ман çине тинкерет.
— Аркатăр,
çунтарăр
тăшман йăх-яхне!—
Тесе пăшăлтатрĕ те
пулчĕ шăпах.
Эп пĕшкĕнтĕм,
сыхрăм
комбат суранне.
Тепре куçне усрĕ вăл,
хушрĕ сăмах:
— Пăхсамччĕ...
шап-шурă çеçке
таврара.
Çĕнет-çĕнетех
пурнăç
çут тĕнчере!
Пуласчĕ паян ман
тăван çĕршывра.
Унта та
садсем ĕнтĕ халь
çеçкере,—
Тăванăм, унта
тупăсем кĕрлемеççĕ.
Хирте пирĕн
тулă
пулать йăтăнса,
Кăçал та
вăл лайăх
тесе пĕлтереççĕ...
Эх...
пурнăттăм эп
çемьемпе
савăнса!..
— Сережа,
эс пурăнăн!—
тетĕп ăна.
Ак фляга уçатăп эп:
— Сып-ха эппин,
Шыв сып.
Хуйхăрса
ан пĕтерччĕ вăйна...
Вăл таварчĕ:
— Çук,
пулăшаймăн халь тин...
Вăл халсăррăн сулчĕ тепре аллипе:
— Аркатăр,
çунтарăр
тăшман йăх-яхне!..
...Аркатрăмăр...
Витрĕмĕр
чие çеçкипе
Комбатăн
шап-шурă садри
тăприне.

* * *

Кăç пулчĕ.
Шăпланчĕ арканнă тăшман.
Пуçларĕç юрра кайăксем
самантран.
Юрлаççĕ.
Пĕр шăпчăк сасси
тупăран
Чылай вăйлăрах янăрать пек
паян.
Эпир тӳснине,
пирĕн паттăрлăха
Мухтать вăл
комбатăн тăпри çийĕнче,
Илет тыткăна вăл
фронтри халăха —
Янрать ун юрри
пирĕн чĕресенче.
Лафет çине лартăм.
Чун ыратать.
Кăшлап кăранташăма
хумханнăран:
Поэма çырма
сăмăлрах,
тупата,
Кун пек хыпара çыриччен
вăрçăран.
«Мария!—
çыратăп эп:—
Сан мăшăру
Вăрçса пусне хучĕ».
Анчах та çакна
Хама та мана
ĕненмешкĕн хăрушă—
Кашни сăмахах
суранлать-çке
чуна!
«Мария!—
блокнот листине кăранташ
Йăлтах чăпарлатрĕ.
Çыратăп татах:—
Чăн-чăн паттăрла вилчĕ
пирĕн юлташ,
Унпа
мухтанатпăр.
Мухтан эс ху та.
Мария!
Çак хурлăх
ан хуçтăр чунна:
Вăл
халăх телейĕшĕн
хучĕ пусне».
Çырап.
Куçсенчен хамăн
пăчăртанать -
Куççулĕ —
тумлать чĕркуççийĕм çине.
Тавра тĕттĕмленчĕ,
сулхăнланчĕ тулта.
Пĕр çăлтăр тухсаччĕ
хура тӳпене,—
Çилпе вĕçтерсе янă евĕр,
вăл та
Çухалчĕ.
Тăсать шăпчăк çеç юррине.
«Мария!
Тăватпăр тупа халь—
сана,
хамăра:
Эпир манас çук
командирăмăра.
Вăрçса вилнисемшĕн те
халь
чĕррисем
Телейшĕн те миршĕн
вăрçатпăр хĕрсе»...
Çыру ĕнтĕ хатĕр.
Тата пĕр хĕрарăм чĕри
Икке çурăлса
йĕрсе ярĕ шари,
Арман чулĕ пек таякан хыпара
Епле-ши вăл тӳсĕ!..
Сĕм тĕттĕм садра
Пĕр шăпчăк сасси çеç
каять таврана.
Лафет çинчен
тăтăм эп,
уйăх ансан.
Комбатăн тăпри çинче
çăлтăр çунать,—
Ана вара
çил сӳнтереймĕ нихçан!

Вырăсларан Ник. ЕВСТАФЬЕВ
куçарнă.

УКРАИНА ПОЭЧĔСЕМ

Кăçалхи январĕн 18-мĕшĕнче Украина çĕршывĕ Российăпа пĕр государствăна пĕрлешнĕренпе виççĕр çул тултарчĕ. Çав юбилее палăртса, май уйăхĕнче РСФСР-па Украина Верховнăй Совечĕсен чаплă ларăвĕсем пулса иртрĕç. Пирĕн аслă çĕршыври халăхсен туслăхĕ, вĕсен культурăлла çыхăнăвĕсем çултан-çул çирĕпленсе пыраççĕ.

Халăхсен иксĕлми туслăхĕ ячĕпе эпир «Ялав» журналăн çак номерĕнче Украина совет поэчĕсен уйрăм сăввисене пичетлетпĕр.

Пушкин декабристсен çемйинче

Павло ТЫЧИНА

Каменка. Кĕрхи ир кӳлĕм
çӳремешкĕн Пушкин тухрĕ.
Тĕлĕрет Давыдов çурчĕ,
тăнă тарçă-тĕрçĕ çеç.

— Тясьмин шывĕ!—терĕ
Пушкин,—
каласам: мана мĕн пулчĕ?
Тĕлĕк-и ку? Е чирлерĕм?
Читлĕхри пекех чĕрем...

Тясьмин, эсĕ хăтăласшăн,
сан шывна чулсем хĕсеççĕ,—
эп те халь сан евĕр мар-и?
Хĕстерет, пăвать патша...

Шарламасть салхуллă Тясьмин,
кăшт пăхать те тĕтре витĕр—
шухăшлать... Юхан шыв урлă
илтĕнет: ...пăвать патша.

— Çил!—тет Пушкин,—
эс ăçта-ши?
Те вĕрен, те çук? Туймастăп.
Эс темле йăваш та лăпкă,
тăвăл кирлĕ ку чухне.

Тăвăл, тăвăл кар карлатăр!
Украинăрах мĕн чухлĕ
пăлханать иккен те халăх!..
Аслатиччĕ хăвăртрах!

Çил, çумма çунат хушсамччĕ,
тирансемшĕн аслати пек
Пестеле мана кăтарт эс—
вĕçтерсем Тульчиналла!

Шарламасть ĕшеннĕ çилĕ,
юмана кăшт хускатать те—
çухалать... Юхан шыв урлă
илтĕнет... Тульчиналла!

— Эй, хĕвелĕм!—терĕ Пушкин,—
эс хăçан тухса çутатăн?
Ирĕк ăсĕ сывă пултăр!
Тĕттĕм тартăр тĕнчерен!

Туссемпе кунта ак кĕçĕр
канашларăмăр-ха вăрттăн!
Ирĕке тухас тесссĕн—
патшана вĕлермелле.

Ыйхăрисене пурне те
кăшкăрса вăратăп: тăрăр!
Час Россия та çуталĕ,
пурте халь кĕрешмелле!

Ăшĕ вĕçнĕ Пушкин чупрĕ.
Анчах мĕн ку?—хĕвел пичĕ
юн кăна. Юхан шыв урлă
илтĕнет: ...кĕрешмелле!

Чарăнать поэт, сасартăк
кăшкăрать вăл:—Ӳсĕр куç эс!
Шет пире кунта та куртăн?
Пĕл эппин: эп парăнмăп!

— Парăнмăп!—янрарĕ сасă.
Çаврăнса пăхайрĕ Пушкин!—
— Тусăмсем вăраннă та-мĕн,
эп сисмен те,—терĕ вăл.

Ак Якушкин та Раевский,
ак Орлов та хай Давыдов,—
çӳлелле çĕклерĕç алă,
пурте кăшкăрчĕç: тупа!

Пĕлĕтре кăна юн тĕсĕ
сарăлса пырать синкерлĕн..
Çăхансем... Юхан шыв урлă
илтĕнет: ..тупа! тупа!
Кăшт тăрсан хуллен: ..тупа.

П. Хузангай куçарнă.

Тăван çĕршывăн çутă ирĕ

Петрэ ДОРОШКО

Йăл-ял вутланчĕ тухăç. Çăлтăрсем сухалчĕç.
Кун лăпкăн пуçланать — хаваслă, мирлĕ кун.
Ир кӳлĕмпе ĕçе тухатăп эп кал-кал çеç,
Ирхи хĕвел çутишĕн савăнать ман чун.
Хăлат пек самолет вĕçет ав çиле хирĕç,
Утаççĕ боецсем, хастаррăн юрласа.
Вĕçĕ-хĕррисĕр сарăлать çĕршыв уй-хирĕ,—
Сывла кăкăр тулли!—ир сывлăшĕ таса.
Сап пурнăç сĕткенне, ытарайми хĕвелĕм!
Хĕрӳллĕ çутăпа эс ейӳле çĕре!
Тăван çĕршывăн ирĕ ялтăрать телейлĕн.
Çап-çутă савнăçпа тулать паян чĕрем.

Куратăп акă: Днепр тăрăхĕ, Полесье..
Çилпе килет юманлăх шавĕ Уралтан.
Карпатăн леш енче, ав, пуртăсем тӳнккеççĕ,
Çут Ворскла хĕрринчи тырпул чăн тинĕспе пĕр тан,
Завод трубийĕсем мăнаçлăн тĕтĕреççĕ,
Васкаççĕ поездсем пĕр канăççăр, инçе.
Тимĕрçĕсем те слесарьсем ирех ĕçлеççĕ,
Тетел туртаççĕ пулăçсем шыв тĕпĕнчен.
Поезд кĕрлет. Хире сăнать ун машинисчĕ.
Кĕрлеççĕ тракторсем, кăпкалатса çĕре.
Поезд юрлать. Çакна халь тракторсем те сисчĕр!
Çап-çутă савнăçпа тулать паян чĕрем...

Улма пахчисене ăш çумăрсем шăварчĕç,
Çырансăр хирсем çийĕн иртрĕç кĕрлесе.
Хăяхлă кӳлĕре, шыва çурса чăл-пар çеç,
Сикеççĕ çиçĕмле çунатлă çăрттансем.
Пин кайăк юррипе янрать-çке сывлăш,
Туратсене усаççĕ тулăх çимĕçсем.
Чечекленен Çĕршыв!
Ман ирĕклĕ Çĕршывăм!
Пуянлăхпа илем тăрать санра çиçсе!
Кăшт çил вĕрсен, хуллен чăшăлтатать сар тулă,
Урпа та мăйăхне шăртлантарать хиврен,
Садра чие çырли сапать хĕп-хĕрлĕ çулăм,—
Çап-çутă савнăçпа тулать паян чĕрем.

Каять Дунай юрри Алтай таран ян-янăн,
Балти шавне тăнлать халь Лăпкă океан.
Хавас-çке пурăнма,
Çĕршывăмçăм, тăванăм!
Хĕрӳллĕн ĕçлеме те юрлама аван.
Çут Атăлпа Дон тăрăх—сулă хыççăн сулă —
Шăваççĕ юмансем, хырсем те чăрăшсем.
Хастар сулăçсем, çулра телейлĕ пулăр!—
Эпир телей тăватпăр пурте кĕрешсе.
Çĕнтерӳпе вĕçлентĕр трактористăн кунĕ,
Пулли те тулăх пултăр пысăк тетелре!
Çĕн юрăпа тулса çĕклентĕр юрăç чунĕ..
Çап-çутă савнăçпа тулать паян чĕрем.

А. Эсхель куçарнă.

ПЕРЕЯСЛАВ-ХМЕЛЬНИЦКИЙ ХУЛИНЧЕ



Переяслав-Хмельницкий хуличи Культура çурчĕ.

Богдан-Хмельницкий урамĕ, сылтăмра — çĕнĕ универмаг.



Хĕрлĕне те сарăпа сăрланă çĕнĕ автобус, пире Киев хулинчен илсе тухса, кăнтăр еннелле васкатать. Километр хыççăн километр, çулăн икĕ енĕпе—е çывăхра, е аякра—ялсемпе хуласем ларса юлаççĕ. Умра вĕçĕ-хĕррисĕр тӳрем çĕр выртать, ниçта та сăрт-ту е çӳлĕ тĕмеске тавраш курăнмасть. Хăшпĕр тĕлте çул маякĕсем тата çӳлĕ те яштака топольсем çеç сарăлса çитеймен çулçисемпе кăмăллăн шăпăлтатса лараççĕ. Анлă-çке Украина хирĕсем! Епле илемлĕ вĕсем çуркунне. Симĕс бархат пек ешерсе выртать сĕтеклĕ калча.

...Киевран тăхăрвуннăмĕш километрта, сылтăмалла, çĕнĕ, чул сарнă çул выртать. Çак çул пуçланнă çĕрте, çулăн сулахай енче, сарлака пьедестал çине лартнă тӳрĕ кĕтеслĕ пысăк хĕрлĕ мрамора куратпăр. Мрамор варрине барельеф вырнаçтарнă. Ку — Украина скульпторĕ Иван Гончар тунă «Переяславская Рада» ятлă монумент. Барельеф айĕнче çаппа çырнă: «Навикы разом з російським народом!».

Çак монумент тӳрех ку çул авалхи историлле хула еннелле кайнине аса илтерет. Хула кунтан инçех маррине сисетпĕр. Автобус водителĕ эпир васканине тавçăрать пулас, газне пама хĕрхенмест...

...Переяслав!..

Акă вăл, паян Совет Союзĕнчи пур халăхсемшĕн те паллă хула—Переяслав-Хмельницкий! Çакăнта ĕнтĕ, 1654 çулхи январĕн 18-мĕшĕнче, пĕтĕм халăх умĕнче Украинăпа Россия ĕмĕрлĕхе пĕрлешни çинчен пĕлтернĕ. Украина халăхĕн чаплă ывăлĕ, паллă полководецĕ Богдан Хмельницкий Радăна пуçтарăннă халăхсем умĕнче Украинăна Россия çумне пĕрлешме сĕнсе: «чтоб есми вовеки вси едино были» тесе каланă. Украина халăхĕ Переяслав Радинче икĕ халăх пĕрлешме йышăннине чĕререн халалланă, вырăс халăхĕн евчисене, чаплă хăнасене кĕтсе илнĕ пек хапăл туса, çăкăр-тăварпа йышăннă.

— Навеки вместе!

— Навикы разом!

— Ĕмĕрлĕхех пĕрле!—тенĕ пĕр харăс пĕрисем вырăсла, теприсем украинла.

Историлле канашлу пулнăранпа 300 çул иртрĕ. Паян нумай нациллĕ пĕтĕм аслă Совет çĕршывĕ чаплă праçнике чыслăн уявлать. Совет правительстви, Богдан Хмельницкий ĕçне çав тери пысăк хака хурса, 1943 çулта Богдан Хмельницкий ятлă çар орденĕ турĕ, Переяслав хулине—Переяслав-Хмельницкий ятне пачĕ.

Переяслав-Хмельницкий хулине эпир (манпа пĕрле «Украина» журналра ĕçлекен писатель Василь Бережный) каç кӳлĕм çитрĕмĕр. Çĕнĕ чаплă гостиницăра вырнаçнă хыççăн, Григорий Сковорода урамĕнче ларакан «Будынок культури»—(«Культура çуртне») кайрăмăр.

Паян Культура çуртĕнче вырăнти художествăлла пултарулăх коллективĕ Александр Корнейчукăн «Платон Кречет» пьесине лартса парать. Спектакль умĕн Украинăн чипер хĕрĕсемпе каччисем тĕрлĕрен юрă юрласа пачĕç, сăвăсем каларĕç. Унтан спектакль пуçланчĕ... Куракансем хушшинче хула çыннисем çеç мар — Киевран, Мускавран, Ленинградран, Кишиневран, Минскран килнĕ хăнасем лараççĕ. Вĕсене хула çыннисем хаклă тăвансене кĕтсе илнĕ пек кĕтсе илчĕç, аслă зала кĕнĕ чух пĕр вĕçĕмсĕр алă çупса хисеплерĕç.

1953—54 çулсенче Переяслав-Хмельницкий хулине тĕрлĕрен делегацисем ăçтан кăна килмерĕç пулĕ! Пурте, пурте çав тери интересленеççĕ 300 çул каялла пулса иртнĕ ĕçсемпе...

Тепĕр кун эпир чи малтан Пĕрлешӳ площадьне тухса куртăмăр... Площадьрен инçех мар пурăнакан 83 çулхи Яков Дорофеевич Москаленко, Украина халăхĕн историйĕпе питĕ интересленекенскер, пире «Переяслав Ради» пирки, Богдан Хмельницкий çинчен, хула йĕри-тавра тунă çĕр валĕ (хӳми) çинчен нумай каласа пачĕ, тĕрлĕрен авалхи ӳкерчĕксемпе паллаштарчĕ.

Темиçе кун хушшинче эпир хула историйĕпе, унăн паянхи кунĕсемпе, çыннисемпе интереслентĕмĕр. Мĕн курни-илтнине çак пĕчĕк очеркра ниепле те шăнăçтарас çук...

Акă А. О. Козачковский çурчĕ. Кунта халь Краеведени музейĕ вырнаçнă. Унăн залĕсенче Украина Российăпа пĕрлешни çинчен калакан документсемпе картинăсем, Украинăн чаплă поэчĕ, революционер-демократ Т. Г. Шевченко çинчен калакан экспонатсем пур. Ку çуртра Шевченко 1845-мĕш тата 1859-мĕш çулсенче Переяслав хулин врачĕ А. О. Козачковский патĕнче пурăннă. Çакăнта вăл хăйĕн «Заповит», «Кавказ», «Еретик», «Як было ты, Богдане»... ятлă сăввисемпе поэмисене çырать, нумай ӳкерчĕксем тăвать. Çав вăхăтрах Шев-

ченко, Переяслав Радине пысăк хака хурса, ун çинчен тĕрлĕрен материалсем пустарать, сывăх ялсене тухса ÿкерет, хулари историлле палăксемпе тĕплĕн паллашать. Каярахпа хăйĕн вырăсла çырнă «Близнецы» повеçĕнче Переяславри Успенски собор халăха мĕн енчен паллине кăтартса çапла çырать: «Там дал присягу Зиновий Богдан Хмельницкий со всякого чина народам на верность московскому царю Алексею Михайловичу».

Шевченко Козачковский юлташне, вăл ырă сăмахпа та ĕçпе пулăшнăран, питĕ юратнă. 1847 çулта поэт Орск крепоçĕнче ссылкăра пурăннă вăхăтра Козачковский патне пĕр сăвăра çапла çырать:

«И, може в тыхий твоий хати
Я буду знову размовляты
З тобою, друже мий».

Аслă Кобзарь çырни тĕлех килнĕ — 1859 çулта Шевченко каллех Переяслав хулине килсе курнă, Козачковский юлташĕпе тĕлпулса чĕререн калаçнă. Переяслав-Хмельницкий хули çыннисем Козачковский çинчен, вăл Шевченкăн чи сывăх юлташĕ пулни çинчен пурте мĕн те пулсан çĕнĕ хыпар-хăнар пĕлтерме тăрăшаççĕ. Тен, вĕсен сăмахĕсем пĕтĕмпе тĕрĕсех те мар пуль, анчах вĕсен калавĕсенче эпир Украина халăхĕ хăйĕн ятлă ывăлĕсене ырă кăмăлпа асăннине куратпăр.

Киевра Т. Г. Шевченко музейĕнче (Переяслав-Хмельницкий музейĕнче те) поэтăн нумай ÿкерчĕкĕсем хушшинче пĕр ÿкерчĕк пур. Вăл ÿкерчĕк «Переяславра» ятлă. Пирĕн куç умне пылчăклă, таса мар урамлă, тăйлăк-тайлăк пÿртçуртлă Переяслав хули тухса тăрать... Çĕтĕк-çатăк тумланнă, улăм шлепке тăхăннă чухăн украинец аран-аран утнине куратпăн...

Паянхи хула Шевченко ÿкерчĕкĕнчи пек мар ĕнтĕ, йăлтах çĕнĕ! Нумай урамсене асфальт та чул сарнă, çĕнĕ чул çуртсем илĕртеççĕ. Советсен çурчĕ, гостиница, универмаг, продмаг, шкул, культура çурчĕ, почта,—каласа та пĕтермелле мар, пысăк та илемлĕ çĕнĕ çуртсем. Урамсенче хитре чугун юпасем çинче электричество ламписем, садсемпе парксене илемлĕ тимĕр картасем тытса тухнă. Переяслав-Хмельницкий çыннисем халь ĕлĕкхи пек чухăн та çĕтĕк-çатăк мар, вĕсем илемлĕ çĕнĕ тумтирсемпе,—вĕсемшĕн кулленех праçник тейĕн.

Ытарма çук хула урамĕсемпе иртсе çÿренĕ чух. Пурçăн платьесем тăхăннă хĕрсем ушкăн-ушкăнăн хула саднелле, клуба, театрсене пуçтарăнаççĕ, савăнăçлă юрăсем юрлаççĕ. Вĕсемпе пĕрлех каччăсем те пур. Çаксене кура хула та ĕмĕр-ĕмĕр çамрăк пек туйăнать.

А. Макаренко ячĕпе тăракан вăтам шкулта ĕçлекен учительница Мария Георгиевна çапла калать вара:

— Пирĕн шкула кашни çулах çĕнĕ ачасем вĕренме килеççĕ, çавăн пекех пирĕн хулана та кашни çул çĕнĕ илем кĕрет. Çыннисем тата? Йăлтах çĕнĕ çынсем! Кам çеç çук пулĕ пирĕн хула çыннисенчен: учительсем, врачсем, артистсем, агрономсем, геройсем, офицерсем тата ыттисем те,—тет.

Çапла, çĕнелчĕ Переяслав-Хмельницкий. Вăл çĕнелнине, вăл Май уйăхĕн ăшă хĕвелĕ çутинче ешернине кашни кунах куратăн. Калама çук илемлĕ те капăр Переяслав-Хмельницкий. Уйрăмах, кăçалхи май уйăхĕнче ку хула нихçанхинчен те илемлĕ. Илемлĕ ун çыннисем те!

Петр ЧИЧКАНОВ

Киев.

Укерчĕкĕсем авторăн.

Переяслав-Хмельницкинчи краеведени музейĕ. Вăл ĕлĕк Т. Г. Шевченко тусĕн А. О. Козачковскин çурчĕ пулнă. Çав çуртра Шевченко хăйĕн «Заповит», «Кавказ», «Еретик», «Як бы ты, Богдане...» ятлă сăввисемпе поэмисене çырнă.

Переяслав-Хмельницкий хулинчи Советсен çурчĕ.

Сталин урамĕ. Рабочисем валли тунă пурăнмалли çĕнĕ çуртсем.

Переяславри Рада

Максим РЫЛЬСКИЙ

Украина, Украина!
Ĕмĕр çамрăк эсĕ манăн.
Çутă кун-и, тĕттĕм каç-и,
Яланах куç умĕнче:
Е вутсем вĕçес сан çийĕн,
Пуласси çинчен калаьăн;
Е саркайăксем юрлаççĕ
Лăпкă хир тÿремĕнче.

Ырă савнăç, йÿçĕ эрĕм,
Аслă вăй, тÿсме çук хурлăх,
Çутă тĕрĕслĕх, суялăх,
Чĕр суран — мĕн çеç курман!
Çавăнпа та эс пĕтмерĕн,
Çавăнпа ĕмĕрсем урлă
Кайрĕ чаплăн асăнмалăх
Паттăр ывăлу Богдан!

Урлă-пирлĕ сăнчăрланă
Çĕршыва йăлтах çăласшăн,
Ют куçран çап-çут хумхавлă
Днепра сыхлас тесе,—
Пысăк шухăш шухăшланă,
Вутлă-çулăмлă, мухтавлă
Вăрçăра писсе туслашнă
Запорожец-казаксем.

Тек султан чура ан тутăр,
Çичĕ ютăмăр алхасиăн
Текех ан асаплантартăр
Святослав ачисене —
Мир те, ирĕклĕх те пултăр,
Çавăншăн чунтан, хаваслăн
Кĕтсе илнĕ пирĕн Рада
Пĕр тăван вырăссене.

Пĕр пек акнă, сухаланă,
Пĕр пек вырнă, çинĕ-ĕçнĕ,—
Юнашар утма кам чартăр
Савăнăç кÿрен çулпа?
Ялавсем вара хумханнă
Çĕлĕксем пĕлĕте вĕçнĕ,
Гетмăна урра янратнăн
Кĕтсе илнĕ халăхпа.

Çутă булава вăл тытнă,
Вăл Мускав енне кăтартнă:
Ĕмĕр-ĕмĕр пĕрле пулăр!—
Тенĕ вăл пур халăха.
Тăванпа тăванĕ хыттăн,
Акă, алă чăмăртанă.
Пĕр-пĕриншĕн—савнăçа вăл,
Тăшмансемшĕн—хурлăха.

Переяслав—чыс хуламăр,
Эс — тăванлăхăн хулийĕ.
Пусмăр тÿсрĕн, хурлăх куртăн
Фашистсен тамăкĕнче.
Харăс тăтăмăр та хамăр,
Çапрĕ те туссен аллийĕ,
Сăнчăр таталчĕ. Эс тухрăн
Ирĕке Днепр хĕрринче.

Пирĕн тĕрĕслĕх—вăл çирĕп,
Пирĕн туслăх—вăйлă, аслă,
Ирĕклĕх çуртне тăрлана
Пĕрлешсе, яланлăха.
Çичĕ ют, ăнлан та—сирĕл:
Эпир туслăн алă панă;
Пĕр-пĕриншĕн—савнăçа вăл,
Тăшмансемшĕн—хурлăха.

А. АЛГА куçарнă.

САЛАМПИ

Повесть

Александр АРТЕМЬЕВ

Çынни ахаль çын пекех туйăнать, анчах... йывăрлăх килсе тухать те, çав çынра вара аслăран аслă хăват çуралать — этем илемĕ.

А. Н. Толстой.

Пĕрремĕш пайĕ

«ХĔР ĔМĔРĔ — ХĂНАЛАХ»

Купăс сасси илтĕнсен — кĕрхи каç та илемлĕ.

Таçтан турикасри йăмрасем айĕнчен юрă вĕçсе килчĕ те, анаткасри улаха чуп кĕчĕ, тунсăхланă хĕрсен чĕрисем хаваслăн тапма тытăнчĕç.

— Ах!—терĕç икĕ хĕр харăсах. Иккĕшĕ те, пĕр хушă сывлама чăрăнса, купăс сассине тăнларĕç.

Пÿлĕмре шăпах, сĕтел çинчи будильник кăна хĕр чĕри пек васкаса шаккать тата, çанталăк ăшăтасса пуль, кăмака хыçĕнчи шăрчăк каçăхса кайсах чăрăклатать.

Кунĕпех çунă çумăр анчахрах чарăнчĕ. Халĕ кĕрхи каçан кичем шăплăхĕнче купăс сасси хаваслăн янăрать, вăл пĕрре пурте ăнланмалла юрату чĕлхипе калаçса кулать, тепре кăмăла пусараканкан темле тунсăх çинчен хурланса калать, çывăрма выртнă хĕрсене те амăшĕсенчен вăрттăн чÿрече каррине сиртерсе урамалла пăхтарать.

Маруçпа Таруç та, сĕтел хушшинчен тухса, чÿрече умне ыткăнчĕç. Купăс сасси çывхарсах килет, кĕвви уçăмлă илтĕне пуçларĕ.

— Виктор!—терĕ Маруç, тем пулнă пекех хавасланса, анчах ăна тусĕ çавăнтах майсăр сăмахпа кÿрентерчĕ.

— Виктор та ун пек каласан вара... Ытла ăста купăççă ку. Коля каланă пек туйăнать,— терĕ Таруç.

Малтанхи кĕвĕ вĕçленчĕ те, купăс пĕр хушă сасă памарĕ, унтан çывăхрах тепĕр кĕвĕ янăраса кайрĕ.

— Ак халĕ Виктор калать... çемми ун çавнашкал. Сирĕн тĕлтен иртнĕ чухне вăл купăсне çынна тыттарас çук-ха, пĕлетпĕр...

Маруç хăйне тусĕ тĕртсе каланине сисесшĕн пулмарĕ, тĕпелти пысăк тĕкĕр умне чупса пырса, хитреленме тытăнчĕ.

Тĕкĕр яланах тĕрĕссине калать, çавăнпа нумай хĕре пăшăрхантарать. Маруç чухлĕ, тен, никам та тĕкĕре тиркемен пуль.

Таруç та тĕкĕр умне пычĕ. Унăн пит-куçĕ ачанни пек çамрăк, çавăнпа Маруç ун çумĕнче самаях аслă курăнать.

Таруç тăрăхларах питлĕ, çÿхе туталлă, шуранкарах сăнлă, кăвак куçлă. Маруç кÿпшекрех питлĕ, хулăн туталлă, хĕп-хĕрлĕ сăнлă, хура куçлă. Таруç йăрăс пÿлĕ, çинçе пилĕклĕ — тирпейлĕ çыхнă ыраш кĕлти пек. Маруç лутра пÿлĕ, тулли кĕлеткеллĕ—пушă çыхнă сĕлĕ кĕлти пек. Тумланасса вĕсем уява та, ĕçе те пĕр пекех тумланса тухаççĕ. Кĕçĕр иккĕшĕ те чĕнтĕрлĕ шурă кĕпе тăхăннă, симĕс саппун çакнă, шурă тутăр çыхнă.

Таруç çирĕмре кăна. Кăçал амăшĕ ăна вăйăсенчен çĕрлене юлса таврăннăшăн ятлами пулчĕ, çапах çамрăк пикен хăй çулĕнчен кăшт аслăрах пулас килет. Темшĕн-çке ăна ялти яшсем пĕве çитнĕ хĕр выранне хуман пек туйăнать.

Маруç çирĕм пиллĕке çитнĕ ĕнтĕ (тарăхнă чухне амăшĕ ăна «ватă хĕр» тесе те тĕртсе илкелет), пурпĕрех вăл чунĕпе çамрăк-ха, хăйне хăй çирĕмре кăна хисеплет: савнийĕ çарта чухне хăй пĕччен ирттернĕ пилĕк çула шута илмест вăл.

Яланах уйрăлми çÿренĕрен, кирек мĕнле ĕçре те пĕрле пулнăран çак икĕ тус пĕр пек тумланма, пĕр пек калаçма хăнăхса çитнĕ, пур ĕçе те пĕр-пĕринчен вĕренсе пынă. Пысăк уйрăмлахĕ те вĕсен сăн-пуçра та çул шутĕнче çеç; май пулас пулсан, Маруç тем пекех хăйĕн ытлашши çулĕсенчен пĕр виççĕшне çамрăк Таруçа парĕччĕ — лешĕ савăнсах йышăнĕччĕ. Анчах та пĕр пурăнса иртернĕ вăхăта каялла таврăраймăн, иртнĕ куна çил-çунат урхамахпа та хуса çитеймĕн. Икĕ тус хăйсен уйрăмлăхĕсене ытти чухне асăрхасах каймĕччĕç-и, тен,— клубра спектакльсем лартнă чух самаях сисеççĕ. Иккĕшин те вĕсен Нарспи ролĕнче выляс килет, анчах Таруçа час-часах Сентти евĕр ача ролĕсене выляма хушаççĕ, Маруçа вара яланах пĕр-пĕр Йăскар йышши евчĕ-карчăк пулма лекет. Пултарĕччĕç-ши вĕсем Нарспи ролĕнче, пултармĕччĕç-ши, çапах иккĕшĕ те Сетнер пек маттур йĕкĕтсене Нарспирен те хĕрÿллĕрех юратма пултарасса шансах тăраççĕ, иккĕшĕ те сăвă-юрăра асăнакан «вилĕмрен те вăйлăрах юратăва» ăмсанса пурăнаççĕ...

Çамрăксем пÿрт умне çитеспе купăс сасси шăпланчĕ, урамра такам мăкăртатса калаçни, кулни илтĕнчĕ, унтан чÿрече янахĕ çумĕнчех, тулта, тем кăштăртатрĕ. Хĕрсем шăпах пулса тăчĕç. Чÿрече карри урлă, тул енчен, Виктор пуçĕ курăнчĕ.

— Ай!—терĕ Маруç, савнине палласанах. Вăл çапла кăшкăрни хăй хĕпĕртенине те, Виктора саламланине те, Таруç умĕнче кăштах мухтаннине те пĕлтерчĕ. Çакна виççĕшĕ те тĕрĕс ăнланчĕç. Виктор, сăмах чĕнмесĕр, куç хĕсрĕ те çĕре тÿплеттерсе сикрĕ. Вăл кашни сăмахне сутăн илет темелле, питĕ сайра калаçать, çавăнпа ăна хĕрсем тепĕр чухне «чĕмсĕр Виктор» теççĕ. Анчах Маруç вара савнийĕшĕн те калаçать тейĕн — чăх сăхса çитерейми пуплет.

— Уçас-и?—ыйтрĕ Таруç, мĕн тумаллине пĕлмен пек пулса. Маруçăн хура куçĕсенче пĕр самантлăх çеç кÿренчĕк хĕлхемĕ йăлтăртатса илчĕ: «Мĕнле-ха эсĕ, тусăм, çавна та ыйтмасăр пĕлместĕн-и е юри кÿрентерме ыйтатăн?»

Алăка шаккани илтĕнсен, иккĕшĕ те васкасах çенĕке чупса тухрĕç.

— Кам унта?

Хирĕç никам та сасă памарĕ, купăс çеç пĕр çавра кĕвĕ янăратса илчĕ. Ма-

руҫ ку кӗввӗн тупсӑмне лайӑх пӗлет: сахал мар вӑл, хӑйсем патӗнче улах чух, ҫак кӗвве аякран илтсенех ҫенӗк алӑкне уҫса хунӑ. Чӗмсӗр Виктор сӑмахпа калайманнине кӗвӗпе систерет...

Пӳрте каччӑсемпе хӗрсем шавласа-калаҫса кӗчӗҫ, Виктор ҫеҫ, сӑмах чӗнмесӗр, тӗпелелле иртрӗ те сӗтел ҫинчи журнала ярса тытрӗ. Маруҫ ун ҫине ӑшшӑн, кӑштах ӳпкевлӗн пӑхса илчӗ: «Алӑ пама та астумарӑн-ҫке, савниҫӗм! Хӗр тунсӑхне пӗр каччӑ та тӗплӗн пӗлсех ҫитеймест ҫав», терӗ вӑл ӑшӗнче.

Таруҫпа Павӑл ҫамрӑксенчен чылай кая юлса кӗчӗҫ. Павӑлӗ кӗнӗ-кӗмен такама ятлаҫанҫи пулчӗ:

— Кам кайран кӗчӗ? Мӗн, пуп пек, алӑк хупмасӑр ҫӳретӗр? Сире пула пирӗн урам алӑкне тухса хупмалла пулчӗ.

— Анкарти алӑкӗ те уҫӑлманччӗ-ши унта, ытла час кӗмерӗр,— шӳтлесе каларӗ Лена.

—Тен, анкарти алӑкӗ те уҫахчӗ пуль, асӑрхаймарӑм, атя, иксӗмӗр тухса тӗкӗлер,— терӗ сӑмахшӑн кивҫене кайман Павӑл.

Ҫамрӑксем кулса ячӗҫ.

— Ҫук ӗнтӗ, юратнисенех чӗнсе тух,— терӗ Лена.

Таруҫ ун ҫине кӑмӑлсӑррӑн пӑхса илчӗ. Лена урай варринчех тӑрать. Кӑнтӑрла вӑл фермӑра хӗрсемпе пӗрле тислӗк хырса купалатчӗ: фуфайкӑпаччӗ, пылчӑкланса пӗтнӗ пысӑк атӑпаччӗ. Халӗ, ав, клуба майралла тумланса кайнӑ: кӑвак пустав пальтопа, ҫӳлӗ кӗлеллӗ ботипе, тутӑр ҫыхман, берет тӑхӑннӑ, ӑна та пулин чалӑш лартнӑ; кӗске кастарнӑ сарӑ ҫӳҫӗ хулпуҫҫи ҫинелле сапаланса анать, ҫӳҫне тӳрлетнӗ чух аллинчи кӗмӗл сехет ҫыххи йӑлтӑртатса илчӗ...

«Эс анчах уш!..» шухӑшларӗ Таруҫ, кӑвак куҫне вылятса. Лена пӗррех пӑхсах ун шухӑшне ӑнланчӗ.

— Мӗншӗн репетицие пымарӑр, каллех агротехника кӗнеки вуларӑр-им?— ытарлӑн ыйтрӗ вӑл.

«Эс анчах уш... таврара ҫук сарпике... Нарспи ролӗнче выляма аван пуль сана унта... Репетицисенче те малта пулма тӑрӑшатӑн... Камшӑн капӑр тумланатӑн-ши, кама килӗшес тетӗн?..»

Таруҫ сӑмах хушиччен Маруҫ вӗтетме те пуҫларӗ.

— Эпӗр-и? Мӗн-и? Ара, Таруҫ ашшӗсем ӗҫме кайнӑ та, пӗр каҫ та пулин улах тӑвас терӗмӗр. Авӑн пӗтернӗренпе кашни каҫах клубра шавлатпӑр-иҫ, йӑлӑхтармасть тетрим? Кӗҫӗр-и, агротехникине те вӗренкелерӗмӗр, ахаль ларнӑ тетрим?

— Халех эсир мӗнле техника вӗреннине пӗлетпӗр,— терӗ чӗнмесӗр ларакан Виктор. Вӑл журнал варрине хунӑ тетраде туртса каларчӗ те Павӑла тыттарчӗ. Лешӗ тетраде юри пӗрре куҫ умнех ҫывхартрӗ, унтан аякка тытса пӑхрӗ — ҫамрӑксем кулса ячӗҫ.

— «Юрату юрри!» — терӗ каччӑ, мыскараҫӑ пек кулӑшла вулама тӑрӑшса.— Акӑ мӗнле агротехника иккен! Тӑхта, тӑхта, тӑхлачӑ! Халех агрокружок занятийӗ пуҫлатпӑр... Шӑп, итлӗр, ачасем!..

Ҫӳл тӳпере ҫӑлтӑр вылять,
Сан куҫу пек йӑлтӑртатса;
Чул хушшипе тӑр шыв юхать,
Сан куллу пек шӑнкӑртатса.

Павӑл култарса вулама тӑрӑшрӗ пулин те, ҫамрӑксем пурте шӑплансах итле пуҫларӗҫ, Лена сӗтел умне пырса тӑчӗ.

— Вула, вула малалла!

Павӑл хӗрсем ҫине хаваслӑн пӑхса илчӗ те тетраде каллех пӗрре куҫ умне тытрӗ, унтан аякка тытрӗ —хальхинче кулакан пулмарӗ.

Сывлӑм ӳкет садсем ҫине,
Каҫ сулхӑнӗ ҫапать ҫӗре.
Ӑҫта-ши эс ҫак каҫхине?
Сапа кӗтсе ҫунать чӗре.

Пӗччен ытла кичем мана,
Сансӑр мӗнле ҫӗр ирттерес?
Мӗн пулчӗ-ши, савни, сана?
Ӑҫта-ши эс? Кампа-ши эс?

Павӑл текех кулмарӗ, тем ҫухатнӑ пек, тетрадь листисене васкаса уҫкала пуҫларӗ.

— Вула, ара! Питӗ лайӑх ҫырнӑ-ҫке!

— Ма чарӑнтӑн тата?

— Ан шавлӑр, вулатӑр! Кольӑна пар, вӑл лайӑх вулать.

— Ан тив, хӑех вулать. Вула, Павӑл.

— Ҫырман хута мӗн вулас?—терӗ каччӑ.— Урӑх ҫырни ҫук... Ну, Маруҫ, эс ҫырнӑ ку сӑвва, аллу санӑн! Кала тӗрӗссипе, ӑҫтан вуласа ҫыртӑн? Тӗрӗс каланӑшӑн ним те тумастӑп.

— Ара, ав, журналтан ҫырса илме пуҫларӑм та — ҫырса пӗтерейменрӗм, ара,— терӗ хӗрлӗ кӑшман пек хӗрелнӗ Маруҫ, шур тутӑр вӗҫӗпе тутине хупласа.

Лена сӗтел ҫинчи журнала йӑпӑр-япӑр ярса илчӗ те янӑравлӑ сасӑпа вула пуҫларӗ.

Йӑлтӑр-йӑлтӑр ҫутӑ куҫу
Ма ҫутатмасть ман чунӑма?
Шӑнкӑр-шӑнкӑр хавас куллу
Ма янратмасть мӑн урама?

Хӗр сывлӑш ҫавӑрса илчӗ те кӑштах чӗтрекен сасӑпа вуласа пӗтерчӗ:

Ҫӑлтӑр сӳнет ҫӳл тӳпере—
Пуриншӗн те килет ыр кун;
Сӳнми ҫунать пӗр ман чӗре,
Саншӑн ҫунать ман ҫамрӑк чун.

Ҫамрӑксем пӗр самант шӑпах ларчӗҫ, Лена сасартӑк савӑнса кӑшкӑрса ячӗ, ун сасси пурне те шартах сиктерчӗ:

— Ой, ачасем! Салампи юрри-ҫке ку! Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче вӑл ҫак юрра юрлатчӗ!

— Салампи юрланӑ юррӑн сӑмаххисем ҫавӑн еверлӗччӗ-иҫ, чӑнах та, ара, мӗнле астуман!—терӗ Маруҫ, Таруҫ еннелле пӑхса.

— Чӑнах та, ара, Салампи юрри пекех,— килӗшрӗ лешӗ.

— Юрлатчӗ те ӗнтӗ юрласса, сасси кӑна мӗне тӑратчӗ!—терӗ чӗнмесӗр ларакан Виктор.

Маруҫ ун еннелле вӑрт ҫеҫ тӳртӗн тӑчӗ: «пӗрре те пулин ҫапла ырласчӗ ун мана, ҫын хӗрӗсене мухтаса ларать... сехетре пӗрре ҫӑвар уҫать, унта та ют хӗрсене асӑнать», тени пулчӗ ӗнтӗ ку.

— Юрӑ авторӗ кам вара?

— Хусанкаях пуль, ача?... Хитре ҫавӑрса каланӑ...

— Сӑввине кам ҫырнине каламан, кӗввине темле Алмазов ҫырнӑ, ҫамрӑк композитор пуль,—терӗ Лена.

Алӑк патӗнчен иртмесӗр ларакан Кольӑна тем пулчӗ тейӗн, вӑл яштах сиксе тӑрса сӗтел умне пычӗ.

— Алмазов терӗн-и? Алмазов?! Кӑтарт-ха...

Пурте Коля еннелле ҫаврӑнса пӑхрӗҫ. Вӑл пуринчен ҫамрӑкрах: ача шутӗнчен тухнӑ ӗнтӗ, каччӑ шутне кӗреймен-ха, кӑҫал вуннӑмӗш класа ҫӳрет. Амӑшӗпе иккӗшех пурӑнаҫҫӗ. Кил таврашӗнче ӗҫ нумайран, тӑрӑшса вӗренпӗрен вӑл вечерсене те, урама та сайра-хутра ҫеҫ тухкалать. Коля пиччӗшӗн пиншакне тӑхӑннӑ, вӑрӑм ҫаннисене кӑштах таварнӑ. Яланах лӑпкӑ ҫӳрекенскер, вӑл халӗ, пурте хӑй ҫине пӑхнине сиссен, именчӗ пулас, хӗр пекех хӗрелсе кайрӗ, питӗнчи чӗкеҫ шатри те палӑрми пулчӗ.

— Ку ҫавӑ! Ҫавӑ!—терӗ Коля пурте илтмелле.

— Кам ҫавӑ?

— Мӗн тесен те, ҫавӑ!

— Кам «ҫавӑ»? Мӗн эсӗ, ура ҫинчех тӗлӗк куратӑн-им? — тӗртсе илчӗ Павӑл.

Ҫамрӑксем кулса ячӗҫ, Маруҫпа Таруҫ чӑхсем кӑтикленӗ пек, пыра кӑтӑклантарсах кулчӗҫ.

— Кам вара вӑл?—ыйтрӗ Лена та, кӑштах йӑлкӑшса кулса.

Коля чӗтреме пуҫланӑ аллисемпе журнала ҫавӑркаларӗ, унтан, ҫамрӑксем мӗншӗн кулнине ӑнланмасӑр, пурин ҫине те ӳпкевлӗн пӑхса илчӗ.

— Старши сержант Алмазов вӑл... Анатолий Алмазов...

Павӑл каллех тем каласа култарасшӑнччӗ, анчах Коля куҫӗсене асӑрхарӗ те калас тенинех калаймарӗ.

— Анатолий Алмазов... Мӗн тесен те, ҫавах... Виҫӗ ҫул каялла вӑл пирӗн пата ҫыру ячӗ... Ҫавах... Пиччене вӑл Маньчжурире... фронтра... хӑй аллипе тирпейлесе пытарнӑ...

Ҫамрӑксем шыв сыпнӑ пек шӑпланса ларчӗҫ: вӗсене кашнинех Коля пиччӗшӗ, хаваслӑ та маттур Валерий, аса килчӗ. Кӗҫӗр те улахра хӗрсемпе калаҫса куласскер, таҫти ют тусем хушшинче выргать ӗнтӗ вӑл; таҫта унӑн вилтӑпри, таҫта унӑн хӗрлӗ ҫӑлтӑрлӑ пӗчӗк палӑкӗ; таҫта-ха вӑл, Маньчжури текен ҫӗршывӗ те: илтме ун ҫинчен пурте илтнӗ, кӗнеке-карттӑ ҫинче те куркаланӑ, анчах вӑл ку ялтан тахӑш еннерех, ку тӗлтен темиҫе пин ҫухрӑмра; те ӑшӑ халь унта, те сивӗ?

Хурлӑхлӑ шӑплӑха никам та пӑсма хӑяймарӗ. Улах тавраш нихҫан кун пек шӑпӑрт пулман пуль. Пасар та пӗр вӑхӑт шӑпланать, теҫҫӗ, шавлӑ улахра та хӑш чухне калаҫу таталнӑ пулкалать. Ун пек самантра хӑшӗ те пулин ҫивӗчрех чӗлхелли: «Пине ҫитрӗ — сӑмах пӗтрӗ!» тет — вара каллех сӑмах сыпӑнать. Йӑли ҫапла. Хальхинче нихӑшӗ те «сӑмах пине ҫитнине» асӑнмарӗ. Пӳртри шӑплӑха пӗр хушӑ будильникпе кӑмака хыҫӗнчи шӑрчӑк кӑна хускатса тӑчӗҫ. Ҫак йывӑр самантра такам урам енчи кантӑкран

хытӑ шаккарӗ. Пурте ҫӑмӑллӑн сывласа ячӗҫ.

— Кам унта?—терӗҫ чӳрече умӗнче ларакансем, урамалла пӑхса.

— Пирӗн Маруҫ кунта-и ҫав?—илтӗнчӗ ҫурӑк чан пек чӑрӑлти сасӑ.— Калӑр-ха, часрах киле пытӑр!

— Мӗн, евчӗсем килмерӗҫ пуль-ҫке, ун пеке васкатӑн?—терӗ сӑмах чӗнмесӗр чӑтайман Павӑл.

— Эс ан мӑскӑлласа лар-ха унта! Хам Супаскартан ӗсенсе килтӗм те, конюснине ласа еҫме каякан та ҫук килте. Ан мӑскӑлла ӗнтӗ, кала-ха часрах Маруҫа.

— Кам «мӑскӑллать» сана?.. Маруҫ, инкӳ чӗнет, чуп часрах киле: Шупашкартан евчӗсем килчӗҫ, тет, ав!

Ҫамрӑксем кулса ячӗҫ. Маруҫпа Таруҫ тем пӑшӑлтатса илчӗҫ те тумланма пуҫларӗҫ.

— Эсир ларӑр-ха эппин, эпир конюшнине лаша леҫсе киличчен,— терӗ Таруҫ хӗрсене, хӑй Маруҫ хыҫҫӑн тухса чупрӗ.

— Кӑвалисем пӗрлешнӗ тейӗн ҫав: пӗр-пӗринчен пӗр шит те уйрӑлмаҫҫӗ,— терӗ Павӑл.—Пӗрне качча илсен, тепри те ирӗксӗрех пырать пуль. Вӑт мыскара пулӗччӗ...

Улаха каллех чун кӗчӗ. Лена патне пырса ларнӑ хӗрсем журнал пӑхма тытӑнчӗҫ, Павӑлпа Виктор шахматла выляма пуҫларӗҫ. Виктора май килчӗ ӗнтӗ: халӗ вӑл, чӗмсӗрскер, ҫӗрӗпех сӑмах хушмасӑр выляса ларма пултарать, Павӑлӗ вара кашни фигурӑна шутармассерен пӗр пӗчӗк лекци вулать, пӗрехмай йӑнӑш тӑвать. Ытти ҫамрӑксем тем пӑшӑлтатса кулма пуҫларӗҫ. Коля купӑс тытса ларчӗ.

— Ой, хӗрсем!—терӗ Лена хавасланӑн.— Кунта Саланов ҫинчен ҫырнӑ! «Чаплӑ новатор», тенӗ ӑна.

— Мӗнле Саланов? Леш, «Малалла» колхозри садовод-и?

— Ҫемен-и? Ӑна эпӗ питӗ лайӑх пӗлетӗп-ҫке!

— Шах, шах! Слонпа ӑҫта каятӑн, юрамасть!.. Тӑхта... Эй, эй! пешкӑна ӑҫта куҫаратӑн?

— Ҫемене эпӗ те пӗрре ярмаркӑра курсаттӑм: питӗ маттур йӗкӗт вара...

— Стоп! Халех сан офицерна шаплаттаратӑп, ррраз!..

— ...Салампипе калаҫса тӑратчӗҫ, тата темле майра пурччӗ вӗсемпе.

— Салановӑн савниййӗ вӑл, хӑйсен ялӗнчи учительница. Вӗсен юратӑвӗ пирки Салампи ҫулла каласа шалт тӗлӗнтерсе ячӗ — итлесе ларсан чӑн-чӑн юмах темелле, Нарспипе Сетнер пекех.

— Тӑхта, тӑхта, тӑхлачӑ... Халех сана ҫҫсапап... ак ку ладьине ҫҫсапас!.. ррраз!.. Шах!.. Каллех май килмерӗ иккен... Пулаймарӗ... Полимерӗ...

— Темех пур ӗнтӗ ҫав хӗр ҫумӗнче, эпӗ те пӗрре районта курсаттӑм, ытлашши чиперех мар-иҫ, ҫав териех асапланса юратма...

— Саншӑн ҫеҫ асапланса пурӑнмалла иккен, тупӑннӑ тата тепӗр Нарспи!.. Эй-эй-эй, стоп! Ӑҫта кӗрсе кайрӑн?.. Ҫиччас сан ферҫна ҫапатпӑр... ҫҫсапас... ррраз!.. Ах, ҫунса каясшӗ! Каллех май килмерӗ вӗт... ку хӗрсене итлесе...

— Ан итле эс, Павӑл, лайӑххах выля... Салановӗ халь авланать темеҫҫӗ-и, хӗрсем? Ҫав учительницӑнах илет, теҫҫӗ мар-и?

— Ай, апи!! Ан чӗпӗт-ха, Павӑл!.. Мӗн эс мана, Таруҫ куртӑн-им?

— Кам чӗпӗтет сана? Чипер калаҫ!

— Шах!

— Авланать теҫҫӗ, ҫав хӗрех илет теҫҫӗ...

— Тӑхта, тӑхта, тӑхлачӑ... ҫҫсапас... ррраз!..

— Мат!

— Ҫунса каясшӗ! Хӗрсене итлесех выляса ятӑм... Тавай тепре...

Коля ҫеҫ ҫамрӑксен шавне хутшӑнмасть, вӑл хӑй юратнӑ «На сопках Маньчжурии» вальс кӗввине хуллен тӑсать. Хушӑран ӑна «Салампи», «Саланов» тени илтӗнет. «Салампи... Салампи... Вӑл чи ырӑ хӗр... Таврара ун пекки ҫук пуль, пулман та пуль... Анчах кам вӑл Саланов? Ӑҫта илтнӗччӗши вӑл ята?» Коля шухӑшӗсем тӑвӑл пӗлӗчӗсем пек пӑтранаҫҫӗ, умма каллех Алмазов ячӗ тухать, каллех инҫетри Маньчжури... Салампи... Валерий... Маньчжури сопкисем ҫинчи ҫапӑҫу... паттӑрла вилнӗ Валерий...

Вӑрӑммӑн-вӑрӑммӑн тӑсӑлать кивелме пӗлмен хурлӑхлӑ кӗвӗ, вӑрӑммӑнвӑрӑммӑн тӑсӑлать купӑс, татӑлсах макӑрать, хаш! хаш! сывлаҫҫӗ бассем. Купӑс мар, Коля чӗри хурланать. Темле хаяр тӑвӑл, Маньчжури ҫыранӗсенче ҫеҫ алхасакан тайфун пек тӑвӑл капланчӗ ун чӗрине. Мӗнле лӑпкӑн итлеме пултараҫҫӗ-ха ҫынсем ҫак кӗвве? Мӗнле вӗсем ҫак хуйхӑллӑ кӗвӗпех савӑнса-кулса ташлама пултараҫҫӗ? Мӗншӗн вӗсене ҫак ӗлӗкхи юрӑра салтак эмӗшӗн вӗри куҫҫулӗ шӑпӑртатса юхни илтӗнмест?..

Кольӑна ҫак кӗвӗ чӑваш ялӗнчи улахра мар, инҫет хӗвелтухӑҫӗнче, Сарӑ тинӗс хӗрринче, сопкӑсем хушшинче янӑранӑ пек туйӑнать. Коля хӑй те шухӑшӗпе кунта мар, ҫавӑнта, аслӑ вӑрҫӑ кӗрлесе иртнӗ хирте...

Пӳрт алӑкӗ шалтлатса хупӑнни Кольӑна хӑй ӑстине аса илтерчӗ, хӗрсене шартах сиктерчӗ, шахмӑтла выляса лараканнсене чӑрмантарчӗ.

Маруҫпа Таруҫ, темрен тарнӑ пекех, тӗпӗртетсе килсе кӗчӗҫ.

— Ах, ачасем!—терӗ алӑкран сирпӗнсе кӗрсенех Маруҫ.

— Ах, хӗрсем!—терӗ пӳлӗнсе Таруҫ.

— Ах!..

— Ах!..

Павӑл чӑтса лараймарӗ:

— Мӗн ахлататӑр эсир, ачаш ҫӗртен аҫа ҫапмарӗ пуль-ҫке?—терӗ. Ыттисем кулса ячӗҫ.

— Эсир кулатӑр... Хӑраса вилсе каймалли хыпар!—терӗ Таруҫ, инкесем евӗр, ик пӗҫҫине шарт ҫапса.

— Салампи ача ҫуратнӑ!—персе ячӗ Маруҫ, аран-аран сывлӑш ҫавӑрса.

Журнал вуласа ларакан Лена сиксе тӑчӗ, Павӑл калас тенӗ шӳтле сӑмахне манчӗ, Коля хӑй илтнине ӗненмерӗ. Чӗмсӗр Виктор та тек тӳсеймерӗ, Маруҫа хӑтӑрса тӑкрӗ:

— Эс унта темскер ан лӗпӗртет, сан чӗлхӳ чараксӑр... пуш арманах авӑртма юрататӑн!

— Мӗнле вара?

— Ӑҫтан илтрӗр?

— Кам каларӗ?..

— Маруҫ, тӑхта-ха, мӗн ҫамарта тӑ-

Шупашкарти Водопьянов ячӗпе тӑракан тир-сӑран комбинатӗнчи заготовщица Светлана Ляпина, Май уявӗ умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнса, кулленхи ӗҫ нормине 150—160-шар процент тултарса пычӗ. Халӗ вӑл ҫур ҫулхи плана срокчен пурнӑҫа кӗртессишӗн тӑрӑшать.

И. Никифоров фотоӳкерчӗкӗ.



вас чăх евĕр кăтиклетĕн... чарăн... Таруç калатăр!.. Кала, Таруç!

— Ара, Маруçсен инкĕшĕ Салампие хуларан лартса килнĕ...

— Вара, пирĕн инке Шупашкара кайнăччĕ те...

— Маша! Сана каларăм-и?—хаяррăн систерчĕ Виктор. Маруç çавăнтах хулăн тутине тутăрпа хупларĕ.—Кала, Даша.

Таруç пўлĕне-пўлĕне калама пуçларĕ.

— Ара, Маруç инкĕшĕ Шупашкара пасара кайнă та Салампи хваттерне кĕнĕ, ара, мĕн... апат-çимĕç парса хăварас тенĕ вăл. Салампийĕ çав вăхăтра киле килме хатĕрленнĕ-мĕн...

— Ăна институтран кăларса янă, тит,— хушса хучĕ Маруç,— ара, хĕрлех ача тунăшăн, тит... Инки каларĕ...

— Сирĕн инкў мĕн каланине йăлтах ĕненес пулсан, хĕвел тахçанах тепĕр енчен тухмалла,— терĕ Павăл.—Сўрет çав сĕтĕрĕнсе пасарăн-мĕнĕн, элек пухса. Чĕлхи калта хўри пек, çăварĕ алтăр пек — нихçан та хупă тăмасть. Шутламасăр палкама юрататъ, ун майĕ çине пуç мар, громкоговоритель пек пысăк çăвар кăна лартса янă, тейĕн.

— Эс хăвна пĕл, ара, çынна ан мĕн ту...

— Маша! Сана каларăм-и?—асту-тарчĕ каллех Виктор.— Кала, Даша.

Коля сасартăк ыйхăран хăраса вăраннă пек пулчĕ, ун аллисем лăштăрах кайрĕç; купăс шуса анчĕ-анчĕ те чĕрçинчен урайне кăшт çеç персе анмарĕ — Коля ăна тытма ĕлкĕрчĕ... Чĕри унăн кăкăр шăммине хуçасла хытă шаккама тытăнчĕ, пĕтĕм шăм-шакĕ сăрăлтатса, шăнса кайрĕ, усал хыпар чĕре шăнăрĕсене пĕрре туртса хытарнă пек, тепре лăштăрах пушатса янă пек туйăнчĕ.

— Çул çинче çумăр çума пуçларĕ, тит те, ачи макăрма тытăнчĕ, тит. Маруç инкĕшĕ вара хăй сăхманнех хуса патăм, тит, ара, пĕркенччĕр тесе ĕнтĕ. Сăмах майĕн: «Ашшĕ мĕнлерех-скер, инçитутра вĕренекенскерех-и?» тесе ыйтсан, Салампи ним те каламарĕ, тит. Пĕрмай ачине чуптуса макăрать, тит.

— Ачи пысăк, тит, ĕнтĕ, виçĕ çулхискер, тит, инки калать, вырăсла анчах калаçать, тит.

— Маша!

Маруç кăмăлсăрланса шăпланчĕ. Таруç кăмака çумне тăнă та темшĕн ик аллине те малалла тăсса калаçать.

— Ара çав, виç çулхискер, тит. Кам шутланă-ха Салампие ун пек тесе? Тĕлĕкре те тĕлленмен... Мĕнле-ха çав виçĕ çул хушши хăй ачине пытарса пурăнма пултарнă?

— Ача çуртĕнче усранă, териç инки. Ара, ача çуртĕнче пытарса ўстернĕ, никама та систермен. Вăт сире чаплă хĕр! Чаплă хĕрĕн чапĕ часах каять çав. Çапла вĕсем хитрисем — хитрăй!

Викторăн куç харшисем пĕрĕннине курсан, Маруç калаçма чарăнчĕ. Пурте каллех Таруç çинелле пăхрĕç.

— Халь пўртĕнче пурте ўлесех макăраççĕ, тит, ачи те сухăрать, тит, Салампипе амăшĕ те йĕреççĕ, тит.

Çĕнелекен Варшавăра пирĕн совет çыннисем, Польша Халăх Республикине парне тесе, И. В. Сталин ячĕпе тăракан Культурăпа наука дворецне туса параççĕ. Халĕ ку Дворец çуртне туса пĕтерпĕ, унăн шалти пўлĕмĕсене сăрласа илемлетеççĕ.
ТАСС фотохроники.

— Пулма пултараймасть!— терĕ Лена.— Лăпăртатса сўретĕр çав çын элекĕ тăрăх! Хам кайса курмасăр та ĕненессĕм çук, Салампие аван пĕлетĕп: нихçан та ун пек пулас çук вăл!

Çамрăксем Маруçпа Таруç еннелле тарăхса пăхрĕç: мĕнле хăяççĕ-ха кусем Саламписинчен çавăн пек намăс ят сарма?!

Лена тухса кайсан, пурте шăпланса ларчĕç, чи кирлĕ çын, аслăраххи, пурне те пĕлекенни тухса кайнă пек, халĕ ним пĕлменнисем çеç, пур элеке те ĕненекенсем çеç ларса юлнă пек туйăнчĕ. Пурне те кăшт лайăх мар пулса кайрĕ. Маруç кăна, ним пулман пекех, Таруç хăлхинчен пăшăлтатса каларĕ:

— Ĕлĕк хăй Салампипе хирĕçетчĕ, ара, Валеришĕн кўлешетчĕ, халĕ каллех Салампипе тус пулма тăрăшать. Хăтлантăр-иç, пире мĕн? Пиришĕн пулсан — ик айкки те тăвайкки.

Коля Маруç сăмахĕсене лайăхах илтрĕ те калама çук тарăхрĕ, анчах çилли çавăнтах сўрĕлчĕ, ун чĕрине йывăр хуйхă пусрĕ. Мĕн ку? Мĕн пулса иртет-ха кĕçĕр ун пурнăçĕнче? Мĕн илтет Коля? «Салампи... Чăнах çапла пултăн-ши эсĕ? Кама ĕненмелле вара, эсĕ те апла пулсан?»

Килхушши енчи кантăкран такам питĕ хуллен шаккарĕ. Чĕмсĕр Виктор чўрече каррине сирсе тулалла пăхрĕ те, ним шарламасăр юлташĕсем еннелле çаврăнчĕ.

— Кам?—ыйтрĕç унран пурте пĕр харăс.

— Салампи.

Çамрăксем шăпах пулчĕç, кăмака хысĕнчи шăрчăк та, теме сиссе, чăрăклатма чарăнчĕ, будильник шаккани виç-тăватă тимĕрçĕ ылмашлăн шакканă пекех туйăнчĕ. Таруç хăйĕн тусĕ çине пăхса илчĕ те çенĕк алăкне уçма тухрĕ, Маруç та ун хыççăнах йăкăртатрĕ.

Салампи килсе кĕрсен, аслă пўрт те тулса ларнă пек пулчĕ, ăхаль те çутă пўлĕм тата ытларах çуталнăн туйăнчĕ. Салампи сенкер пурçăн платьйăпа, сăран атăпа, çара пуçăн. Унпа пĕрле пўрте уçă сывлăш кĕчĕ.

«Çурхи куп пек, таса та илемлĕ!» шухăшларĕ Коля, пĕчĕк ачалла савăнса; анчах ун савăнăçĕ самантлăха çеç пычĕ, тепĕр шухăш, иккĕленўллĕ шухăш, çуралчĕ: «Кама алă парĕ-ши малтан? Алăк патĕнченех алă пама пуçласан — усал хыпар тĕрĕс мар, тĕпелтисенчен алă пама пуçласан — тĕрĕс.»

Салампи алăк патĕнчисенчен алă пама пуçларĕ. Çакна кура Коля чĕри хăпартланса, çунатланса кайрĕ: «Тĕрĕс мар хыпар, элек!» шухăшларĕ вăл са-

вӑнса. Шыва путакан ҫын ҫапла улӑм пӗрчинчен те пулин ярса тытса ҫӑлӑнма тӑрӑшать...

— Лайӑх-и, Коля?

Коля сывлама чарӑнчӗ, Саламнин кавак шӑрҫа пек куҫ шӑрҫисене сывӑхран курчӗ те хӑйӗн шӑмшакӗ тӑрӑх темле ырӑ туйӑм сӑрӑлтатса кайнине сисрӗ. Ҫав пысӑк куҫсем ҫурхи тӳпе евӗр таса та сенкер, вӗсем, ҫыннӑн чунне, шухӑш-туйӑмне витӗр курас пек, тӳрӗ пӑхаҫҫӗ. «Айӑплатӑн-им мана? Ӗненместӗн-им эпӗ тасине?» теҫҫӗ вӗсем.

«Саламин!—терӗҫ Коля куҫӗсем,— Саламин! Эпӗ сана мӗнле ӗненсе пурӑннине, мӗнле юратнине калама сӑмах та ҫитеймӗ! Акӑ, кур, ман юрату, ман телейӗм — икӗ куҫӑм тулли! Эпӗ сана ытараймастӑп! Ытараймастӑп!..» Хӗр аллине вӑл чӑмӑртамарӗ, сӗртӗнчӗ кӑна: «Эсӗ пирвайхи юр пек таса, эпӗ сана сӗртӗнме те вӑтанатӑп», терӗ ун алли те. «Каҫар мана, Саламин, сан пирки иккӗленсе шутланӑшӑн!»—терӗҫ унӑн хӑмӑр куҫӗсем, хӑй ҫавӑнтах аса илчӗ: «Мӗн каларӗ-ха вӑл мана? Мӗн каламаллаччӗ ӑна хирӗҫ?»

—Чиперех,— терӗ Коля хуллен.

Саламин вӑл мӗн каланине илтмерӗ те пулас, урӑххине алӑ пачӗ, йӗркипе алӑ тытса тухрӗ — кулмасӑр, каникулсене килнӗ чухнехи пек савӑнӑҫлӑ калаҫмасӑр. Кашнинех ятпа асӑнса сывлӑх сунчӗ. Никам та сӑмах хушакан пулмарӗ, Павӑл кӑна тӗлсӗрех тем калаҫса илчӗ. Кӑмака хыҫӗнчи шӑрчӑк каллех чуна хӑйракан сасӑпа чӑрӑклатма тытӑнчӗ.

«Кусӗсенче куҫҫуль йӗрӗ палӑрмасть, макӑрман вӑл, суя сӑмах иккен», шухӑшларӗ Коля. Ӑна хӗрӗн кушӑрханӑ тути аса килчӗ те, вӑл урӑхла шухӑшларӗ: «Тен, хӗр тути ҫилпе кушӑрхаман пуль, хуйхӑран типсе ҫуннӑ пуль? Куҫҫулӗ те, тен, тахҫанах йӗре-йӗре типнӗ пуль?»

Саламин сӗтел ҫинчи журнала илчӗ те, унти юрра курсан, кӑшт ҫеҫ палӑрмалла йӑлкӑшса кулчӗ:

— Ой, Алмазов!—терӗ. Сӗтел ҫинелле пӗшкӗнсе, журналти юрра пӑхса тухрӗ. Сӑнӗ ҫуталса кайрӗ, хӗрелчӗ. «Кӗҫех вӑл ытти чухнехиллех хаваслӑн кулса ярӗ, янкӑр уҫӑ сасси кантӑксене чӗтрентерӗ», шухӑшласа илчӗ Коля. Анчах Саламин тӳрленсе тӑчӗ, малалла усӑннӑ ҫырӑ ҫивӗтне ҫурӑм хыҫнелле ывӑтса ячӗ — хулӑн ҫивӗт пилӗкрен аяларах авӑнса ӳкрӗ. «Мӗнле йӑрӑс пӳлӗ!» савӑнса шухӑшларӗ Коля, анчах ун вӗри чӗрине ҫавӑнтах такам пӑр пек сивӗ алӑпа тытса пӑчӑртарӗ...

— Даша,— терӗ Саламин,— эпӗ сирӗн пата пысӑк таз илме килсеттӗм...

Вӑл вӑрт ҫеҫ Таруҫ еннелле ҫаврӑнчӗ, хулӑн ҫивӗт каллех йывӑррӑн сулланса илчӗ.

Пурте шӑпах. Кӑмака хыҫӗнчи ухмах шӑрчӑк ҫеҫ ҫурӑк сассипе чуна ҫурать...

— ...ачана чӑпӑл тӑвас тетӗп.

Стакана миҫе тумлам шыв кӗнине пӗлме ҫук, юлашки ытлашши тумламран стакан тулса тӑкӑнса каять. Этем чӗри те ҫавнашкалах: вӑл мӗн чухлӗ хуйхӑ тӳсме пултарни паллӑ мар, анчах пӗр тулса, тӑвӑнса ҫитсен — тек тӳссе тӑраймасть...

Кольӑн, чун ыратса килнипе, пӗтӗм ял илтмелле кӑшкӑрса ярас килчӗ, анчах вӑл шӑлне ҫыртса лартрӗ. Саламин атти чӗриклетни ӑна пиччӗшӗ салтака тухса кайнӑ кун хуҫӑлнӑ тӑрантас кашти ҫапла чӗриклетсе пынине аса илтерчӗ, кӑвак платье арки хумханни те — уйрӑлнӑ чух Валерий аллинчи кӑвак тутӑр салхуллӑн варкӑшнине аса илтерчӗ...

Тулса ҫитнӗ стакана юлашки тумлам тумларӗ ӗнтӗ... Коля Саламин тухса кайнине те, ҫамрӑксем шавласа тухса кайнине те асӑрхамарӗ...

— Коля!—кӑшкӑрчӗ Павӑл.

Коля сасартӑк пуҫне ҫӗклерӗ.

— Мӗн?

— Мӗн эсӗ, походран килнӗ салтак пек, ларнӑ ҫӗртех ҫывӑратӑн? Хӗрсенчен ҫывӑрса юлан вӗт! Пӑх-ха, йӑлтах тухса кайрӗҫ.

Пӳртре икӗ мӑшӑр кӑна ларса юлнӑ иккен. Таруҫпа Маруҫ, питӗ хытӑ пакӑлтатса, Викторпа шахматла выляҫҫӗ. Лешӗ, чул кӗлетке пекех, ларнӑ та ним те чӗнмест.

— Эпӗр халех пыраймастпӑр-ха, пӗр ӗҫ пур... ху пӗлен... Эсӗ купӑса хӑвӑр патах илсе кай, сан инҫе утмалла, а каҫхи ҫул купӑссӑр кичем вӑл, ху пӗлен... Купӑспа походра та ҫӑмӑл,—терӗ Павӑл. Хӑй шинельне хывса та хунӑ иккен...

Коля хыҫҫӑн алӑк питӗрсе юлма Маруҫпа Таруҫ шавласа тухрӗҫ.

—Хӗр ӗмӗрӗ — хӑналӑх, арӑм ӗмӗрӗ — яланлӑх, — ахаль каламан ҫав ку сӑмаха,— терӗ Маруҫ вӗтӗлтетсе. Кольӑн чӗри кӑртах сикрӗ.

— Ара, хӗр ӗмӗрӗ — хӑналӑх пулмасӑр, вунҫиччӗрен пуҫласа пӗр ҫирӗме ҫитиччен кӑна,— терӗ Таруҫ, ҫавӑнтах хӑйӗн тусӗ кӳреннине сисрӗ те,— пӗр ҫирӗм пиллӗке ҫитиччен анчах,— тесе хушса хучӗ.

— Ара, ҫапла пулмасӑр,— терӗ Маруҫ хӗпӗртесе,— кайран вара ватӑ хӗр шутне кӗретӗн. Ҫавӑнпа хӗр чухнехи пурнӑҫа пурӑнма майне пӗлес пулать, унсӑрӑн — усал сӑмах утпа ҫӳрет...

— Ара ҫав...

«Ара» та «вара» текелесе. вӗсем хӗр ӗмӗрӗ хӑвӑрт иртни ҫинчен те, ҫамрӑк чух йӗркеллӗ пурӑнмалли ҫинчен те, качча кайсан хӗр чухнехисене манмалли ҫинчен те асӑнчӗҫ.

«Мӗншӗн-ха ку чакаксем пӗрехмай «ара» та «вара» теҫҫӗ?»—шухӑшларӗ Коля, вӗсем калаҫнине пӗрремӗш хут илтнӗ пек. Унтан каллех Саламин салхуллӑ сӑнне аса илчӗ, вара, хӗрсене сывлӑх сунмасӑрах, урам алӑкне шалтлаттарса хупрӗ те купӑсне хӗрхенмесӗр тӑсса ячӗ.

Каҫхи уҫӑ сывлӑшра купӑс сасси янн! янн! каять. Никам та чӳрече витӗр урамалла пӑхмасть ӗнтӗ: пасӑрах ҫурҫӗр иртнӗ, ӗшеннӗ ял канлӗн тӗлӗрет. Тӑлӑх купӑс кӑна, инҫетри-инҫетри Маньчжури хирӗнче пӗр ҫамрӑк салтак хускалми выртни ҫинчен сӑмахсӑр каласа, куҫҫулсӗр макӑрать.

СИВӖННӖ САЛАМСЕМ

Амӑшне вӑратас мар тесе, Коля пӳрт алӑкне питӗ хуллен хупрӗ, анчах тӗттӗмре кӗтмен ҫӗртенех темрен такӑнчӗ те, алӑри купӑс найкӑшса илчӗ. Амӑшӗ вара шарт сиксе вӑранчӗ. Аслӑ ывӑлӗ салтака кайнӑранпа ялан ҫапла хӑраса вӑранать вӑл: ыйхи ытла ҫӑмӑл, пӗчӗк шав та ӑна пӑлхатать.

— Эх, ача-ам! Каллех ир енне тин таврӑнтӑн! Валери пӗртте сан пек марччӗ, нихҫан ҫапла улахсем тӑрӑх сӗмҫӗрлене юличчен ҫӳремен, каҫсерен кӗнеке тытса ларма юрататчӗ,— пӑшӑрханса каларӗ амӑшӗ.— Никам та ятлакан ҫук ҫав сана, никамран хӑрассу ҫук. Кӑшт лӑпланӑн та-ха акӑ, Валери таврӑнсан...

Валерий вилни ялта пуриншӗн те паллӑ ӗнтӗ, анчах ватӑ амӑшӗ ку хыпара ӗненмест. Мӗнле пулсан та, ывӑлӗ чӗрех тесе шутлать вӑл, пӗр-пӗр кун Валерий чип-чиперех кил алӑкне яри уҫса кӗрессӗн туйӑнать ӑна, ҫавӑнпа алӑк сасси пулмассерен чӗри кӑртах сикет.

— Килет пуль те-ха ҫӗнӗ ҫулсем тӗлнелле, тӗлӗкне те куртӑм,— терӗ амӑшӗ, хӑйӗн яланхи сӑмахне пуҫласа.— Сахал-и унашкал хыпар-хӑнарсӑр ҫухалса пурӑннӑ салтаксем? И-и, тем чухлех! Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче нумайӗшин «вилнӗ хучӗсем» килкелерӗҫ те, кайран хӑйсем те сывах таврӑнчӗҫ. «Юлташӗ ҫырса янӑ», теҫҫӗ. Ҫырма вӑл тем те ҫырма пулӗ. Хут чӑтать, тенӗ. Ҫав хунав юман пек ҫирӗп каччӑ ӑҫта ҫухалтӑр? Шывра та путас ҫук, вутра та ҫунас ҫук!

Карчӑк пӗрехмай калаҫать, халӗ вӑл тем вӑхӑтчен кӗнекине хупмасть ӗнтӗ.

— Сурӑмварти Петюк та тупӑнчӗ, ав, нумай ҫул хушши пӗр хыпар-хӑнарсӑр ҫухалса пурӑннӑччӗ,— вӑл арӑмӗ пирки тарӑхнипех хут ҫырман, тетчӗҫ пулас та-ха... Тата ҫав... «Малалла» колхозра пӗр салтак хӑмӑр Валери пурӑннӑ ҫӗртенех, Китай ҫӗрӗнченех килнӗ, теҫҫӗ, хушамачӗ Саланӑх, терӗҫ-и... Ҫавӑн патне ҫитсе калаҫса пӑхас пулать, тен, вӑл шӑпах Валерие курнӑ-илтнӗ ҫын пуль...

«Саланов? А-а, пасӑр хӗрсем ун ҫинчен калаҫрӗҫ пулмалла», шухӑшларӗ Коля. Вӑл шалти пӳлӗме кӗчӗ те алӑка тачах хупса хучӗ,—амӑшӗн хурлӑхлӑ сасси пурпӗр илтӗнет... Коля ҫутӑсӑрах хывӑнса выртрӗ...

Ҫук, куҫ хупсан та ыйхӑ килмест!

Коля сиксе тӑчӗ те стена ҫумӗнчи включателе пӑрчӗ—хӗрлӗ абажур витӗр пӳлӗме кӗрен тӗс ҫапрӗ.

Ҫыру сӗтелӗ ҫинчи хура рамкӑра Валерий сӑнӗ. Миҫе ҫӗр хут тытса пӑхман-ши Коля ҫак сӑнӳкерчӗкне? Тӗлӗкре те пиччӗшне ҫак сӑнӳкерчӗкӗ ҫинчи пекех курать вӑл: Валерин гимнастерка ҫухи айӗнчен шап-шурӑ ҫуха курӑнать, гимнастеркине сылтӑм хулпуҫҫи тӗлӗнчен пуля шӑтарнӑ пулас: питӗ тирпейлӗ пӗчӗк саплӑк лартнӑ; Валерий хӑех сапланӑ ӗнтӗ, килте чухнех тем ӗҫе те пултаратчӗ... Тӗреклӗ хулҫурӑмлӑ гвардеец хаваслӑн кулса ларать... чӗрӗ пекех... ҫавар уҫса сӑмах хушас пек...

Коля чылайччен пиччӗшӗн сӑнӳкерчӗкӗ ҫинче пӑхса тунсӑхларӗ, унтан сӗтел сунтӑхӗнчен икӗ конверт туртса кӑларчӗ: пӗри — тӑват кӗтеслӗ те хулӑн, тепри — виҫ кӗтеслӗ те ҫӳхе; иккӗшӗ те хуралса, ҫӗтӗлсе пӗтнӗ, адресӗсем те палӑрми пулнӑ. Ку конвертсем ӑшӗнчи ҫырусене Коля пӑхмасӑрах калама пӗлет пулин те, кӗҫӗр, чӗре ҫуннӑ чух, вӗсене тепӗр хут алла илчӗ. Малтан пысӑк конвертне уҫрӗ — ун куҫне шӑрҫа пек илемлӗ ҫырпа йӗркесем курӑнса кайрӗҫ.

«Хӗвел пек хӗрӳллӗ салам сана, Валерий!

Мӗнлерех пуҫласа, мӗн ҫырам-ши хаман пӗрремӗш ҫырура! Ҫырма лариччен тем чухлех ҫырассӑн туйӑнатчӗ, халӗ ак ним ҫырма та пӗлместӗп. Сан пата тем пысӑкӑш салам... уй хапхинчен кӗрейми салам яратӑп! Тен, эсӗ ку хута ялта мар, вӑрҫӑ хирӗнче илӗн, тен, унти ялсенче уй хапхисем те ҫук пуль...

Ирӗн-каҫӑн тунсӑхласа санран ҫыру кӗтрӗм, миҫе ҫул кӗтрӗм — ҫапах ҫырмарӑн, Валерий, виҫ сӑмахпа та пулин ху ҫинчен пӗлтермерӗн. Кашни каҫах ирхине санран ҫыру илме ӗмӗтленсе ҫывӑрма выртаттӑм, почтальон хамӑр пата пымассерен чӗрем ҫурӑлса каясла сикетчӗ. Такамран та ҫыру килетчӗ, анчах чи кӗтни ҫукчӗ. Ҫырмарӑн ҫав эсӗ, Валерий, те ытлашши мӑнкӑмӑллӑ пултӑн, те ҫырма вӑхӑт ҫукшӑн? Ҫавӑнпа пирӗн хушшӑмӑрта йӑлтах ҫакӑн пек пулса тухрӗ пуль...

Мӗн ачаран сана кӑмӑлласа ӳсрӗм. Ун чухне эпӗ санпа пӗр партта хушшинче ларма та вӑйӑ картинче юнашар тӑма ҫеҫ ӗмӗтленеттӗм, анчах ҫав пӗчӗк телей те мана тивӗҫместчӗ: эсӗ яланах манран ютшӑнаттӑн, Ленӑпа ҫӳреттӗн. Ӳсерехпе эпир пушшех сайра тӗл пулма пуҫларӑмӑр, тӗл пулсан та эсӗ манпа питӗ сахал калаҫаттӑн: иксӗмӗр те пӗр-пӗринчен вӑтанаттӑмӑр. Темшӗн-ҫке пире пурпӗрех мӑшӑр вырӑнне хуратчӗҫ. Ача чухнех Лена, ман ҫине ҫиленсен: «ай, намӑс! намӑс! Валькӑпа варлӑ!» тесе виртлетчӗ; ӳсе ҫитсен те вӑл мана сӑмах майӗн сан ятупа тӗртсе илме юрататчӗ. Эпӗ ӑна вара е вӑрҫаттӑм, е илтмӗш пулаттӑм, чӗремре хам ҫапах савӑнаттӑм тата. Пӗр шутласан — кулӑшла та, кӳренмелле те ӗнтӗ.

Эсӗ ҫара кайма повестка илнине пӗлсен, эпӗ ҫӗрӗпе те куҫ хупаймарӑм, сан ҫинчен шухӑшласа пуҫ ҫаврӑнакан пулчӗ. Тепӗр кунне вара, уй хапхинче санпа алӑ парса уйрӑлнӑ чух, ним калама пӗлмерӗм, каҫхине шухӑшласа хунӑ сӑмахсем те таҫта кайса кӗчӗҫ. Айван мар-им, иментӗм халӑх умӗнче санпа калаҫма, хӑвна валли ятарласа хатӗрленӗ тутӑра та хӑйса параймарӑм. Ҫавӑн пек ӗнтӗ эпир, чӑваш хӗрӗсем, именчӗк. Тем пулчӗ мана ун чухне, юлашки самантра, сан ҫине пӑхрӑм та, чӗлхем ҫӗтрӗ, эсӗ те пӑхса ҫеҫ илтӗн, ҫур сӑмах та пулин каламарӑн. Пӗрпӗрне ахалех ӑнлантӑмӑр пуль, терӗм. Кайран тин, аллунти кӑвак тутӑр ҫул кукринче юлашки хут варкӑшнине курсан, хам ним те каламаншӑн хӑраса ӳкрӗм. Сан хыҫӑнтан пӗчӗк ача пек макарса чупса пыма, сана хуса ҫитсе хам юрату ҫинчен калама та хатӗрччӗ эпӗ — ман умрах укӑлча хапхи хупӑнчӗ те пире пӗр-пӗринчен уйӑрчӗ...

Унтанпа пирӗн пӳрт умӗнчи хурӑнсем тӑваттӑмӗш хут ҫулҫӑ тӑкаҫҫӗ ӗнтӗ.

Сайра хутра эсӗ Лена патне ҫыркаланттӑн, вӑл мана кашни ҫырунех вулаттаратчӗ. Сан хута алла илсенех, вулама тытӑниччен малтан, хам ята шыраса, ҫиелтен кӑна пӑхса тухаттӑм, анчах эсӗ пӗр ҫырура та ман ята асӑнман. Хамӑн пуҫласа ҫырма хӑюлӑх ҫитеймерӗ: тем шутлӑн, терӗм. Лена патне янӑ ҫырӑвусене вулаттам та — пӗрре хурланаттӑм, тепре савӑнаттӑм: эсӗ ун патне юлташла ҫеҫ ҫыраттӑн, пӗр сӑмахӗ те юрату ҫинчен систерместчӗ... (Ан тирке ӗнтӗ, мӗнпур вӑрттӑн шухӑшӑмсене йӑлтах уҫса паратӑп). Эсӗ Германире ҫапӑҫнӑ чух санран ҫырусем час-часах килместчӗҫ пулас, аннӳ мана курсан, яланах сан ҫинчен хурланса калаҫатчӗ, эпӗ те унпа пӗрлех саншӑн пӑшӑрханаттӑм. Эсӗ аманнӑ тенине илтсен те ҫӗр ҫывӑраймарӑм. Хӗвеланӑҫӗнче фашистсене ҫӗнтернӗ хыҫҫӑн, хамӑр станци урлӑ хӗвелтухӑҫнелле кунӗн-ҫӗрӗн ҫар эшелонӗсем иртме пуҫларӗҫ. Ҫӗнтерӳҫӗсем Берлинтан таврӑнаҫҫӗ. Хамӑр ялсем те килкелерӗҫ. Нумаях пулмасть-ха, Викторпа Павӑл килсе ҫитрӗҫ. Иккӗшӗ те питӗ маттурланса кайнӑ. Кӑмӑлӗсем вара ӗлӗкхиллех, улшӑнман: Виктор халӗ те сахал калаҫать, Павӑлӗ ҫаплах шӳт тума, ытлашширех калаҫма юратать. Халӗ колхозрах ӗҫлеме вырнаҫрӗҫ-ха. Каҫсерен иккӗшӗ те пирӗн урама кусӑспа анаҫҫӗ. Маруҫпа Таруҫ вӗсем килнӗренпе тепӗр хут ҫунат хушрӗҫ, кӑшт кӑна вӗҫсе каймаҫҫӗ... «ҫич юталла». Эпӗ вӗсен савӑнӑҫне куратӑп та, хам пӗччен ҫӳренишӗн кӳренме те пӗлместӗп. Тен, мана хам юратнӑ каччӑпа ҫӳреме пӳрмен те пуль. Тӗрӗссипех калас пулсан, эсӗ пур ҫинчех пӗр каччӑпа та ҫывӑх курса калаҫассӑм килмест (ҫӳрес текеннисем нумай). Вӑйӑра-и, ӗҫре-и — яланах эсӗ манпа пӗрле. Каҫ выртсан та сана тӗлӗкре куратӑп, ир тӑрсан та чӗремрех тытатӑп.

Валерий, хӑҫан тӗл пулӑпӑр-ши эпир? Пӗр вӑхӑтра курнӑҫма май та пурччӗ, пурпӗрех телей пулмарӗ. Ху Берлинтан хӗвелтухӑҫне иртсе кайнӑ чух телеграмма ярсан, Коля шӑллу станцӑна тухса чупрӗ; пасар кунӗччӗ те, эпӗ те вара, пасара каям пек туса, унран юлмарӑм. Пӗр талӑк сана кӗтрӗмӗр, ҫӗрӗпех перрон тӑрӑх утрӑмӑр, темиҫе эшелон та иртрӗ, темиҫе пин салтак та иртрӗ — эсӗ ҫеҫ курӑнмарӑн. Ахаль ҫавнашкал, телейӗм ҫук пуль тетӗп: эпир сана шыранӑ хушӑра эс те пире тӑрӑшсах шыранӑ-мӗн, анчах пасар пек халӑх хушшинче пӗр-пӗрне асӑрхайман, эшелонӗ те сирӗн вун минут пек ҫеҫ тӑчӗ. Поезд тапранса кайсан тин сана куртӑмӑр: эсӗ чи кайри вагон тормозӗ ҫинче тӑрса пыраттӑн: гимнастеркӑпа, ҫарапуҫӑн, ҫӳҫӳ ҫилпе варкӑшатчӗ... Кольӑпа иксӗмӗр те сана ятпа кӑшкӑрма тытӑнтӑмӑр, анчах кӑшкӑракан-йӗрекен пирӗнсӗр те нумайччӗ,— эсӗ каллех пире илтеймерӗн, асӑрхаймарӑн, ҫаплипех кайрӑн... Вара, ҫав тери чун кӳтсе килнипе, эпӗ вокзал карти ҫумне таянсах кӑшкарса макӑрма тытӑнтӑм. Ман тавра халӑх пухӑнса тӑчӗ... Коля мана аран ҫеҫ ҫынсем хушшинчен ҫавӑтса тухрӗ...

Халӗ ман телейӗм, ман савнӑҫӑм вӗҫсӗр!!!

Ӗнер уйра тырӑ выраттӑмӑрччӗ, кантӑрла тӗлӗнче почтальон мана ҫыру тыттарчӗ, адресне курсанах савӑнса ниҫта кайса кӗрейместӗп, канса выртакан Ленӑна та чуптуса вӑратрӑм.

— Мӗн пулчӗ сана, ухмаха ертӗним?—тет вӑл, эпӗ ним калаймастӑп. Пӗрмай сан ҫырӑва чуптӑватӑп, вулама май ҫук — куҫӑмсенчен куҫҫуль шӑпӑртатать. Миҫе хут вуларӑм-ши сан кӗске ҫырӑвна!.. Яланах имемсе ҫӳренӗ-

ҪУРКУННЕ. Ҫамрӑксен чунӗсем Атӑл хӗрринеллех туртӑнаҫҫӗ. Акӑ Чӑваш педагогика институчӗн студенчӗсем пӑр кайнине сӑнаса тӑраҫҫӗ.

П. Ефремов фотоӳкерчӗкӗ.

екер, ачаранпах хам юратăва санран та, ҫынсенчен те пытарса пурăннăскер, паян хам телей ҫинчен тĕнче илтмелле кăшкăрăттăм! Эпĕ сана курма станцăна пыни ҫинчен Коля ҫырса пĕлтермен пулсан, эсĕ ман пата ҫырман та пулăттăн-и, тен? Ҫĕр хут тав сана, Валерий, мана ырă сунса, юратса ҫырнăшăн!

Ҫыру икĕ эрне хушши килнĕ, ҫулĕ ытла инҫе ҫав. Астăватăн-и, улттăмĕш класра вĕреннĕ чух карттă ҫинче Маньчжури ăҫтине тупаймарăн та, вара учитель мана чĕнсе кăларчĕ — хам кăтартрăм... Халĕ сана шăпах ҫав Маньчжури тăвĕсем урлă ҫуран каҫма тиврĕ. Йывăр пуль ĕнтĕ, ăнланатăп; ҫапах тӳс, Валерий, хамăр яла ырă ятпа таврăнма тивĕҫлĕ пул. Самурайсене хăвăртрах ҫĕнтерсе таврăнăр! Кунта сана питĕ хытă кĕтетпĕр. Ху юлташна та, юрăсем ҫыракан музыканта, хăнана илсе кил — лайăх пăхса ярăпăр. Ăна та салам кала. Хăш енчи чăваш вăл?

Ҫыру ҫыпăҫуллах пулманнишĕн каҫар, паян иртенпех ҫумăр тăкать, уя тухмарăмăр, эпĕ кунĕпех ҫыру ҫыратăп, мĕн шутланине йăлтах ҫыртăм. Ял хыпарĕсене мансăрах пĕлтерчĕҫ пуль тетĕп, ҫавăнпа ҫырмастăп.

Ку вăхăтчен килтех пурăнтăм, колхозра лайăх ĕҫленĕшĕн мана темиҫе премии те пачĕҫ. Тепĕр эрнерен Шупашкарта, ялхуҫалăх институтĕнче вĕренме тытăнатăп. Зоотехник пулас килет...

Валерий, эсĕ ман ҫырăва вуласанах вăхăт тупса хирĕҫ ҫырма тăрăш, текех ытлашши кĕттерсе ан асаплантар ĕнтĕ! Пирĕн калаҫасси те ҫыру вĕҫне анчах юлчĕ, вăрçă пĕтмесĕр тĕл пулаймăпăр. Сан ҫырăвна эпĕ чун пек кĕтетĕп, унтан та ытларах хăвна кĕтсе пурăнатăп. Ху яла таврăнас чух ман пата телеграмма яр — эпĕ сана Автан ҫырми тĕлне тухса кĕтсе илĕп... Тата калама астуман: паян эпĕ шăпах ҫирĕм иккĕ тултартăм.

Сана ырлăх-сывлăх сунатăп. Сывă пул, нихҫан манми савниҫĕм! Эсĕ мана мансан та, эпĕ сана манас ҫук. Ҫыр! Ҫыр! Ҫыр! Тепĕр хут сана хам юрату пек вĕри салам, ҫич хут салам!

Салампи.

1945 ҫулхи августăн 23-мĕш кунĕ».

Коля йывăррăн сывласа илчĕ, чылайччен шухăша кайса ларчĕ, вара ҫырăва тирпейлĕн тăваткăлласа хуҫлатрĕ те каллех канверт ăшне чиксе хучĕ.

«Кама кирлĕ ĕнтĕ халь ҫак манăҫа тухнă ҫыру? Кам вуласа савăнĕ ăна? Хăвăрт сивĕнчĕҫ иккен «хĕвел пек вĕри саламсем»...

Коля тепĕр канвертне уҫрĕ те чуна ҫӳҫентерекен сăмахсене вуламасăрах аса илчĕ:

«...Тăван ҫĕршывшăн паттăррăн ҫапăҫса пуҫне хучĕ... Ăна пĕр ҫулĕ ту тăррине пытартăмăр... Ун ҫумĕнче пулнă хутсене йăлтах киле ярса паратăп... Старший сержант А. Алмазов. 1945 ç. Сентябрĕн 2-мĕш кунĕ».

Коля ик аллипе те пуҫне ярса тытрĕ.

— Валерий вилсен, тепĕр куннех вăрçă чарăннă! Тепĕр куннех Япони парăннă!..

Каллех ҫар эшелонĕсем хĕвелтухăҫĕнчен хĕвеланăҫнелле иртме тытăнчĕҫ: ҫĕнтерӳҫĕсем Порт-Артуртан таврăнаççĕ. Анчах Валерий киле нихҫан та килес ҫук ĕнтĕ. Амăшĕ ҫеҫ чунтанвартан юратнă ывăлне ирĕн-каҫăн кĕтсе пурăнать.

Салампи!.. Ытла ир мантăн иккен эсĕ хăвăн савнине!

(Малалли пулать).

ЧĂВАШСЕН ЯЛХУҪАЛĂХ ИНСТИТУЧĔН ҪУРТНЕ ТУНĂ ҪĔРТЕ



Шупашкарта, Карл Маркс урамĕпе Ярославски урам тата Кузнечнăй урампа Дзержинский урам хушшинчи кварталта Чăвашсен ялхуҫалăх институчĕн ҫуртне тăваççĕ. Институтăн вĕренӳ корпусĕ 57 пин кубла метр калăпăш (ҫĕнĕрен тăвакан Педагогика институчĕн ҫуртĕнчен кăшт пысăкрах) пулать, вăл—тăватă хутлă ҫурт — Карл Маркс урамĕпе Кузнечнăй урамсем тăрăх вырнаҫса тухать, ҫурта кĕмелли чи пысăк алăк — ҫав урамсен кĕтесĕнче пулать. Ҫак кĕтесре тăхăр хутлă, сакăр кĕтеслĕ, 60 метр ҫӳлĕш башня пулмалла, ун ҫине вырнаҫтарса лартнă шпиль тăрринче вара хĕрлĕ ялав вĕлкĕшĕ.

Дзержинский урампа Ярославский урам кĕтессинче студентсем валли, Карл Маркс урамĕнче виҫĕмҫул туса лартнă ҫурт пекех, тепĕр общежити тăваççĕ, икĕ общежити хушшинче профессорсемпе преподавательсем пурăнмалли ҫурт пулать. Кунсăр пуҫне, ҫак кварталтах институт валли тĕрлĕрен урăх ҫуртсем те тăваççĕ.

Вĕренӳ корпусĕнче 350 ҫын валли актовăй зал, спорт залĕ, библиотека, аудиторисем, кабинетсем, лабораторисем пулаççĕ. Институтăн ҫĕнĕ ҫуртĕнче икĕ факультет студенчĕсем 625 ҫын вĕренмелле.

Институт ҫурчĕн проектне Е. Калашникова архитектор туса хатĕрленĕ. Ку ҫуртпа Педагогика институчĕн ҫуртне туса пĕтернĕ хыҫҫăн Советсен ҫурчĕ умĕнче площадьри архитектура ансамблĕ пурнăҫа кĕрсе ҫитет.

А. Родионов ӳкерчĕкĕ.
1954 ҫулхи январь.

ТУЛĂ МИХХИ

Ача-пăча калавĕ

Валентина АНДРЕЕВА

М. Жолобов ӳкерчĕкĕсем.

1. ÇЫРУ

Шкулăн аялти хутĕнче, урока кĕме чĕнсе, шăнкăрав янăраса кайрĕ. Пысăк коридор ик-виçĕ минут хушшинче пушанса та юлчĕ. Пур çĕрте те шăпăртах пулчĕç, классенчен кăна пĕр тапхăр вĕллери пыл хурчĕсем пек сĕрлени илтĕнсе тăчĕ. Учительсем, хăйсен пӳлĕмĕнчен тухса, классене утрĕç.

Çав вăхăтра 6-мĕш класра акă мĕн пулса иртрĕ.

Ваня Леонтьев класа чи юлашкинчен хашкаса чупса кĕчĕ те, учитель кĕме ĕлкĕрейменнине кура, хыттăн кăшкăрса:

— Çыру! Çыру! Пирĕн отряда çыру килнĕ! — аллинчи конвертне çӳлелле çĕклесе кăтартрĕ.

— Мĕнле çыру?

— Камран?—харăс-харăссăн ыйтрĕç ачасем.

— Аслă вожатăй Нина Петровна пачĕ.

Ачасем, партă хушшинчен тухса, Ваня Леонтьева çавăрса илчĕç. Чĕвен тăрса, пĕр-пĕрин пуçĕсем урлă аллисемпе кармашаççĕ. Пурте çак тĕлĕнтермĕш çырăва тытса пăхасшăн.

«...Володя Дубинин ячĕпе хисепленекен пионер отрядне» тесе çырнă конверт çине.

— Ăçта-ха, ăçта, кăтарт-ха!

— Эпĕ хам та вуламан, пĕлместĕп.

— Пар Маюка! — терĕ ачасенчен тахăшĕ.

— Маюк вуласа патăр! Маюк!

Ваня Леонтьев çырăва отряд совечĕн председательне Маюка тыттарчĕ.

Шăпах çав вăхăтра класа çамрăк учительница Вера Григорьевна пырса кĕчĕ. Ачасем пурте партă хушшине кĕрсе ларчĕç. Ботаника урокĕ пуçланчĕ. Маюк çав вăхăтра та пулин çырăва пăхса тухмасăр чăтаймарĕ. Укасси шкулĕнчи пионерсем Вăрманкас пионерĕсене майăн иккĕмĕшĕнче хăйсем патне уява чĕнеççĕ иккен. Шăп вуникĕ сехетре карнавал пулать тесе пĕлтереççĕ. Маюк çырăва чиксе хучĕ те урок итлеме тытăнчĕ.

— Паян эпир,—терĕ учительница,— ӳсентăрансем аталанни çинчен аса илĕпĕр. Кам каласа парас тет? — ыйтрĕ Вера Григорьевна, ачасем çине пăхса.

Учительсем мĕншĕн пурте витĕр кураççĕ-ши? Ăçтан чухлаççĕ вĕсем сан шухăшна? Акă хальхинче те:

— Мария Волкова, доска патне!— чĕнчĕ Вера Григорьевна.

Маюк партă хушшинчен тухрĕ те доска патнелле утрĕ. Юрать-ха, учительница хăйĕн ыйтуне тепĕр хут каларĕ. Маюк вара чӳрече умĕнчи калча чӳлмекĕсене иккĕшне те сĕтел çине илсе лартрĕ. Пĕр чӳлмекри калча çӳлĕ ӳснĕ. Чӳлмекĕнчи хăма татăкĕ çине: «Яровизациленĕ вăрлăхран шăтнă»,— тесе çырнă. Тепĕр чӳлмекĕ çинчи калчасем лутра. Кунта: «Яровизацилемен вăрлăхран шăтнă», тенĕ.

Маюк хăй умĕнчи калчасене мĕнле акса ӳстерни çинчен каласа пачĕ.

Ваня Леонтьев хыçалти партă хушшинче ларать. Урокра мĕн каланине вăл итлесех те каймасть. Маюк партă хушшине ларсанах, вăл унтан çыру ыйтса илчĕ те вуласа тухрĕ. «Апла иккен, унта эпĕ те каятăп», тесе пăшăлтатрĕ вăл. Унтан илтĕнмеллерех мăкăртатрĕ:

«Эх, çапла кулăшларах та пулать!» терĕ вăл. Вара хăйпе юнашар ларакан Алеша Гришина чавсипе тĕксе илчĕ:

— Алеша, Алеша, эсĕ мĕнле костюм тăхăнас тен?

— Мĕн мĕнле костюмĕ? — тĕлĕнсе ыйтрĕ Алеша.

— Ара, карнавал пулать-çке вĕсен...

Ваня ăна çыру çинчен каласа пачĕ.

— Ун çинчен шутламан-ха,—терĕ Алеша.

— Рыцарь пулас мар-и, тетĕп эпĕ?

Алеша кăшт çеç пĕрĕхтерсе кулса ямарĕ. Вăл хăй куç умĕнче Ваньăна чăн та рыцаре курнă пек пуçне каçăртса пăхрĕ. Ваня шухăша кайрĕ. Хăй вуланă кĕнекери геройсем пĕрин хыççăн тепри ун асне килеççĕ. Акă вăл сасартăк Перро çырнă «Кот в сапогах» кĕнекери хуçине ырă тăвакан кушака асне илчĕ.

— Тупрăм! — терĕ вăл, куçĕсене хаваслăн йăлкăштарса.

— Мĕн тупрăн?

— Пĕлетĕн-и, эпĕ кам пулăп унта?

— Эсĕ-и? Ваня...

— Чим, эс ăнланмарăн-ха, эпĕ атă тăхăннă кушакла тумланатăп.

— Ну, кулăшла та пулать.

Ваня карнавалта хăй мĕнлерех тумланассине тупнăшăн савăнса ларчĕ. Унăн пуçне тĕрлĕ-тĕрлĕ шухăш кĕрет.

«Кушакла курăнакан маскă тумалла иккен. Сăмса аяккинелле шăрт пек тăраткаланса тăракан мăйăх пултăр. Пуçа улăм шлепке тăхăнăп та чи çӳле автан хӳри тĕкне чиксе ярăп. Хыçа вăрăм та лапсăркка хӳре çакăп. Кулăшла пулать вĕт! Пурте ман çине пăхĕç. Кам та кам, тейĕç».

Ваня тутисем хăй сисмесĕрех йăл кулса ячĕç. Çак вăхăтра Вера Григорьевна Ваня çине пăхрĕ:

— Ваня, кала-ха: кĕрхи тулă ӳссе аталаннă чухне мĕнле икĕ тапхăр пулать?

Ваня ăна илтеймерĕ, çавăнпа пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Класри ачасем ун енне çаврăнса пăхрĕç. Вара Алеша Гришин Ваньăна чавсинчен кăлт тĕртсе илчĕ. Ваня, çывăрнă çĕртен вăраннă пек, ним те ăнланмарĕ. Куçне-пуçне чарса кăнкан пăхкаларĕ.

— Ваня, кала-ха, мĕнле ыйту панăччĕ эпĕ сана?—ыйтрĕ учительница. Ваня ура çине сиксе тăчĕ.

— Ыйту? Э-э-э... — текелерĕ Ваня, аса илнĕ пек пулса.

Çук, Ваня нимĕнле ыйту та илтмен. Юлташĕсенчен иментнипе вăл пуçне аялалла усрĕ. Хăй хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе кайрĕ, питĕнчен хаāь-халь юн пĕрĕхсе тухас пек.

— Урок итлемесĕр ларатăн. Ну-ка, Гришин, эпĕ мĕнле ыйту патăм, тепĕр хут кала-ха. Ваня илттĕр,— терĕ учительница.

Алеша ура çине тăчĕ.

— Кĕрхи тулă ӳссе аталаннă чух мĕнле икĕ тапхăр кирли çинчен калама хушрăр.

— Тĕрĕс. Лар, Гришин.

Ваня Леонтьев хыпăнса ӳкрĕ. Вăл, хăйĕн ятне ярас мар тесе, хăвăрт-хăвăрт кала пуçларĕ: кĕрхи тулă ӳснĕ чух икĕ тапхăр пулать. Пĕрремĕшĕ — яровизаци тапхăрĕ; тепри — çутă тапхăрĕ. Малтанхи тапхăрта кĕрхи тулла сивĕ кирлĕ. Иккĕмĕш тапхăрта вара ăшă температура, хĕвеллĕ вăрăм кун кирлĕ.

Çакăн çинчен каланă май ăна шкул пахчинче звенори пионерсемпе пĕрле ĕçлени асне килчĕ. Пĕчĕк хирте пĕр тикĕс ӳснĕ туратлă тулă пучахĕсем чечек çыххи пек курăнатчĕç. Ачасем çав тулла сăнаса пĕлес тенипе акнăччĕ.

Ваня туратлă тулла мĕнле акса илни

ҫинчен каласа пара пуҫлапине хӑй те асӑрхамарӗ.

— Иртнӗ ҫул эпир пӗр туратлӑ пучахран вӑтамран 175 тулӑ пӗрчи туса илнӗччӗ. Пӗр пучахран 199 пӗрчӗ шӗкӗлчерӗмӗр те, пӗрчисем пурте шултраччӗ. Ҫав пӗрчӗсене эпир уйрӑм пухса хутӑмӑр, кӑҫал акса татах сӑнавлӑ ӗҫсем тӑватпӑр, — терӗ Ваня.— Туратлӑ тулӑ пӗрчи пирӗн пӗлтӗр мӗн пурӗ те 25 пӗрчӗ ҫеҫчӗ. Эпир ӑна яровизацилерӗмӗр, тӑпрана лайӑх кӑпкалатрӑмӑр, вара удобрени сапнӑ ҫӗре 6 сантиметр тарӑнӑшне акрӑмӑр. Пӗр пӗрчӗпе тепӗр пӗрчӗ хушшине 50 сантиметр хӑвартӑмӑр. Акса хӑварсан, ҫӗр питне хӑмапа хытартӑмӑр. Шӑтса тухсан, калчасем хушшине кӑпкалатрӑмӑр, ҫумне ҫумласах тӑтӑмӑр. Уяр кунсенче шыв сапрӑмӑр. Искусственнӑй майпа шӑркалантартӑмӑр. Кӑҫал татах интереслӗ опытсем тӑватпӑр-ха. Тулӑ акмалли пӗчӗк хирте юр хывтартӑмӑр. Ҫулӗ кӗртсенчи юр ирӗлсе халь ҫӗре сӑрхӑнать.

Ачасем Ваня сӑмахӗсене чаплӑ юмах итленӗ пек итлеҫҫӗ. Хӑйсем ҫапла ӗҫленӗ-ҫке! Ӑнаҫлӑ ырӑ ӗҫ пурне те савӑнтарать.

Ваня куҫӗсем хӗпӗртенипе йӑлтӑртатаҫҫӗ. Хӑй сӑмахне пӗтернӗ май, Ваня учительница ҫине пӑхать. Малалла та тем каласшӑнччӗ вӑл, анчах калас тенӗ сӑмахсем пӗтӗмпех аса килмерӗҫ. Вӑл калама чарӑнчӗ.

— Лар, Леонтьев. Урока эсӗ лайӑх пӗлетӗн. Анчах малтан итлесе лармарӑн. Ҫавӑнпа сана «4» лартсан та юратчӗ те, пӗррелӗхе асӑрхаттарӑп ҫеҫ,— терӗ учительница.

Ачасем, ҫакна илтсен, пӗр-пӗрин ҫине кӑмӑлсӑр пӑхкаласа илчӗҫ.

— Ну, юрӗ ӗнтӗ. Ӳлӗмрен апла пулмӑн. Кӳр дневникна.

Учительница Ваня дневникӗ ҫине «5» ҫырса хучӗ.

Ваня хӑй вырӑнне кайса ларма ӗлкӗрчӗ кӑна, Алешӑна каллех чавсипе тӗртсе илчӗ.

— Пӗлетӗн-и, Алеша? — терӗ вӑл шӑппӑн,—эпӗ тинех тупрӑм! Тупрӑм, тетӗп!..

— Мӗн тупрӑн?

— Маскарад костюмне!

— Атӑ тӑхӑннӑ кушак пек тумланатӑн-и?

— Ҫук. Апла мар! Тӗлӗнмелле чаплӑ тум пулать!

— Кала эппин.

— Э, ҫук, юрамасть.

Коридорта часах юлашки урок иртнине пӗлтерсе, шӑнкӑрав янӑраса кайрӗ. Урок пӗтрӗ. Классен алӑкӗсем яриех уҫӑлчӗҫ те унтан, ҫӑл куҫӗнчен шыв палкаса тухнӑ пек, ачасем кӗрлесе тухрӗҫ. Пӗр 6-мӗш класран ҫеҫ Вера Григорьевнӑсӑр урӑх никам та тухмарӗ.

2. ЧАПЛӐ СӖНӲ

Класра хӑйсем ҫеҫ юлнӑ ачасем савӑнӑҫлӑн шавлама тытӑнчӗҫ. Хӑнана каяс пирки кашни хӑй шухӑшне калама тӑрӑшать. Вӗсем патне класс руководителӗ Сергей Гордеевичпа отряд вожатӑйӗ 9-мӗш класра вӗренекен Галя Воронцова кӗчӗҫ. Ачасен пухӑвӗ пулассине вӗсене Маюк пӗлтернӗ иккен. Пуху пуҫланчӗ.

Маюк отряда ҫыру килни ҫинчен, туссем хӑнана чӗнни ҫинчен каласа пачӗ. «Ман шутпа, пирӗн вӗсем патне каймалла пулӗ. Вӗсем мӗнле вӗреннине пӗлӗпӗр, мӗнле ӗҫленине те пӑхӑпӑр»,— терӗ вӑл.

— Калама ҫӑмӑл. Экзамена хатӗрленмелли вӑхӑт-ҫке! — илтӗнчӗ вырӑнтан пӗр сасӑ. Ҫав сӑмаха тепри пӳлчӗ:

— Мӗнех вара? Уяв кунӗ вӗт? Кайса ҫеҫ килетпӗр.

— Сӑмах пар-ха,—тӳсеймерӗ ҫамрӑк спортсмен, шкул чемпионӗ Юра Матвеев. — Каятпӑр. Ку вӑл пирӗн кӑҫал ҫурхи чи малтанхи поход пулать. Вӗсемпе ӑмӑртса та пӑхӑпӑр. Пирӗншӗн усӑллӑ пулать. Хамӑрӑн спорт ӑсталӑхне тӗрӗслӗпӗр. Ку вӑл, спартакиадӑна хатӗрленнӗ май, хамӑра та усӑллӑ пулать.

Калакансем нумай пулчӗҫ. Тепри тата начар вӗренекенсене хӑнана илсе каяр мар, терӗ. «2» илнӗ ачасем пырсан, тен, лешсем вӗренӳ ҫинчен каласа пама ыйтсан, хӗрелмелле ҫеҫ пулать пирӗн, терӗ.

Ҫак сӑмахсене илтсен, Коля Яковлев тӳсеймерӗ:

— Пирӗн класра ытла начар вӗренекенсем ҫук.

— Санӑн математикӑпа «2» мар-и-ха?

— «2» мар! Вӑл кӗркуннеччӗ. Халӗ «3», тӑрӑшсан, эпӗ «4» та илетӗп.

Коля сӑмахӗнчен пурте кулса ячӗҫ.

Сергей Гордеевич ачасен шухӑшне мухтарӗ. Кашниййӗнех лайӑх отметкӑсем пулсан хӑнара та кӑмӑллӑ пулать. Отряд чысӗ таса пулсан, никам умӗнче те пит-куҫ хӗрелмест.

Ачасем умне Галя Воронцова тухрӗ.

— Май уявӗччен вӑхӑт пур-ха, халӗ апрель пуҫламӑшӗ ҫеҫ,—терӗ вӑл.—Вӗренӳри кӑлтӑксене пӗтерме май пур. Пурин те тӑрӑшса ҫеҫ вӗренмелле. Анчах хӑнана пушӑ алӑпа каймаҫҫӗ. Вӗсем валли хамӑр ӗҫе кӑтартакан парне илсе каймалла.

Ачасем шухӑша кайрӗҫ. Чӑнах та, мӗн илсе кайма пулать-ши?..

Самай шухӑшласа тӑрсан, вожатӑй малалла иртрӗ:

— Макет тумалла пирӗн, вӑт лайӑх та пулать.

— Мӗнле макет?—темиҫен пӗр харӑс ыйтрӗҫ ачасем.

— Шкул пахчине, хамӑрӑн опытлӑ хире шыв сапассине механизацилен̆ӗ-и эпир? — аса илтерчӗ вожатӑй.

— Чӑнах та!

— Тӗрӗс! Тӗрӗс!..

— Ҫакна макет тума пултаратпӑр вӗт хамӑр туссем валли?

— Пултаратпӑр!

— Шутлӑр-ха, пысӑк пулӑшу паратпӑр эпир вӗсене! Вӗсен те юханшыв шкул ҫывӑхӗнченех иртет.

— Лайӑх макет пулать!

— Тӑватпӑрах кӑна! — савӑнӑҫлӑн шавларӗҫ ачасем.

Вожатӑй каланине ачасем хапӑл туса йышӑнчӗҫ. Дружинӑри пионерсем иртнӗ ҫуркунне шкул пахчи хыҫӗнчи шӑнкӑртатса юхакан юханшыва пӗвеленӗччӗ. Пӗвере шыв майӗпен тулсах пычӗ. Ешӗл ҫыран хӗррине будка туса лартрӗҫ. Будкӑн виҫӗ енне чӳрече касрӗҫ. Хӗрачасем унта чечек чӳлмекӗсем лартрӗҫ. Пӗверен пуҫласа сӑрт тӑрӑх пахчана ҫитиччен тимӗр пӑрӑхсем вырнаҫтарчӗҫ. Ҫавсем тӑрӑх шыв пырать. Крана пӑрсанах лейкӑна шыв тулать.

... Ачасем хӑвӑртрах ӗҫе тытӑнасса ҫеҫ ӗмӗтленеҫҫӗ. Макет тума йывӑр мар, схема хатӗр.

Вӗсем класран хаваслӑн тухма тытӑнчӗҫ. Пӗр Ваня Леонтьев кӑна хӑйне темӗн ҫитмен пек, пурин ҫинчен те калаҫса татӑлман пек туйрӗ. «Карнавал пулать иккен-ха. Апла маскарад костюмӗ кирлӗ. Мӗнле костюм тумалла-ши?.. Ӑна малтан ыттисен никамӑн та пӗлмелле мар» — шутласа илчӗ вӑл.

3. КӖТМЕН ҪӖРТЕН

Ачасем макет тума пуху иртнӗренпе хыҫҫӑн тепӗр куннех тытӑнчӗҫ. Урoксем пӗтсен, вӗсем шкул мастерскойӗнче хӑма татӑкӗсем касса саваларӗҫ, пӑрасемпе те иесемпе шӑтарчӗҫ, вырнаҫтарма тытӑнчӗҫ.

Пионер отрячӗн совечӗ тӗрлӗ сӑлтава пула халиччен начартарах вӗренекенсене пулӑшма шутларӗ. Ун пек ачасем класра пӗтӗмпе те иккӗн ҫеҫ. Юлхавраххисене хӑйсенех тӑрӑшса вӗренме хушрӗҫ, хӑшӗ-пӗри ҫинчен отрядри стена хаҫатне ҫырса тӑрӑхламалла пулать, терӗҫ. Ҫакӑн хыҫҫӑн ачасем пурте лайӑхрах вӗренме тытӑнчӗҫ. Ӗҫ чиперех пыни вӗренекенсене те, учительсене те савӑнтарать.

Ҫак хушӑра пӗр кӗтмен ҫӗртен пӗтӗм класшӑн инкек сиксе тухрӗ.

Кӑҫал 6-мӗш класа пӗр хӗрача вӗренме кӗчӗ. Вӑл Ирина ятлӑ. Хӑй питӗ лӑпкӑ ҫын. Никама, нимӗнпе кӳрентермест. Ирина мӗн килнӗренпех ӑста вӗренетчӗ. Анчах сасартӑк вӑл икӗ кун хушшинче икӗ двойка илчӗ: пӗрне—

вырăс чĕлхипе, тепĕрне — географипе. Класри ачасем мĕншĕн апла та мĕншĕн капла, тесе тĕлĕнсех кайрĕç. Вара вĕсем Иринăпа отряд советĕнче калаçса пăхма шут тытрĕç. Хĕрачасем Иринăна пулăшма пулчĕç, анчах вăл: мана никам та пулăшмалла мар, терĕ. Урăх калаçасшăн та пулмарĕ.

Çакăн хыççăн тепĕр эрне иртрĕ. Ирина, диктант çырса, каллех двойка илчĕ. Пионерсем вара чăннипех пăшăрханма тытăнчĕç. Лайăх вĕренекен пионер сарткăк начар вĕренме пуçлатăр-ха, епле пăшăрханмăн? Ирина отряда каялла туртать, юрамасть апла, терĕç хĕрачасем. Диктантне илсе, унăн йăнăшĕсем мĕнле майпа пулнине ăнлантарса пама пăхрĕç ăна. Ирина каллех юлташĕсене итлемерĕ. Юлташĕсем Галя Воронцовăпа, вожатăйпа, калаçса пăхрĕç, пирĕн сăмаха итлесшĕн те мар вăл, терĕç вĕсем.

— Иринăн килте пысăк инкек пулнă, — терĕ вожатăй пионеркăсене тепĕр кунхине.—Çавна пула Ирина уроксене сиктернĕ, киле парса янă заданисене те тăвайман. Уроксене сиктернипе ăна халь сирĕн пекех лайăх вĕренсе пыма йывăр. Ăна пулăшас тесен, сирĕн халь Иринăпа нихçанхинчен те кăмăллă пулмалла. Вăл сире çывăх тăтăр. Кайран ăна пулăшма та юрать, мĕн ăнланманнине хăех сирĕнтен ыйтса пĕлме тăрăшĕ. Çынна кирлĕ вăхăтра пулăшни вăл питĕ пархатарлă ĕç.

— Юрĕ, чим-ха,—терĕ Маюк.—Эпĕ унăн кăмăлне тупатăпах...

4. САВĂНĂÇ

Хăнана кайма хатĕрленнине пула Володя Дубинин ячĕпе хисепленекен пионер отрядĕнче ĕç вĕресе кăна тăчĕ.

Коля Яковлев математикăпа юлашки контроллĕ ĕçпе «4» илнĕ хыççăн хăйне çĕнĕ вăй кĕнĕ пек туйрĕ. Вăл кашни урокран учительсене хăйĕнчен урок ыйттарасшăн тăрăшрĕ.

Юлашки урокра звонок пулас умĕн учитель, Коля шухăшне пĕлнĕ пекех, унтан ыйтрĕ. Татах «4» илсен, Коля тем пек хĕпĕртерĕ.

Маюкпа пĕрмаях пĕрле çӳрекен Иринăн та начар вĕреннине пĕлтерекен паллăсем çук. Ĕçсем çапла ăнса пынипе отряд та савăнать.

Туса пĕтернĕ макета Алеша Гришинпа Ваня Леонтьев сăрласа илемлетеççĕ. Пахчара сарă тулă ӳснине кăтартса сăрласси çеç юлнă. Ваня мĕн пăçăртанпах сарă сăрă шырать.

— Ăçта хутăн эсĕ, Ваня, сарă сăрра? — çиленсех ыйтрĕ Алеша.

— Эпĕ сăрласа пĕтертĕмĕр пуль терĕм, çавăнпа ăна киле илсе кайрăм, хам костюма сăрлама.

— Тьфу, çĕр çăтасшĕ костюмна! Ăçтан кăна шутласа кăлартăн эсĕ çав кирлĕ марскере?

— Ай-яй, чее те иккен эсĕ, Алеша! Çаплах пĕлесшĕн иккен-ха эс эпĕ епле тумланасса.

— Йĕркеллĕ пулас çук ĕнтĕ, пĕлсех тăратăп. Хăвах шухăшласа пăх-ха тархасшăн, сарă сăрăпа ăçтан хитре тум пултăр, э? Хура тесен, татахчĕ. Акă эпĕ хуп-хура э... э... эй!—аллипе çăварне хупларĕ Алеша.

— Мĕн терĕн эс?!. Э... э!.. Пĕлтĕм, пĕлтĕм карнавалта эсĕ кам пуласса. Пĕлтĕм! Тавçăрса илтĕм! — савăннипе алă çупса ячĕ Ваня.

— Пĕлен пулсан, эппин шăлна çырт. Хăвăн мĕнле иккенне каламастăн ав...

Каярахпа хĕрачасенчен сăрă илсе килчĕç те макета пĕтĕмпех сăрласа пĕтерчĕç.

Хăнасене парнелемелли макет хатĕр. Анчах ăна Укасси ачисене камăн парнелемелле-ха? Пĕрисем: отличниксем памалла, теççĕ; теприсем: макет тăвакансем паччăр, теççĕ. Анчах макет тунă çĕрте пурте ĕçленĕ. Юлашкинчен вара кам 1-мĕш класран пуçласах отлично вĕренет, кам пуриншĕн те лайăх юлташ, çавăн памалла, тесе килĕшрĕç. Ачасем пурте Алеша Гришин ятне асăнчĕç. Макета вĕренӳ отличникĕ Алеша Гришин парнелет.

Ачасем савăнаççĕ: ыран вĕсем хăнана каяççĕ. Мĕнле каяс пирки, мĕн-мĕн илсе каясси çинчен малтанах калаçса сăмах пĕтерчĕç.

5. МАЙ КОСТЕРĔ

Кун ытарма çук лайăх, хĕвелĕ ăшшăн пăхать. Çил те вĕрмест. Чипер тумланнă ачасем шкул патнелле васкаççĕ. Пионерсен хăнана каймалли вăхăт çитрĕ.

Ачасемпе пĕрлех хăнана класс руководителĕ Сергей Гордеевичпа Галя Воронцова вожатăй та пырать.

Барабан сасси илтĕнсенех отряд маларлла тапранса кайрĕ. Часах юрласа ячĕç. Ачасен çепĕç юрри таврана ян та ян каять. Вĕсене итлесе ытти иртсе пыракансем те савăнаççĕ. Ешĕл вăрман та — хир, хир те — ешĕл вăрман. Акă часах вĕсем Укассине те çитрĕç. Укасси шкулĕ умне чарăнсан, вĕсене хирĕç ачасем чупса тухрĕç.

— Килчĕç! Çитрĕç!..

— Хăнасем çитрĕç!—

— Ачасем, сире авă мĕнле хаваслансa кĕтсе илеççĕ, — терĕ Сергей Гордеевич, йăвашшăн кулкаласа.

Шкултан ачасемпе пĕрле куçлăхлă çӳлĕ çын тухрĕ. Вăл тӳрех Сергей Гордеевич патне пырса алă пачĕ. Кунти ачасем хыпăнса ӳкрĕç. Хăнисем те вăтанчĕç курăнать. Куçлăхлă çын ачасене пурне те шкула чĕнсе кĕртрĕ.

Шкулта мӳзыка янăраса кайрĕ, оркестр марш калать. Ачасем, хăнасемпе пĕрле алла-аллăн тытăнса, шкул залне кĕчĕç.

Ваня Леонтьев хăйпе юнашар пыракан Алеша Гришина пуçпа сцена еннелле сĕлтсе:

— Куратăн-и? Духовой оркестр-çке вĕсен,—терĕ.

— Çапла çав, — хуравларĕ Алеша. Алешăн халĕ калаçма кăмăлĕ çук, вăл хăйне шанса панă парнене мĕнле памалли çинчен шухăшлать.

— Асту-ха эс, шкул ачисем хăйсемех калаççĕ. Эх, пирĕн шкулта та çакăн пек оркестр пулсанччĕ,—сăмах хушрĕ Ваня.

— Мĕнех вара, лар та трубана вĕр те вĕр, пулчĕ те.

— Çук çав, Алеша, аплапа музыка пулмасть вăл.

Ваня тата тем каласшăнччĕ, çав вăхăтра хăй çине икĕ çивĕтлĕ хĕрача пăхнине асăрхарĕ те тăпах чарăнчĕ.

Пионер галстукĕ çакнă пĕр çӳлĕ хĕрача зала кĕнĕ ачасене пурне те ларма сĕнет. Халь ĕнтĕ хăнисем те, çакăнти ачасем те пĕрле хутшăнса кайрĕç. Ваня тенкел çине ларма та ĕлкĕрейимерĕ, хăйпе юнашарах хайхи икĕ çивĕтлĕ хĕрача пырса ларнине асăрхарĕ.

— Атя, паллашар. Мана Светлана тесе чĕнеççĕ, эсĕ мĕн ятлă? — ыйтрĕ хĕрача.

Ваня именчĕ. «Хамăрăн ачасем мĕн калĕç-ши?» тенĕ пек, вăл йĕри-тавра пăхкаласа илчĕ. «Эпĕ мĕн ятли сана мĕн тума кирлĕ?» тесе хăтăрса калас тенĕччĕ. Вара хăй хăнара иккенне асне илчĕ те, апла калама юрамасть тесе, хăй ятне каларĕ.

Хăна ним чĕнменнине кура, хĕрача татах сăмах хушрĕ:

— Ку вăл пирĕн аслă вожатăй— Лидия Ивановна, — терĕ, ачасене тенкелсем çине лартакан хĕрача çине кăтартса.

— Пирĕн отрядра Галя Воронцова вожатăй. Вăл яланах пирĕнпе çӳрет, сирĕн пата та вăл пирĕнпе пĕрле килчĕ, — терĕ Ваня, калаçма сăлтав тупнăшăн хĕпĕртесе.

Ачасем умне куçлăхлă çын тухрĕ. Вăл учитель иккен. Зала пухăннă ачасене вăл Май уяв ячĕпе саламларĕ, çав майпа пулакан костера чĕртме сĕнчĕ.

Кунти пионерсен аслă вожатăйĕ урай варринчи сĕтел умне тухрĕ те отличниксенчен пилĕк пионера уяв костерне чĕртме чĕнсе кăларчĕ. Вăл шутра Алеша Гришин та пур. Ачасем сĕтел умне çитсе аллисене çĕклесе салют пачĕç çеç, çамрăк электриксем çав вăхăтра костера çутса ячĕç. Хăнасем тĕлĕнсе кайрĕç. Вĕсен умĕнче чăн-чăн костер! Костерăн



пилĕк юпле кăвайче те, унăн çуламĕ те курăннă пек туйăнать.

— Çакна пирĕн техника кружокĕн ачисем шутласа кăларнă, эпир костерсене хĕлле çапла ирттереттĕмĕр, — ăнлантарчĕ Светлана Ваньăна. Ачасем пурте пионерсен юррине юрлама тытăнчĕç. Унтан савăнăçлă вăйă-кулă пуçланчĕ.

Музыка янăраса кăна тăрать. Акă сцена аяккинчи алăк яриех чĕриклетсе уçăлчĕ те пÿлĕме ăшă çил хумĕ вĕрсе кĕчĕ. Аякран-аякран хаваслăн юрласа килни илтĕнсе кайрĕ. Оркестр та çав юррах калама тытăнчĕ. Ачасем куç илмесĕр алăк еннелле пăхаççĕ. Алăкран пĕр хитре хĕрача кĕчĕ. Пуçĕнче унăн чечек кăшăлĕ, аллинче чечек çыххи.

— Сывлăх сунатăп! Эпĕ — «Çуркунне»,—терĕ вăл янăравлă сассипе.

— Çуркунне! Çуркунне килчĕ! — хаваслăн шавласа, алă çупрĕç ачасем.

«Çуркунне» пĕччен мар иккен, ун хыççăнах халь-халь çÿлелле вĕçсе каяс пек хăпартланса тăракан çÿхе шурă кĕпе тăхăннă икĕ хĕрача килсе кĕчĕç.

— Паллашăр, манпа пĕрле çурхи чечексем!

— Чечексем! Чечексем те килчĕç!..— илтĕнеççĕ сасăсем пур енчен те.

«Çуркунне» хăйне ачасем хапăл туса кĕтсе илнĕшĕн савăнчĕ, çепĕç сассипе вăл ачасене сывлăх сунчĕ, ырă сунса кĕтсе илнĕшĕн тав турĕ.

Май уявĕнче «Çуркуннепе» «чечексем» пулсан — кичем мар.

«Çуркунне» хушнипе ачасем костер йĕри-тавра карталанса тăчĕç. Хаваслă пионерсем, вăйă пуçланă май, Коммунистсен партине тата Тăван çĕршыва хăйсене телейлĕ ачалăх туса панăшăн тав туса, костер тавра çаврăна-çаврăна юрлама тытăнчĕç. Вара ташă пуçланчĕ.

Алеша Гришин макета Упакасси ачисене парнелесси çинчен йăлтах манса кайнă. Вăл тинех çавăн çинчен асне илчĕ те хĕрлĕ тутăрпа витнĕ макетне илсе килчĕ. Анчах ăна кунта кама памалла пулать-ха? Вăл çавăн çинчен хальччен шухăшламан та иккен.

Залра ура ярса пусма та вырăн çук, пурте ташлаççĕ, çаврăнаççĕ. Таçтан муртан упи те, кашкăрĕ те, мулкачĕ те тапса тухнă! Маскă тăхăнман ача-пăча та юлман темелле. Мĕн тумалла? Унăн хăйĕн те карнавал тумне тăхăнмалла. «Кама парас ку макета?» шутларĕ вăл. Акă ун умне ачасем пыраççĕ. Алеша çăмăллăн сывласа ячĕ. Ташлакансен хушшипе малалла утма тытăнчĕ, анчах ун çулне çаплах пÿлеççĕ, е сысна çури майлă тумланни тухать, е чечек, е тилĕ евĕр маска тăхăннăскер пырапыра ларать, пурте ун аллинчи макета сĕртĕнсе иртеççĕ. Алеша костер умне тухрĕ, кунта «Çуркуннепе» ун чечекĕсем ташлаççĕ.

— Çуркунне! Çуркунне! Макет, макет! — васкаса кăшкăрчĕ, Алеша.

Пурте тăпах чарăнчĕç.

— Эпир, Вăрманхĕрринчи вăтам шкулти Володя Дубинин ячĕпе хисепленекен отрядри пионерсем, Укасси пионерĕсем валли Май уявĕ ячĕпе парне илсе килтĕмĕр. Акă вăл, тытăр,— терĕ Алеша, аллинчи макетне «Çуркуннене» тыттарса.

«Çуркунне» ачасене пурне те шăп пулма хушрĕ, Алешăна тав туса, аллине тытса чăмăртарĕ. Вара вăл, «Чечекĕсемпе» пĕрле макет виттине сирсе, парнене курах кайрĕ.

— Мĕнле макет?!—тĕлĕнсе янăратрĕ вăл уçă сассипе.

— Пит илемлĕ модель-çке!

— Пăхăр-ха, кунта тем те пур: шкулĕ те, пахчи те, пахчара ĕçлекен ачасем те!..

— Курăр-ха, çамрăк йывăçсем епле лараççĕ!

— Пĕверен пăрăх тăрăх шыв хăпарать, пахчинче фонтан пур!

— Пĕвине питĕ лайăх тунă.

Ачасем пурте хĕпĕртесе пăхрĕç те ăна чи пысăк класăн сĕтелĕ çине вырнаçтарса хучĕç.

Икĕ шкулăн ачисем, Май костерĕ умĕнче алла-аллăн тытăнса, мĕнле кăна вăйă вылямарĕç пулĕ. Туслă, килĕшÿллĕ вăйă-кулăпа вăхăт иртни те сисĕнмест.

— Халь тĕрлĕрен карнавал тумĕсене курăпăр! — янăраса кайрĕ «Çуркунне» сасси.—Чечексем, эсир Май кучченеçĕсем хатĕрлĕр! Хăйсен ăсталăхне кăтартса паракан ачасене премисем паратпăр.

Карнавал тумне тăхăнман ачасем тенкелсем çине ларчĕç. Хăшпĕрисем залран тухса кайрĕç, вĕсем маскарад тумĕсене тăхăнма тухрĕç пулас.

Сцена çинчи оркестр ташă кĕвви каласа ячĕ.

Костер тавра ачасем ирте пуçларĕç, вĕсем кĕнекесенчи хăйсен юратнă геройĕсем майлă тумланнă.

Чи малтанах пионерсем иккĕн тухрĕç. Шурă кĕписем çийĕн хĕрлĕ галстукĕсем илемлĕн курăнаççĕ. Хăйсем пичĕсене маскăпа хупланă. Вĕсем иккĕн пĕрле пысăк кĕнеке çĕклесе тухрĕç. Кĕнеки çине «Гайдар» тесе çырнă. Курса ларакан ачасем вĕсене çийĕнчех палласа илчĕç: «Тимурпа унăн команди» кĕнекери геройсем — Тимурпа Женя!

Карнавал тумĕ тăхăннисем пĕрин хыççăн тепри иртеççĕ. Вĕсен хушшинче такам та пур: чăваш, тутар, грузин, украинец, негр та пур. Хушăран юмахри геройсем — тилли те, кушакĕ те, автанĕ те курăнать.

Чăн юлашкинчен ачасене тĕлĕнмелле япала курăнчĕ. Питĕ пысăк михĕ аранаран йăраланса тухрĕ. Çутă кăвак тĕс çинче шуррăн курăнакан саспаллисене ачасем хăвăрт вуласа илчĕç: «Çамрăк натуралист гектартан 100 пăт туса илнĕ тулă». Михĕ çыххинчен вара сапсарă тулă пучахĕсем чечек çыххи евĕрлех курăнаççĕ.

Ачасем çак тĕлĕнтермĕш михĕрен ахăлтатса кулса ячĕç.

— Тулă миххине пĕрремĕш преми!

— Пĕрремĕш преми!—алă çупса кăшкăрчĕç ачасем.

«Çуркунне» маскарад тумне тăхăннисене костер тавра виçĕ хутчен уттарса çаврăрчĕ. Вара вăл хăйĕн парнисене валеçме тытăнчĕ.

— Пĕрремĕш преми, — терĕ вара «Çуркунне» те, — çак сарă тулă миххине.

Вăйăра йăли çапла. Камăн преми илме ят тухсан, унăн маскине сирсе хăйпе ачасене паллаштармалла.

«Тулă миххи» тавра ачасем кĕпĕрленсе тăчĕç, ăна хывăнма пулăшрĕç. Михĕрен кĕтмен çĕртен Ваня Леонтьев тухрĕ тăчĕ. Вăрманхĕрри ачисем Ваньăран кун пек пуласса кĕтменччĕ. «Курăр-ха, мĕнле вăл пĕтĕм ачасене кăмăла каякан кулăшла тум шутласа кăларнă? Маттур! Маттур! Ăна тĕрĕсех пĕрремĕш преми пачĕç»,—терĕç вĕсем. Теприсем Ваня çине ăмсанса пăхрĕç. «Çуркунне» Ваньăна тĕрĕллĕ пакет тыттарчĕ.

— Çурхи салам сана! Ялан отличник пул!—терĕ вăл.

Ваня тÿсеймерĕ, аяккинелле пăрăнчĕ те пакетне уçса, унти япаласене кăларчĕ. Хăй куçне хăй ĕненмерĕ вăл— пакетра пурçăн хурт коконĕсем. Ывăç тупанĕ çинче вĕсем шупка саррăн йăлтăртатса курăнаççĕ. Пĕчĕк конвертра тата темле икĕ тĕш пур. Конвертчĕ çине «Пурçăн йывăçĕн тĕшĕ» тесе çырнă.

Ачасем Ваньăн «Çуркуннерен» илнĕ парнисене ытараймасăр пăхаççĕ.

— Çу кунĕсенче пирĕн питĕ интереслĕ ĕçсем пуçланаççĕ ĕнтĕ,—терĕ Ваня, савăннипе.

Ваня хăйĕн костюмне, парнине тирпейленĕ вăхăтра «Çуркунне» ыттисене те парнесемпе кучченеçсем пачĕ.

Алеша вара Ваня патне чупса пычĕ:

— Эсĕ мĕн, палламарăн-и мана?— терĕ лешĕ.

— Эсĕ! Эсĕ-çке ку — негр! Палламан, тупата! Чаплă та. Куншăн эсĕ те премие тивĕçлĕ!..—терĕ Ваня.

— «Çуркунне» мана та хаклă кĕнеке пачĕ: Островскин «Хурçă мĕнле хĕрнĕ» ятлă кĕнекине.

Вĕсен малалли сăмахне залра хыттăн ал̆ă çупни пÿлчĕ: Гайдар кĕнекинчи геройсем—«Женьăпа Тимур» «Çуркуннерен» парне илеççĕ иккен.

— Вĕсенчен пĕрне, икĕ çивĕтлине, эпĕ пĕлетĕп,—терĕ Ваня юлташне.

— Кам вара вăл?

— Светлана. Пасăр унпа паллашрăмăр эпир.

Светланăпа унăн юлташĕсем кучченеç-парне илнĕ хыççăн коридора тухрĕç. Вара Ваньăпа Алеша та вĕсем патне пырса тăчĕç. Пĕр пĕринпе вĕсем тата лайăхрах паллашрĕç.

— Пурçăн хуртне ман звено ĕрчетет,—сăмах хушрĕ Светлана.—Атьăр, пурçăн хурчĕ ĕрчетессипе ăмăртса ĕçе пуçăнатпăр.

— Пулмасть пуль. Эсир ку ĕçе вĕренсе çитнĕ ĕнтĕ, эпир нимĕн те пĕлместпĕр-ха,—терĕ Ваня.

— Чимĕр-ха эппин,—терĕ Светлана. — Иртнĕ çул эсир туратлă тулă акса ÿстернĕ-и?

— Ÿстертĕмĕр.

— Апла пулсан, пирĕн звенона туратлă тулă туса çитĕнтерме вĕрлăх парăр. Вара сирĕн те, пирĕн те çĕнĕ ĕç пулать.

— Юрать, килĕшетпĕр,—терĕ Алеша.

— Ячĕшĕн çеç мар вара, Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсем пулассишĕн ăмăртăпăр! — терĕ Светлана.

Питĕ савăнчĕç ачасем. Юлашкинчен вĕсем çакăн пек чаплă уявсене ÿлĕмрен те пĕрле иртерĕпĕр, тесе калаçса татăлчĕç.

ВАТĂ ПИСАТЕЛЬ



Кăçал Совет çĕршывĕнчи чи ватă писатель Николай Дмитриевич Телешов литература ĕçне тытăннăранпа 70 çул тулать. Çакăн пек юбилей вырăс литератури историйĕнче ку таранччен пĕрре те пулман-ха.

Çитмĕл çул!.. Чăнах та, ку вăл тепĕр çыннăн мĕнпур ĕмĕрĕнчен те темиçе вунă çул вăрăмрах!

Н. Д. Телешовăн чи малтанхи сăвви «Радуга» журналта пичетленсе тухнă чухне, 1884 çулта, çак сăвă авторĕ вунçичĕ çулта пулнă. Çавăнтанпа 70 çул хушши ĕнтĕ вăл писателĕн вичкĕн перине алăран пăрахмасть, «вырăс писателĕ пуласси вăл — пурнăçри чи аслă телее пĕлтернине» яланах асра тытса, тăрăшса ĕçлет.

Николай Дмитриевич илемлĕ те пăлханулл̆ă пурнăçпа пурăннă, халĕ вăл ватă пулин те литературăпа чунтан интересленет. Тăван çĕршывăмăр ĕçĕ-хĕлĕпе хавхаланса пурăнать. Хăйĕн литература ĕçĕнче вăл Н. А. Островскипе Л. Н. Толстой пурăннă тапхăра А. П. Чеховпа А. М. Горький пурăннă тапхăр урлă Совет саманинчи тапхăрпа çыхăнтарать. Вăл И. С. Тургенева, А. Н. Майкова, А. Ф. Писемские, Я. П. Полонские курнă, Л. Н. Толстойпа калаçнă, Ф. М. Достоевский тухса каланине илтнĕ. А. П. Чехов сăмахĕсемпе каласан, Телешов тăван литературăна хăйĕн мĕнпур ăс-тăнĕпе чĕри вăй-хăватне панă «кăтартуллă писатель» пулса тăрать. Вăл хăйĕн ĕмĕрĕнче çитмĕл кĕнеке — повеçсем, калавсем, очерксем, мемуарсем пичетлесе кăларнă. Вăл — вырăс литератури юлашки çитмĕл çул хушшинче аталанса пынин чĕрĕ историйĕ, вырăс литературинчи реализм аталанса йĕркеленнине куракан̆ĕ тата çак ĕçе активлăн хутшăнаканĕ.

Чеховпа Горькин чи юлашки соратникĕ, Серафимовичпа Купринăн, Бунинпа Андреевăн, Шаляпинпа Рахманиновăн тусĕ — Н. Д. Телешов хăйĕн ĕмĕрĕнче вырăс литературин паха традицийĕсене пăсмасăр, таса тытса пынă.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче Н. Д. Телешов «Среда» ятлă питех те паллă литература кружокĕ организациленĕ, çак кружок çирĕм çул хушши ĕçленĕ. Кружок ĕçне Чехов, Горький, Короленко, Бунин, Серафимович, Мамин-Сибиряк, Андреев, Куприн, Вересаев, Боборыкин, Скиталец, Златовратский тата ытти нумай писательсемпе поэтсем хутшăннă. Çак кружок хăй вăхăтĕнче вырăс литературин прогрессивлă вăйĕсене пĕтĕçтерсе тăнă.

«Среда» ятлă кружокра,—тесе çырать Н. Д. Телешов,—эпир писательсен нумай произведенийĕсене пичетличчен пăхса тухаттăмăр. Произведенисене яланах тенĕ пек авторсем хăйсемех вуласа паратчĕç... «Среда» кружокра пире Найденов хăйĕн пьесисене нумайăшне вуласа пачĕ, кружокра эпир Бунинăн калавĕсемпе повеçĕсене пурне те тенĕ пек тата унăн нумай сăввисене, Скиталецпа Серафимовичăн тата ыттисен нумай произведенийĕсене пăхса тухрăмăр. Леонид Андреев урăх çĕршывсенче пурăннă вăхăтра та, пирĕн пата хăйĕн алçырăвĕсене ярса парса, «Среда» шухăшне каласа пама ыйтатчĕ. «Унсăрăн,— тесе çыратчĕ вăл ман патăма,—пĕр япалана та эпĕ туса пĕтертĕм тесе шутлама пултараймастăп».

Кружокăн пухăвĕсенчен пĕринче А. М. Горький хăйĕн «Тĕпĕнче» ятлă пьесине малтанхи хут вуласа панă. Каярахпа вара вăл Соррентăран Н. Д. Телешов патне çапла çырнă: «Сирĕн кружок пирĕншĕн, çав вăхăтри литераторсемшĕн, пуриншĕн те питĕ пысăк вырăн йышăнса тăчĕ».

Совет саманинчи аслă писатель Алексей Максимович Горький Н. Д. Телешова, малта пыракан шухăшлă писателе, прогрессивлă шухăшсене тытса пыракана, питĕ юратнă, унăн чĕлхине, унăн произведенийĕсен тематикине мухтаса ырланă, ăна писатель-общественник пулнăшăн хисепленĕ. Нумай çулсем хушши Н. Д. Телешов литераторсемпе ученăйсен пулăшу кассин председателĕ, пичетпе литература обществи çумĕнчи «Чыслăх сучĕн» членĕ пулнă. Вăл «А. П. Чехов обществине» организациленĕ, ăна нумай вăхăт хушши ертсе пынă. Н. Д. Телешов рабочисемпе хресченсен тата железнодорожниксен ачисем валли Россиăра чи малтан уснă гимназие организацилекенсенчен пĕри пулнă. Н. Д. Телешов тунă мĕнпур ĕçсене хисеплесе тухма та йывăр.

...Чÿрече патĕнче, пысăк сĕтел хушшинче, Николай Дмитриевич Телешов ларать. Вăл Ленинградран тин çеç килсе çитнĕ хăйĕн «Записки писателя» кĕнекин саккăрмĕш изданине пăхать. Кĕнекене юсаса тата хушса пичетлесе кăларнă, ăна çĕнĕ ÿкерчĕксемпе илемлетнĕ. «Записки писателя» кĕнекере — Совет çĕршывĕнчи мемуар литературинчи чи паллă кĕнекесенчен перинче—Н. Д. Телешов литературăра хăй 70 çул ĕçлени çинчен, Чеховпа тата Горькипе туслашни, вырăс культурин паллă представителĕсемпе тĕл пулса калаçни çинчен, Мускаври Художество театрĕ çинчен питĕ лайăх та илемлĕ каласа парать. Çак театрта Н. Д. Телешов МХАТ музейне организациленĕ, музей директорĕнче вăтăр çул хушши ĕçленĕ. Мускав çинчен, пирĕн Тăван çĕршывăмăрти чи аслă та чаплă хула çинчен, Н. Д. Телешов хăй çуралса ÿснĕ тата сакăрвун çичĕ çул хушши пурăннă хула çинчен çырнă сыпăксене киленсе вулатăн.

Н. Д. Телешовăн ĕç кабинетне музейпе танлаштарсан та йăнăшах пулас çук. Николай Дмитриевич хăй мĕн курнине, пурăнса ирттернине аса илтерекеннисене пурне те типтерлĕ сыхласа усрать. Унăн ĕç кабинетне хăйне Чехов, Горький, Андреев, Бунин Серафимович алă пусса парнеленĕ кĕнекесем, фотографисем, паллă писательсен, артистсен, художниксен çырăвĕсем темĕн чухлех. Николай Дмитриевич таврашĕнчи япаласем пурте ăна тахçан ĕлĕк-авалах иртсе кайнине аса илтереççĕ, çав япаласем ăна хаклă сăнарсене ÿкере-ÿкере параççĕ. Акă, Рахманинов каланă пианино, Левитан живописец ларнă кресло, Чеховпа, Короленкăпа пĕрле чей ĕçнĕ пĕчĕк сĕтел...

Н. Д. Телешов кабинетне сарлака чÿречерен çурхи ăшă хĕвел пырса кĕрет. Мускав тин çеç ыйхăран вăранать-ха, урамра шавлă Мускавăн ĕçлĕ кунĕ пуçланать. Николай Дмитриевич тахçантанпах ĕнтĕ сĕтел хушшинче ĕçлесе ларать. Нумай çырусем çине ответсем памалла, А. П. Чехов çинчен радио валли статья çырса пĕтермелле, архивра хăшпĕр документсене шыраса тупса, вĕсене Государствăн литература музейне пама хатĕрлемелле, Владивосток писателĕ Василий Кучерявенко ярса панă новеллăсене вуласа тухмалла, ун патне çыру çырса ямалла... Тата чăваш писателĕсемпе курнăçса калаçмалла. Мускавра пулнă чухне вĕсем чăвашсем çинчен çырнă «Тип шар» ятлă повесть авторĕ патне—Н. Д. Телешов патне ĕнтĕ — кирек епле пулсан та кĕрсе тухаççех.

...Мускаври авалхи çуртăн коридорĕнче шăпах. Н. Д. Телешов хваттерĕнче те шăп. Пĕр унăн кабинетĕнчен çеç машинка сасси илтĕнет — ватă писатель хăйĕн ĕç кунне пуçларĕ..,

Ал. ЛЕСС.

ХАЛĂХ ВАЛЛИ

Çак пĕчĕк чул çуртăн, тултан пăхсан, куçа илĕртекенни нимĕнех те çук, пĕр вентиляци труби çеç урамалла усăнса тăрать.

Ватăрах çынсем каласа кăтартнă тăрăх, революциччен кунта темĕнле купецăн тавар склачĕ пулнă имĕш. Совет влаçĕ хыççăн кунта Шупашкарти чи малтанхи çăкăр пĕçерекен государство пекарнине уçнă.

1933 çулта çак çуртра лапшапа макарон тума пуçланă; производство ÿссе пынă май, çурт çумне те, ун тăррине те тĕрлĕрен пĕчĕк çуртсем тăва-тăва лартнă. Вĕсем фабрикăн тĕп çурчĕ çумне нимĕн тĕлли-паллисĕр çыпçăнса тулнăн туйăнаççĕ. Анчах çурт çумне е ун тăррине туса лартнă кашни çурт, кашни пÿлĕм шăпах хăй вырăнĕнче — вĕсене пурне те производство интересĕсене чи лайăххăрах тивĕçтермелле пултăр тесе тунă.

Кунта макарон, лапша, вермишель тăваççĕ. Çуртăн пĕр пуçĕнчен çăнăх парса тăраççĕ, тепĕр пуçĕнчен вара макарон, лапша е вермишель пулса тухать.

Ĕлĕкхи складран макарон фабрики тунă чух малашне кунта мĕнле ĕçлемеллине, производство процесĕсем пĕр вĕçĕмрен пулса пымаллине питĕ тĕплĕн шута илнĕ.

Фабрика çурчĕн авалхи стенисем çине пăхатăн та, куç умне ирĕксĕрех пĕр-пĕрне хирĕçле икĕ картина тухса тăрать: тахçан ĕлĕк çакăнта шыçмак сăхă купец хуçа пулнă, кунта вăл хаяррăн кăшкăрашнă, йывăр ĕçпе халран кайнă грузчиксем пуç çĕклемесĕр ĕçленĕ, асапланнă. Анчах вăл ĕлĕк, революциччен, çапла пулнă. Халĕ кунта совет çыннисем çĕнĕ техникăпа ĕçлеççĕ, халăх ырлăхĕшĕн хавасланса вĕсем ĕçре пĕрпĕрне ăмăртаççĕ.

Фабрикăра кăткăс механизмсем. Кучуххехи техника эпир хамăрăн кулленхи пурнăçра курма хăнăхнă хăшпĕр профессисен пĕлтерĕшне тĕпренех улăштарать.

Акă, сăмахран, кам-ха вăл — çăнăх аллакан? Пушă е хĕлĕх ала кăшкарне ывăç тупанĕсемпе çатлаттарса, сĕтел, такана е кункăра çине çăнăх аллакан çын. Килте ку ĕçе хĕрарăмсем тăваççĕ; революциччен-хи вăхăтра купецсен пекарнисенче те çавăн пек аласемпех çăнăх алланă. Çав ĕçе юри тара тытнă çынсем тунă.

Хальхи апат-çимĕç предприятийĕсенче çак ĕçе квалификациллĕ рабочисем машинăсемпе туса тăраççĕ. Вĕсем машинăпа ĕçлеççĕ пулин те, çăнăх аллакан çыннăн професси ячĕ çав-çавах улшăнман.

Шурă халат тăхăнса, эпир макарон фабрикин заготовительнăй цехне пырса кĕретпĕр (шурă халат тăхăнмасăр цехсене никама та кĕртмеççĕ). Пирĕн умра—бетон никĕс çине лартнă машина, унăн çÿлти пайĕ мачча витĕрех тухса каять. Машина шавсăр ĕçлет. Машинăн çăнăх тултармалли арман пĕрни евĕрлĕрех пайĕнчен аллакан аппарата çăнăх хăй тĕллĕн пырса тăрать, ун витĕр тухса вара çÿлти хута хăпарать.

Ку машинăпа Валентина Федоровна Федорова ĕçлет. Вăл аппарата çăнăх мĕн чухлĕ пырса тăмаллине васкамасăр, лăпкăн йĕркелесе пырать, аллакан механизмсем мĕнле ĕçленине сăнасах тăрать.

Цехра пĕр пĕрчĕ тусан çук, машинăна пур енчен те тимĕр кăшкарпа кăшăлланă. Валентина Федоровна пĕр-пĕр рычага пусать е пĕр-пĕр кустăрмана пăрать. Вăл та, хăйпе ылмашăнса ĕçлекен Перасковья Тимофеевна Эрастова пекех, производствăра малта пыракансенчен пĕри, хăй ĕçне вара питĕ тĕплĕн вĕренсе çитнĕ, тĕлĕнмелле ăслă машинăн чăнчăн хуçи пулса тăнă.

Эпир, фабрикăн çÿлти хутне хăпарса, чĕртавар цехне кĕретпĕр. Кунта та тап-таса, ĕçлекенсем те больницăри сестрасем пек туйăнса каяççĕ. Мотор сасси, чуста çăракан автоматсем кĕрлени çеç илтĕнет.

Аллана çăнăх кунта заготовительнăй цехран сывлăш кĕмелле мар хупăрланă элеватор системисем тăрăх хăй тĕллĕнех килсе тăрать, котельнăйран вĕретсе кăштах сивĕтнĕ шыв трубасем тăрăх юхса килет.

Çăнăхпа шыва, хăшпĕр изделисене тунă чухне тата çăмарта порошокне татти-сыпписĕр ĕçлесе тăракан шнековăй прессенче хутăштараççĕ. Çак кăткăс та ăслă машинăсене Дон хĕрринчи Ростовра туса кăлараççĕ. Машинăсем çăнăха та, шыва та хăйсемех виçсе илеççĕ, питĕ хытă чуста çăраççĕ. Çак хытă чустана машинăсем матрица текен форма витĕр темиçе атмосфера пусăмпа хĕссе кăлараççĕ.

Шнековăй пресс шăтăклă-шăтăклă пуçне аялалла вырнаçтарса лартнă, питĕ пысăк мясорубкăна аса илтерет. Çакнашкал мясорубкăна тураса вĕтетнĕ какай ярăмăн-ярăмăн çĕрелле усăнса аннă пулĕччĕ. Шнековăй пресс шăпах та ĕнтĕ макарона çакăн пек ярăмăн-ярăмăн хĕссе кăларать. Пресăн шăтăкĕсем пĕр-пĕрнипе питĕ çывăх вырнаçса тухнă, пресс çаврашкин диаметрĕ çур метра яхăн.

Çакнашкал машинăсенчен пĕринпе Анна Константиновна Василянова ĕçлет. Эпир пырса кĕнĕ чухне вăл машинăн иккĕмĕш хутĕнче, агрегата йĕри-тавра тытса çаврăннă карлăк леш енче, механизм ĕçне йĕркелесе тăратчĕ. Пире курсан, пĕчĕк тимĕр пусма тăрăх аялалла анчĕ.

— Мĕнле ĕçлетпĕр-ха?—ыйтрĕ унран фабрикăн главнăй инженерĕ Василий Герасимович Дыбля.

— Питĕ лайăх!—кăмăллăн кулкаласа илчĕ Василянова.—Машинăна чи пысăк хăвăртлăхпа ĕçлеттеретпĕр.

Урăх унран нимĕн те ыйтса пĕлес çуккине кура, Василянова машина патне васкарĕ, главнăй инженер вара:

— Вăл пирĕн чи лайăх пресcовщицăсенчен пĕри!—терĕ.

Пресс хĕссе кăларнă макарон «кĕлтине» тепĕр работница, çурлапа тырă вырнă чухнехи пекех, сулахай аллипе çавăрса илет те, сылтăм аллинчи пысăк çĕçĕпе касса татса, ăна вăтам сĕтел çине тăсса пăрахать. Машина тепĕр «кĕлте» хĕссе кăларнă хушăра малтанхи «кĕлтери» макарона вăл мĕн тăршшĕ тăвас тенĕ, çавăн пек тураса тухса, шăтăклă-шăтăклă контейнер çине типĕтме вырнаçтарса хума ĕлкĕрет.

Чустана питĕ хытă çăрнă пирки çак ĕçсене тунă чухне макаронсем пĕр-пĕринпе çыпçăнса пăсăлмаççĕ, лапчăнмаççĕ те. Çапах та çак ĕçе тума питĕ ăсталанса çитес пулать, автомат ĕçне те ĕлкĕрсе пымалла. Фабрикăра çак ĕçе Мария Борисовăпа Антонина Семенова уйрăмах лайăх туса пыраççĕ, вĕсем ĕç нормине кашни кун ирттерсе тултараççĕ.

Чĕртавар цехĕнче тата Андрей Михайлович Эрастов вальцовщик ĕçлет. Вăл ĕçлекен машина, чустана валсен системи витĕр лапчăтса кăларса, ăна пир анĕ евĕрлĕ тăвать, унтан çак лапчăтнă чуста «анĕ» Анастасия Афанасьевна Афанасьев ĕçлекен лапша касмалли машина çине пырса кĕрет. Кунта чуста «анĕнчен» продукци ассортиментĕнче кăтартса панă хулăнăшĕпе сарлакăш çипсем касса кăлараççĕ. Станокăн касакан аппарачĕ çине штампсем лартсан, лапшана йĕрсемпе эрешлесе тĕрĕллĕ тума та пулать.

Лапша çипне кĕвентесем çине çакса, макарон контейнерĕсем пекех, типĕтекен цеха ăсатаççĕ.

Чĕртавар цехĕнчи çынсем—Эрастов, Афанасьева тата ыттисем те—яланах пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ, ку цехра туса хатĕрленĕ полуфабриката типĕтекен цех аран-аран йышăнса пыма ĕлкĕрет.

Типĕтекен цех фабрикăри чи пысăк пÿлĕм. Унта çÿлĕксем вырнаçтарса тухнă. Шалта, хăйăрлă пушхирти пекех, ăшă та типĕ. Продукцие кунта пур енчен те вĕри сывлăш вĕрсе тăрать. Приборсем пÿлĕмри температурăна тата сывлăш нÿрлĕхне кăтартса параççĕ.

Çак цеха техника контроль пайĕн заведующийĕ Надежда Алексеевна Титова, лаборантка Анна Степановна Иванова, фабрика директорĕ Вера Семеновна Тазова, фабрикăн главнăй инженерĕ Дыбля час-часах пырса каяççĕ, вĕсем продукци мĕнле типнине пăхаççĕ, ăна хуçа-хуçа тĕрĕслеççĕ, сăнаççĕ, макарон тавраш типĕтесси вăл чи ответлă ĕç иккен. Продукцире нÿрлĕх питĕ сахал пулмалла, çав вăхăтрах ăна ытлашши типĕтме те юрамасть, мĕншĕн тесен вăл хăйĕн тĕсне çухатса тавар пахалăхне чакарать. Çакна типĕтекен цехра ĕçлекен Валентина Климова, Елизавета Емельянова тата ыттисем те лайăх пĕлеççĕ, совет çыннине чи лайăх продукци парас тесе, тăрăшса ĕçлеççĕ вĕсем.

Типсе çитнĕ хыççăн продукци упаковка цехне пырса кĕрет. Кунта Галина Кусакинăпа Татьяна Капранова работницăсем лапшана, макарона е вермишеле çуршар килограмм кĕрекен коробкăна виçсе хураççĕ.

Фабрика çакăн пек коробкăна хунă продукцие халĕ кунран-кун ытларах та ытларах кăларса пырать. Çак тавара сутма та ансатрах, илекеншĕн те вăл лайăх.

Кусакинăпа Капранова пĕрпĕринпе питĕ килĕшÿллĕ ĕçлеççĕ. Вĕсенчен пĕри макарона илет те тараса чашăкĕ çине хурать. Вăл илсе хунă макарон шăпах çур килограмм туртать: нимĕн те калаймăн—хăнăхса çитнĕ! Тепри çав самантрах ăна тараса чашăкĕ çинчен илсе коробкăна вырнаçтарса хурать те коробкине çыпăçтарса та лартать. Кашни сменăри нормăна вĕсем 120—130 процент тултарса пыраççĕ.

Упаковка цехĕпе тарă цехĕ хушшинчи урайне тимĕр сарнă. Упаковка цехĕнчен тарă цехне продукци тултарнă пысăк контейнерсем çине-çинех пырса тăраççĕ. Кунта çирĕп ещĕксене хурса вырнаçтараççĕ те фабрика складне ăсатаççĕ, складран вара ăна хамăр республикăри, Çĕпĕрти, Уралти, Пушкăрт республикинчи, Молотов облаçĕнчи тата çĕршывăн ытти облаçĕсемпе крайĕсенчи хуласемпе ялсене яраççĕ.

...Фабрикăра ĕç тухăçлăхне ÿстерессишĕн, продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн ăста ĕçлекенсем сахал мар. Вĕсем пурте фабрикăпа пĕрле ÿссе çитĕннĕ. Фабрикăна пырса кĕнĕ чухне вĕсенчен нумайăшĕ ĕçе, производствăри кăткăс техникăна пачах пĕлмен, кунта вара, фабрикăри пĕр шухăш-кăмăллă коллективра, çултан-çул вĕренсе пынă.

Акă, Агафья Павловна Денисовăна илер. 1938 çулта вăл Ульяновск облаçĕнчи пĕр чăваш ялĕнчен фабрикăна килсе кĕнĕ. Ун чухне унăн нимĕнле специальность та пулман — малтанлăха ăна кăмака хутма хушнă. Вăл тăрăшса ĕçленине кура, ăна типĕтекен цеха работницăна куçарнă. Пĕр çулталăк хушшинчех вăл хăй ĕçне çав тери лайăх вĕренсе çитнĕ,—ăна бригадир туса хунă. Çак вăхăтра вăл рабочи çамрăкĕсен каçхи вăтам шкулне вĕренме кĕнĕ, унтан ăна Ростоври макарон фабрикине — пирĕн çĕршыври чи пысăк фабрикăна вĕренме янă. Кунтан вăл мастер пулса таврăннă, ăна техника контроль пайĕн бракĕрĕ туса хунă. Фабрика туса кăларакан продукци пахалăхне ÿстерме вăл питĕ нумай пулăшать. Халĕ вăл чĕртавар цехĕн мастерĕнче ĕçлет.

— Манăн пĕтĕм пурнăçăм фабрикăпа пĕрле,—тет Агафья Павловна.—Пĕр-пĕр работницăн йăнăшĕ мана, хам тунă йăнăш пекех, чунтан ыраттарать...

Агафья Павловна Денисова фабрика валли çĕнĕ кадрсем вĕрентсе хатĕрлессишĕн тимлĕн тăрăшать. Çамрăк работницăсене вăл Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ĕççыннисен материальнăй ыйтăвĕсемпе культура тĕлĕшĕнчи ÿсĕнçĕмĕн ÿссе пыракан ыйтусене май килнĕ таран лайăххăрах тивĕçтерес пирки задача лартнине тăтăшах асутарса тăрать.

— Пирĕн фабрика,—тет вăл,—шăпах та ĕнтĕ çак задачăсене татса парас енĕпе ĕçлет.

Фабрика коллективĕ хăй умĕнче тăракан ответлă задачăсене питĕ лайăх ăнланать. Фабрикăн кăçал пĕлтĕрхинчен 30 процент ытларах продукци туса кăлармалла, çĕнĕ йышши лапша-макарон туса кăларма тытăнмалла, çĕнĕ машинăсене ĕçе ямалла.

Иккĕленмелли çук, республика столицинчи апат-çимĕç промышленноçĕнче малта пыракансем хăйсем умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлă татса парĕç. Май уявĕ умĕнхи социализмла ăмăртăва хутшăнса, макарон фабрикин коллективĕ апрель уйăхĕн малтанхи икĕ вунăкунлăхĕ хушшинче çеç планран ирттерсе 102 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă.

Пысăк ĕç тăвать халăх валли фабрикăн пысăках мар коллективĕ. Хăй туса кăларакан продукцие ĕççыннисем юратса туянăшăн вăл тивĕçлипех мухтанма пултарать.

Анчах совет çынни нихçан та тунă çитĕнÿсемпе лăпланса лармасть, халăх пурнăçне лайăхлатас тесе, вăл çитĕнÿ хыççăн çитĕнÿ туса пыма тăрăшать.

Александр **ТОЛСТИХИН.**

ДАНИЛОВ ПРОФЕССОР

Очерк

А. КРЫЛОВ

Пĕр вунтăватă çулалла çитнĕ ача Шупашкаралла васкаса утса пырать. Унăн хĕвелпе пиçĕхнĕ пит-куçĕ ирхи сутăпа ялкăшать. Ача хăйсен тăван ялĕнчен — Ишлей районĕнчи Тăрăнран — кăвак çутăллах тухнă та кăнтăрла тĕлне Шупашкар патнелле çывхарать.

Акă, юратнă столицăн шурă чул çурчĕсем курăнма та пуçларĕç. Ача, йăл-йăл кулкаласа, куç сиктермесĕр хула çине пăхать.

Ку вăл — Миша Данилов. Вăл ялти шкултан вĕренсе тухнă, халĕ ĕнтĕ Шупашкарти иккĕмĕш ступень шкула кĕме ĕмĕтленет.

Вăл чăваш хресченĕн çемйинче çуралса ӳснĕ. Вĕсен, Мишăсăр пуçне, ачасем татах нумай пулнă. Ашшĕ ялта кĕтӳ кĕтнĕ, чухăн пурăннă. Анчах вăл Совет влаçĕ çĕршыври мĕнпур чухăнсене, çав шутрах чăвашсене те, вĕренме ирĕк панине часах ăнланса илнĕ, хăйĕн ачисене вĕрентме шут тытнă.

— Вĕреннĕ çынсем пулăр, ачамсем. Халĕ ĕнтĕ сирĕн валли вĕренме питĕ анлă çул уçса панă. Çав çулпа хăюллăн малалла утăр!—тенĕ ашшĕ хăйĕн ачисене час-часах. Шупашкаралла утнă май, Миша çак сăмахсене темиçе хут та аса илчĕ.

Миша ĕнтĕ нумай япалана хăй те лайăх ăнланать: ялта вĕреннĕ чухне вăл пуринчен малтан пионера çыраннă, унтан вара пионер отрядне организациленĕ, халăх хушшинче ĕçленĕ, хресченсене хаçатсем вуласа панă...

Иккĕмĕш ступень шкулта вĕреннĕ чухне вăл комсомола кĕнĕ, обществăлла ĕçе активлăн хутшăннă. Çаксем пурте ĕнтĕ унăн тавракурăмне анлăлатнă.

Вунсакăр çулхи йĕкĕт Михаил Данилов вăтам шкултан вĕренсе тухнă, халĕ ăна аслă шкула вĕренме каяс ĕмĕт илĕртнĕ.

— Кам пулмалла-ши? Врач, педагог, инженер... Мĕнле специальность суйласа илмелле?—Çак ыйтусем ачана нумай шухăшлаттарнă.

— Пирĕн республикăра вăрман нумай. Хура вăрман вăл,—шухăшланă çамрăк хăй тĕллĕн.—Тата пирĕн кӳршĕсен — Мари республикин мĕн чухлĕ хыр-чăрăш вăрманĕ кашласа ларать!. Çав вăрмансене пурне те тĕпчесе вĕренес пулать. Вăрман вăл — пирĕн тăван çĕршывăн ешĕл ылттăнĕ. Ана тĕпчесе вĕренесси питĕ илĕртекен ĕç пулмалла...

Вара Михаил Данилович Хусанти ялхуçалăхĕпе вăрман институчĕн вăрман факультетне вĕренме кĕнĕ.

Хусанта институтсем, культура учрежденийĕсем нумай. Унта вырăс халăхĕн аслă çыннисем — вăл шутра Владимир Ильич Ленинпа Лев Николаевич Толстой—вĕреннĕ университет пур. Аслă шкулсен библиотекисенчен пур тĕрлĕ кĕнеке те илсе вулама пултаратăн...

Хусан çамрăк студента, чăваш ачине, тĕлĕнтернĕ. Вĕренӳ çулĕсем унăн сисĕнмесĕрех иртсе кайнă. Институтра вăл лайăх вĕреннĕ, çав вăхăтрах комсомол комитетĕнче, профкомра хĕрӳллĕн ĕçленĕ, студентсен наука кружокне ертсе пынă.

Аслăрах курссенче вĕреннĕ чухне вăл хăйĕн «Опыты с проращиванием желудей» ятлă малтанхи ăслăлăх ĕçне пичетлесе кăларнă. Унăн çак ĕçĕпе каярахпа Тольский профессор хăйĕн учебникне çырнă чухне усă курнă.

Институтран вĕренсе тухнă хыççăн Михаил Данилова, наукăра хăйĕн пултарулăхне кăтартнăскере, институтрах аспирантурăна хăварнă.

Виçĕ çул хушшинче—1930 çултан пуçласа 1933 çулччен — Данилов аспирант Чăваш республикинчи юман вăрманĕсене тĕпчесе вĕренекен экспедицисенче çӳренĕ. Çавăн чухне пухнă материалсемпе усă курса, вăл Чăваш республикинче вăрман лартса çитĕнтересси çинчен тата юман вăрманĕсем хăйсем тĕллĕн ӳссе çитĕнни çинчен пысăк кĕнеке çырса кăларнă.

1930 çулта Хусанти ялхуçалăхĕпе вăрман институчĕн вăрман факультетĕнчен Атăл тăрăхĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан лесотехнически институт пулса тăнă. Институтпа пĕрле Михаил Данилов, çамрăк научнăй работник, Хусантан Мари республикин столицине — Йошкар-Олана куçнă.

Кунта, вăрманпа пуян республикăра, пулас ученăй наукăра татах та хастаррăнрах ĕçлеме тытăннă. Институтра вăл студентсене ботаникăпа ӳсентăран физиологине вĕрентнĕ, каярахпа институт директорĕн вĕрентӳпе наука енĕпе ĕçлекен заместителĕ пулнă. Вăрçă вăхăтĕнче ăна Атăл тăрăхĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан лесотехнически институт директорĕ пулма уйăрса лартнă.

Çав вăхăтрах Михаил Данилович Мари республикинчи вăрмансене тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе питĕ пысăк ĕç тунă. 1935 çулта ăна вăрман ĕрчетес тата йывăç анатомийĕ тĕлĕшпе ĕçлекен доцент туса хунă.

Мари республикинчи вăрмансем Михаил Даниловича хăй студент пулнă чухнех илĕртнĕ. 1929 çулта, виççĕмĕш курсра вĕреннĕ чухне, вăл Мари республикинчи пĕр вăрман участокĕнче производство практикинче пулнă, çуннă вырăнсемпе каснă вырăнсенче ӳсентăран мĕнле çитĕннине тĕпчесе вĕренме тытăннă.

1921 çулта йăлăм çуннине вата çынсем питĕ лайăх астăваççĕ. Ун чухне Мари республикинчи хыр-чăрăш вăрманне ниме те шеллемен вут-кăвар нумай пĕтерчĕ. Çав çул паха вăрман культури калама çук пысăк территорире çунса кайрĕ.

Çакă вăл çамрăк студента, Данилова, тарăн шухăша янă: çуннă вырăнсенче мĕнле майпа çĕнĕрен вăрман çитĕнтермелле-ха? Вăл вара çав вырăнсенче мĕнле-мĕнле ӳсентăран çитĕннине тĕпчесе вĕренме тытăннă. Çакна вăл вунă çул хушши тăтăшах сăнаса пынă. Питĕ пуян материал пухса çитерсен, вăл ялхуçалăх наукисен кандидачĕ пулма диссертаци çырнă, ăна 1939 çулта Ленинградри С. М. Киров ячĕпе тăракан лесотехнически академире ăнăçлă хӳтĕленĕ.

М. Д. Данилов профессор институт аспиранчĕпе В. Пчелинпа пĕрле хăйĕн лабораторийĕнче.

А. Шоряев фотоӳкерчĕкĕ.

ЕШЁЛ ТӐВАТКАЛ ТӖМСЕМ

Мускаври фильмсем ӳкерекен киностудири сасӑ ҫыракан пӳлӗмре виҫҫӗн ларасҫӗ: сасӑ аппарачӗ умӗнче — Александр Михайлович Камионский оператор, анлӑ кантӑк айӗнчи вӑрӑм сӗтел хушшинче — Мария Васильевна Усольцева режиссерпа унӑн ассистенчӗ Мария Белая. Юнашар пӳлӗмре экран ҫакӑнса тӑрать. Вӑл кантӑк витӗр курӑнать. Симфонилле оркестр калать. Музыка кӗввинче Совет ҫӗршывӗн вӗҫӗ-хӗррисӗр, ытарайми илемӗ сисӗнет. Режиссерпа ассистент, кусӗсене экран ҫинчен сиктермесӗр, диктор сассине — Чӑваш республикин тава тивӗҫлӗ артисчӗ Виктор Родионов чӑвашла вуланине итлеме хатӗрленсе ларнӑ. Родионов хӑй кунта ҫук, вӑл диктор кабининче.

«Рассказ о зеленых квадратах» курӑнса кайрӗ экран ҫинче пысӑк саспаллисемпе ҫырнӑ кинокартина ячӗ.

— «Ешӗл тӑваткал тӗмсем»— илтӗнчӗ кӗтесри репродуктортан Родионовӑн сасси.

Экран ҫинче картинӑн малтанхи титрӗсем курӑнчӗҫ.

— Сценари авторӗ Шпиковский, режиссер-постановщиксем Ермаковпа Чулков, научнӑй консультантсем... — янӑрать диктор сасси.

— Ан васкӑр, Виктор Иосифович. Эпир сигнал парсан тин вулама пуҫлӑр,—тӳрлетрӗ режиссер, сӗтел ҫинчи микрофона хӑй патнерех куҫарса.

— Итлетӗп, Мария Васильевна,—вырӑсла таврӑнчӗ Родионов, унтан каллех чӑвашла вулама тытӑнчӗ:—Операторсем — Кузнецов, Вырубов, Дмитриев, Сильченко, Смирнов...

— Чарӑнӑр-ха,—терӗ сасӑ операторӗ Камионский, хӑй умӗнчи микрофон патнелле пӗшкӗнсе.

Экран ҫинчи кадрсем ҫухалчӗҫ, музыка та, Родионов сасси те илтӗнми пулчӗ.

— Ман пурте йӗркеллӗ, Мария Васильевна. Диктор сасси лайӑх янӑрать. Репетици тӑвар та, ҫырма пуҫлӑпӑр,—пӗлтерчӗ режиссера оператор.

Малтан вӗсем Родионов сассине тӗрӗсленӗ иккен.

Ҫапла пуҫланчӗ «Ешӗл тӑваткал тӗмсем» ятлӑ кинокартинӑри диктор сӑмахӗсене чӑвашла куҫарса ҫырас ӗҫ.

Ку картинӑна халӗ пӗтӗм Совет Союзӗнче — хуласенче те, ялсенче те — кӑтартаҫҫӗ. Пирӗн ҫӗршывра ҫеҫ мар, ӑна халь ытти нумай ҫӗршывсенче те кураҫҫӗ: Китай Халӑх Республикинче те, Корейӑри Халӑх Демократиллӗ республикинче те, халӑх демократиллӗ ытти ҫӗршывсенче те пӑхаҫҫӗ. Пӗтӗмпе ӑна икӗ пин ҫурӑ ытла копи пичетлесе кӑларнӑ. Картина куракансене ӑнланма ҫӑмӑлтарах пултӑр тесе, диктор сӑмахӗсене кашни халӑх хӑй чӗлхи ҫине куҫарать. Пирӗн республика правительстви те ҫав картинӑна чӑвашла куҫарса ҫырма заказ панӑ.

Икӗ пин ҫурӑ копи! «Халиччен пӗр картинӑна та ҫакӑн чухлӗ копи кӑларманччӗ»,—теҫҫӗ кинора ӗҫлекенсем. Мӗнле картина-ха вӑл? Мӗншӗн ӑна пурте курасшӑн? Мӗншӗн тесен ку картина ялхуҫалӑхӗнче халиччен пулман меслетсем ҫинчен каласа-кӑтартса парать.

КПСС Центральнӑй Комитечӗн иртнӗ ҫулхи сентябрь уйӑхӗнче пулса иртнӗ Пленумӗнче Хрущев юлташ, ҫӗрулмипе пахча ҫимӗҫсен тухӑҫлӑхне ӳстересси ҫинчен каланӑ чух, вӗсене лартса-пӑхса ӳстерес тата пухса кӗртес ӗҫсене



Ҫӗрулми лартмалли машинӑна тухӑҫлӑрах ӗҫлеттерес тесен, ҫӗрулми вӑрлӑхне малтанах хатӗрлесе хумалла, ҫавӑн пекех минераллӑ имҫамсене те вӑхӑтра илсе пымалла.

Ҫав ҫулах вӑл Коммунистсен партине кӗнӗ, халӗ вӑл наука ыйтӑвӗсене татса парас енӗпе татах та хастаррӑнрах ӗҫлеме тытӑннӑ.

Паллӑ ӗнтӗ, аслӑ вырӑс ученӑйӗ Иван Владимирович Мичурин вӗрентни биологи науки аталанӑвӗн хальхи вӑхӑтри чи ҫӳлӗ пусӑмӗ пулса тӑрать. Мичурин ӳсентӑрансен аталанӑвӗн законӗсене наука никӗсӗ ҫинче сӑнаса пынӑ. Вӑл ӳсентӑрансен ҫӗнӗ сорчӗсене ҫитӗнтерес тӗлӗшпе тунӑ пархатарлӑ ӗҫ наукӑпа практикӑшӑн калама ҫук паха открыти пулнӑ. Вӑл, ӳсентӑран мӗн чухлӗ вӑхӑт пурӑннипе кура, пурнӑҫӑн таврари условийӗсене тӗрлӗрен хӑнӑхма пултарнине тӗпчесе пӗлнӗ.

Калас пулать, вӑрманти йывӑҫсем мӗнле ӳссе аталаннин законӗсене И. В. Мичурин вӗрентӗвӗ тӑрӑх тӗпчесе вӗренмен пулнӑ. Ҫавӑнпа та ҫамрӑк ученӑй-коммунист хӑй умне вӑрман хуҫалӑхӗшӗн ҫак кирлӗ ыйтӑва тӗпчесе вӗренес задача лартнӑ. Тивӗҫлӗ материалсене пухса йӗркелеме, интереслентерекен темӑна тӗпчесе вӗренме ученӑйӑн татах вунӑ ҫул ытла тӑрӑшса ӗҫлемелле пулнӑ. Ҫак пысӑк ӗҫе вӑл пӗтӗмӗшпех пирӗнпе кӳршӗллӗ Мари республикин вӑрманӗсенче туса пынӑ. Хӑй пухса тата тӗпчесе вӗреннӗ материалсем тӑрӑх Михаил Данилович биологи наукисен докторӗ ятне илме «Возрастные изменения древесных и кустарниковых пород в свете учения И. В. Мичурина» ятлӑ диссертаци ҫырать те ӑна 1951 ҫулта СССР Наукӑсен Академийӗн Вӑрман институтӗнче ӑнӑҫлӑ хӳтӗлет.

Наукӑра нумай ҫулсем хушши ӗҫлесе, Михаил Данилович 90 научнӑй ӗҫ ҫырнӑ, вӗсенчен 60-шне пичетлесе кӑларнӑ.

Вӑл тӳремӗнех ертсе пынипе, наука работникӗсен ҫӗнӗ кадрӗсем ӳссе ҫитӗнеҫҫӗ, институтри преподавательсемпе ассистентсем наукӑра пысӑк ӗҫсем тӑваҫҫӗ.

Вӑрман промышленноҫӗ валли кадрсем вӗрентсе хатӗрлес тӗлӗшпе лайӑх ӗҫленӗшӗн Михаил Данилович Данилов профессора Совет правительстви орденсемпе медальсем парса наградӑланӑ, Мари АССР Верховнӑй Совечӗн Президиумӗ «Мари АССР-ӗнчи наукӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ» ятне панӑ.

— Ку таранччен тунӑ ӗҫ вӑл питех те ҫителӗксӗр-ха,—тет Михаил Данилович.—Пирӗн умра халӗ калама ҫук пысӑк задачӑсемпе ыйтусем тӑраҫҫӗ. Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви ҫав ыйтусене, тӗплӗн тӗпчесе вӗренсе, хӑвӑртрах татса пама хушаҫҫӗ.

Пултаруллӑ та талантлӑ совет ученӑйне, шанчӑклӑ коммуниста — Михаил Данилович Данилов юлташа Мари республикинчи парти организацийӗ Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн XIX съездне делегата суйласа янӑ.

М. Д. Данилов профессор кабинета питӗрӗнсе ларса ӗҫлекен ученӑй мар. Вӑл общественнӑй ӗҫе питӗ активлӑн хутшӑнать: темиҫе ҫул хушши ӗнтӗ Политикӑпа наука пӗлӗвӗсене сарас тӗлӗшпе ӗҫлекен Пӗтӗм Союзри обществӑн Мари республикинчи уйрӑмне ертсе пырать, халӑх хушшинче час-часах докладсем туса парать, миршӗн кӗрешекенсен Мари республикинчи Комитечӗн председателӗнче ӗҫлет. Вӑл миршӗн тӑракансен Пӗтӗм Союзри Виҫҫӗмӗш конференцийӗн делегачӗ пулнӑ.

Мари республикинчи ӗҫҫыннисем Михаил Данилович Данилов профессора кӑҫал СССР Верховнӑй Советне депутата суйларӗҫ.

Тăваткал тĕмĕн лартнă çĕрулми участокĕнчи ретсем хушшине икĕ енчен урлă-пирлĕ чĕртерсе кăпкалатаççĕ.

пур енчен те механизацилеме сĕнсе, çапла каларĕ: «Çĕрулмипе пахча çимĕçсем лартмалли малта пыракан май çине, ретсем хушшине кăпкалатассине пĕтĕмпех механизацилеме май паракан меслет çине куçмасан, эпир механизаци тĕлĕшĕпе тăракан ыйтăва татса параймастпăр. Пирĕн çавна татса памалли меслет пур-и? Пур. Ку вăл — тăваткал тĕмпе лартмалли меслет... Малта пыракан колхозсем ку меслетпе тахçанах ĕнтĕ усă кураççĕ. Мускав облаçĕнчи Серпухов районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз çĕрулмине тăваткал тĕмпе лартма 1943 çултах тытăннă».

Çĕрулмине тăваткал тĕм меслечĕпе лартнине кăтартакан кадрсенчен пуçланать те ĕнтĕ «Ешĕл тăваткал тĕмсем» ятлă кинофильм.

Акă экран çинче çĕрулмипе пахча çимĕç лартнă анлă уй-хир курăнса каять.

— Колхозсемпе совхозсен уйхирĕсенче кашни çулах миллионшар гектар çĕрулмипе пахча çимĕç лартаççĕ, вылăх апачĕ валли тĕрлĕ культурăсем акса ÿстереççĕ... Партипе правительство çак культурăсене ытларах туса илес, вĕсен тухăçлăхне хăпартас тата вĕсене пăхса ÿстерес ĕçе пĕтĕмпех механизацилес задача лартрĕç,—илтĕнет диктор сасси.

Унтан Хрущев юлташ хайĕн докладĕнче асăннă Серпухов районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозăн уйĕ курăнса каять. Уйра колхоз председателĕ Петр Гаврилович Ануфриев.

— Вăрçă çулĕсем... Фронта та, тыл валли те çĕрулми ытларах кирлĕ пулнă, анчах колхозра ĕçлекен çын çитмест... Çавăн чух ĕнтĕ вăл хайсен колхозĕнче вăрçăччен çĕрулмине тăваткаллăн лартса ÿстернине аса илнĕ,—каласа парать диктор Ануфриев çинчен. Унтан:—Мĕншĕн кирлĕ-ха тăваткалла лартни?—тесе ыйтать те, çавăнтах тăваткал тĕмĕн лартни мĕнле усă пани, колхозниксене мĕнле çăмăллăх кÿни çинчен ăнлантарма тытăнать. Экран çинче çĕрулмине тăваткал тĕмĕн мĕнле лартмаллине кăтартакан кадрсем курăнаççĕ. Фильмра çак çĕнĕ меслет пирки пит тĕплĕ ăнлантарса панă вара.

Уйрăмах пире çĕрулмине тăваткалла меслетпе лартакан СКГ-4 машина ĕçлени тĕлĕнтерет. Мĕнле çăмăллăх парать вăл колхозниксене! Мĕн чухлĕ ĕçкунĕ перекетлет çав машина! Раменск районĕнчи «Путь к коммунизму» колхоз машинисчĕ Акимфеев СКГ-4 машинăпа пĕр кунта 12,5 гектар çĕрулми лартнă. Алă вĕççĕн лартнă пулсан, çав ĕçе тума 110 çын кирлĕ пулĕччĕ, Акимфеевпа пĕрле пурĕ те 8 çын çеç ĕçленĕ. «Вперед к коммунизму» колхоз опычĕ кăтартнă тăрăх, пур ĕçе те механизацилесен, çĕрулмине лартса ÿстерме ĕç вăхăчĕ 20 хут сахалтарах кирлĕ иккен.

Çĕрулми çеç мар, ытти пахча çимĕç те — купăста, помидор, арбуз, кавăн, çырла — тăваткал тĕмĕн лартсан, пысăк тухăç параççĕ-мĕн. Ку сахал, хĕвелçаврăнăшпе кукурузăна та çав меслетпе акаççĕ. Мускав çывăхĕнчи «Вперед к коммунизму» колхозра Рожнов бригадир 1953 çулта кукурузăна силос тума тăваткалла меслетпе акнă та кашни гектартан 820-шер центнер ешĕл кукуруза вырса илнĕ. Темĕн çÿлĕш ÿснĕ çав кукуруза!

Совет конструкторĕсем кукурузăпа хĕвелçаврăнăшне тата ытти пропашной культурăсене акма тăваткал тĕмĕн акакан машина та шухăшласа кăларнă. Картина çинче çав машина мĕнле ĕçленине кăтартнă.

Картинăн иккĕмĕш пайĕнче пахча çимĕç тухăçлăхне хăпартмалли тепĕр мел çинчен аван ăнлантарса панă.

Хрущев юлташ çав мел çинчен акă мĕнле каланă: «Пахча çимĕç культурисен тухăçлăхне ÿстермелли чи кирлĕ майсенчен пĕри вăл пахча çимĕç калчине çĕрнĕ тислĕкпе торф хутăштарса тунă чÿлмексенче ÿстерни пулать. Çак паха ĕçе тума çирĕм çул каярах Эдельштейн профессор сĕннĕ».

Экран çинче Эдельштейн профессор колхозниксемпе сăмахлани курăнать.

— Парникре акса ÿстернĕ пахча çимĕç калчисене куçарса лартнă чух, темĕнле асăрханса тыткаласан та, вĕсен тымарĕсем сакăрвунă процент таран татăлаççĕ. Асăрхамасăр çăлса кăларсан, калча тымарĕсем тăхăрвун сакăр процент таранах татăлса юлаççĕ. Çапла вара калча тымарĕ пурĕ те икĕ процент çеç сыхланса юлать. Калча тымарĕсем, уя кăларса лартнă хыççăн, çĕнĕрен ÿсеççĕ, анчах вĕсене парникри пек ÿсме чи лайăх услови пулсан та икĕ эрнерен кая мар вăхăт кирлĕ. Çавăнпа та калчасем, куçарса лартнă хыççăн, шăрăх вăхăтра шанса каяççĕ, хăш чухне типсе те хăраççĕ. Торфпа çĕрĕк тăпринчен тунă чÿлмексенче лартса ÿстернĕ калчасем, чÿлмексемпе пĕрлех куçарса лартсан, лайăх çитĕнеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем хире хайсен пĕтĕм «хуçалăхĕпе»—усă курса пĕтермен тăприпех урăх çĕре куçаççĕ, çийĕнчен тата тымарĕсем те сиенленмеççĕ. Чÿлмексемпех куçарса лартнă купăста калчи, сăмахран, парниксенчен ахаль куçарса лартнă калчасенчен вунă-вунпилĕк кун маларах ÿссе çитĕнет, пысăк тухăçлăрах та пулать,—ăнлантарать Эдельштейн профессор.

Картинăра çав торфпа çĕрĕк тăпри чÿлмекĕсене мĕнле тумаллине пит аван кăтартнă.

Тĕлĕнмелле! Совет конструкторĕсем торфпа çĕрĕк тăпринчен тунă чÿлмексенче çитĕнтернĕ пахча çимĕçсене тăваткал тĕмĕн лартакан машина та шухăшласа кăларнă иккен! Иртнĕ çул çавнашкал машинăпа Мускав облаçĕнчи Красногорск районне кĕрекен «Луч» колхозра ĕçленĕ. Ку машинăпа пĕр сменăра икĕ гектар, урăхла каласан, 40.000 калчаллă чÿлмек лартса тухма пулать.

Мĕнле-мĕнле машина кăтартман çав «Ешĕл тăваткал тĕмсем» картинăра!

Акă ККВ-2 ятлă çĕрулми кăларакан комбайн. Машина çĕрулми кăларать те кăларнă улмасене сортласах пырать. Çак комбайн кунне тăватă гектар çĕрулми кăларать. Алă вĕççĕн ĕçленипе танлаштарсан, ĕç вайне вăл вунă хут перекетлет.

Акă купăста пуçтарса кĕртекен машина. Вăл иртнĕ çул Красногорск районĕнчи «Луч» колхозра лайăх ĕçленĕ. Машинăн йĕлтĕрĕсем, çĕр тăрăх шуса пырса, купăста пуçĕсене çăлса кăлараççĕ, кучанĕсене çĕççисем касса татаççĕ, вара купăста пуçĕсем ывăс çинчен конвейер çине кĕрсе, конвейер тăрăх прицеп ешчĕкне пырса тухаççĕ. Çак машинăпа сакăр сехет хушшинче икĕ гектар купăста пухса кĕртнĕ. Машинăпа пурĕ те виçĕ çын кăна ĕçлет.

Конструкторсем сарлака ретлĕ силос комбайнĕ те шухăшласа кăларнă. Вăл кукурузăна вырса, тураса пырать. Пĕр тонна ешĕл кукурузăна тăватă минут хушшинче тураса хатĕрлет!

Çак машинăсем мĕнле ĕçленине сăмахпа каласа ăнлантарма та йывăр, вĕсем мĕнле ĕçленине картина çинче курмалла.

Картинăн юлашки пайĕнче Мускав облаçне кĕрекен Мытищи районĕнче пулса иртнĕ ялхуçалăх выставкине кăтартнă. Выставкăра пахча çимĕç ÿстерекенсен ăсталăхне кăтартакан экспонатсем нумай. Тăваткал меслетпе лартса ÿстернин усси кунта та лайăх палăрать. Сăмахран, «Память Ильича» ятлă колхозра юлашки çул пĕр гектартан 256 центнер помидор пухса илнĕ. Тăваткал меслетпе лартса ÿстернĕ купăста 458 центнер тухнă.

Мытищи МТС-ĕн директорĕ Акулинин юлташ выставка курма пынă çынсемпе калаçнине итлеме те пит аван:

— Хрущев ячĕпе хисепленекен колхозри пахча çимĕç бригадинче 15 çын çеç ĕçленĕ, анчах вĕсем кăçал 20 гектар çĕрулми, 11 гектар купăста лартса ÿстернĕ. Çак ĕçе алă вĕççĕн тунă пулсан, 1500 ĕçкунĕнчен кая мар кирлĕ пулнă пулĕччĕ,—тет Акулинин.

Выставкăра çĕрулмине тăваткал тĕмĕн лартса ÿстернин усси питĕ пысăк иккенĕ курăнать. Можайск районĕнчи Крупская ячĕпе хисепленекен колхозра çĕрулмине тăваткал тĕмĕн лартса, кашни гектартан, яланхи шайпа танлаштарсан, 468 пăт ытларах пуçтарнă. Тăваткал тĕмĕн лартни колхозниксен ĕçне çăмăллатнине «Бородино» колхозăн ĕçĕнче те лайăх курма пулать: вĕсем 1948 çулта, çĕрулмине ахаль майпа лартса, гектартан 531-шер центнер пухнă, 1953-мĕшĕнче вара, тăваткал тĕмĕн лартса, 542-шер центнер пухнă. Уйрăмĕ пысăках та мар пек, анчах ĕлĕк пĕр гектар çĕрулми пухма пĕр çын 34 кун хушши ĕçленĕ чухлĕ вăй хунă пулсан, халĕ çав ĕçе тума пурĕ те 6 ĕç кунĕ çеç кирлĕ.

Тăваткал тĕм меслечĕпе лартни ĕç кунне чылай перекетлет иккен. 1953 çулта çак меслетпе ĕçлесе, Мускав облаçĕнче çеç пĕр çын 2.000.000 кун ĕçленĕ чухлĕ вăй перекетленĕ. Çак ĕçе пĕтĕм Совет Союзĕпех тата çĕр проценчĕпех механизацилесен, мĕн чухлĕ ĕç вăйĕ, мисе çĕр миллион ĕç кунĕ перекетлеме пулать...

«Ешĕл тăваткал тĕмсем» кинокартинăра кăтартнă усăллă ĕçсем çинчен пĕтĕмпе каласа париччен çакна пĕлтермелле: ку фильма кашни колхозникĕн хайĕн курма тăрăшмалла. Мускаври научнăй фильмсем ÿкерекен киностуди пит усăллă, пит вăхăтлă туса кăларнă çак картинăна. Çак картинăн сăмахĕсене чăвашла куçарни те питĕ кирлĕ, пархатарлă ĕç.

И. МАКСИМОВ-КОШКИНСКИЙ.

К. В. ИВАНОВ СОЧИНЕНИЙĔСЕНЕ ЛАЙĂХРАХ КĂЛАРАР

Илемлĕ чĕлхепе çырнă тарăн шухăшлă кĕнекесене миçе хут кăна вуламастăн, кашнинчех вĕсен шухăшĕпе илемне, пуянлатса тăракан ытарайми енĕсене çĕнĕрен çĕнĕ хут тупса савăнатăн. Константин Васильевич Ивановăн «Нарспи» поэми те çавăн йышши классикăлла произведенисен шутне кĕрет. «Нарспи» поэмăн кашни йĕрки шухăшпа илем тĕлĕшĕнчен шутсăр пуян. Поэма авторĕ кашни сăмаха тенĕ пекех питĕ вырăнлă та пĕртен-пĕр тивĕçлĕ формăпа каланă. Çавăнпа поэма сăмахĕсене пĕрне те улăштарса пăсма юрамасть.

Илер, сăмахран, поэмăн чи малтанхи йĕркисене:

Пуш-уйăхăн вĕçĕнче
Хĕвел пăхрĕ ăшăтса,
Силпи чăваш ялĕнче
Юр ирĕлчĕ васкаса,—

тесе çырма тытăннă К. В. Иванов хăй поэмине.

Поэт кунта пуш-уйăх вĕçĕнче Силпире çуркунне пулма тытăнни çинчен хăй шухăшне: Силпи ялĕнче çуркунне пуçланчĕ, тесе каласа памасть, ун вырăне вăл чи малтанах çурхи кунсен сăнне ӳкерсе кăтартма тытăнать: хĕвел пăхрĕ ăшăтса, юр ирĕлчĕ васкаса, тет. Çакăнпа вăл вулакана çурхи кунсене хăй куçĕпе курмалла туса хурать.

Мĕншĕн тата поэт çуркуннехи малтанхи уйăха март уйăхĕ темест, пуш-уйăх тет? К. Иванов «Нарспи» поэмăна 1906—07 çулсенче çырма тытăннине пĕлетпĕр эпир. Ун чухнехинчен чылай малтан чăвашсем вăхăта, уйăх календарьне пăрахса, хĕвел календарĕпе шутлама тытăнни те пиреншĕн паллă. Поэт çапах та март вырăнне пуш-уйăх, тет. Мĕншĕн?—Мĕншĕн тесен К. Иванов «Нарспи» поэмăра Российăри малтанхи буржуалла-демократилле революци вăхăтĕнчи хăйĕн шухăшĕсене палăртса çырнă пулин те, форма тĕлĕшĕнчен вăл чăваш халăхĕн авалхи пурнăçне предани тăрăх илтсе кăтартнă пек тăвать.

Выртрĕ хĕсĕк тупăка,
Ячĕ юлчĕ ял çинче.
Ун хурлăхлă юррисем
Юлчĕç çынсен асĕнче,—

тет поэт Нарспи çинчен поэмăн юлашки йĕркисенче.

Ку тĕслĕхрен пуçне поэмăн тепĕр кĕске çеç сыпăкне — К. В. Иванов Нарспи амăшĕн характерне амăш сăмахĕпех сăнласа кăтартакан тăватă йĕркене—сăнаса пăхар. Нарспи ашшĕпе амăшĕ Сетнерсен килне, хăйсен хĕрне ӳкĕтлесе, ăна хăйсемпе пĕрле илсе кайма пырсассăн, амăшĕ хăй сăмахне çапла пуçлать:

Пирĕн Нарспи ку пӳртре
Çук-ши тесе килтĕмĕр.
Ялти ырă çынсенчен
Кунта тесе илтрĕмĕр,—тет.

Сăмахсен пĕлтерĕшне çиелтен çеç ăнланса вуласан, ку сыпăкра картинăллă сăмахсем çук пек курăнать, карчăк сăмахне питĕ çăмăл ăнланмалла пек туйăнать. Анчах эпир хамăртан хамăр: карчăк мĕншĕн «Нарспи ку пӳртре çук-ши» тес вырăнне, «Нарспи сирĕн патăрта çук-ши тесе килтĕмĕр» тенĕ-ши? тесе ыйтсассăн, Михетерпе карчăк Сетнерсен килне мĕнле вăрттăн шухăшпа пыни уççăнах курăна пуçлать. Чи малтанах вĕсем, мăнкăмăллă пуянсем, Сетнерпе амăшĕ пек чухăнсемпе хутшăнма юратманни палăрать. Тепĕр енчен, вĕсем çурт хуçисем патне мар, чухăнсен çуртне ирĕксĕртен пыни çинчен ытарлăн пĕлтерни, килнĕ çынсем, çурт хуçисенчен ютшăнса, вĕсем патне кирек мĕн каласан та ырă мар шухăшпа пынине асăрхаттарса, систерсе пĕлтерет. Ахальтен мар автор ку картинăра Сетнерпе ун амăшне, тăшманла пуянсем пырса кĕрсессĕн, çăвар та уçтармасть.

Пуянсем Сетнерсем патне курайман пырса кĕни карчăкăн малалли сăмахĕсенчен те уççăн илтĕнет. «Ялти ырă çынсенчен кунта тесе илтрĕмĕр» тени хăех ĕнтĕ килнĕ çынсем çурт хуçисене ырă çынсен шутне кĕртменни çинчен пĕлтерсе шухăшлаттарать.

Илсе кăтартнă икĕ тĕслĕх «Нарспи» авторĕ халăх чĕлхипе мĕн тери лайăх усă курма пĕлни çинчен калать. Çавăнпа пирĕн К. В Ивановпа Çеçпĕл Мишши чĕлхине малашне те çине тăрсах тĕпчесе вĕренмелле, халăх чĕлхипе вĕсем пекех ăста усă курма хăнăхса çитмелле. Вĕсен произведенийĕсене пичетлесе кăларнă чухне пĕр запятойне те кăлăхах улăштарса, шухăша пăсмалла мар. Анчах, чăннипе, «Нарспи» поэма 1908 çулта малтанхи хут пичетленсе тухнăранпа, изданирен издание пырса, ун текстĕнче чылай пысăк улшăнусем палăрма тытăнаççĕ, хăшпĕр тĕлне тӳсме çук пăсни те курăна пуçлать.

«Нарспин» малтанхи йĕркинех илсе пăхар. К. В. Иванов ăна «пуш-уйăхăн вĕçĕнче» тесе çырнă пулнă. «Пуш-уйăх» ятне дефиспа çырни, пĕр енчен, ку ят пушкăрт чăвашĕсен чĕлхинче ĕлĕкех уйрăлми ăнлану пулса тăнине кăтартать, тепĕр енчен, «пуш, пушă» сăмах, омонимпа* калас пулсан, чăпăрккана мар, ирĕк тенĕ сăмаха е темле урăх япалана: уйăх календарĕнчи 29 кунлă уйăх ятне-и унта е монгол чĕлхинчен кĕнĕ çулталăкри 8-мĕш уйăх çăлтăрĕсен ушкăнне-и (созведине) пĕлтернине палăртать. Анчах 1921 çултан пуçласа 1951 çулчченех ку сăмаха хăшпĕр изданисенче «пуш уйăхĕн» тесе çырнă.

Поэмăн иккĕмĕш пайĕнче К. Иванов Нарспи çинчен «Е хултăрчă тытать те, çипне тиет çĕррине» тенĕ пулнă. 1930 çултанпа ку йĕркене, тĕрĕс ăнланмасăр, «çипне тирет çĕррине» теме тапратнă.

Çак пайрах 109—112-мĕш йĕркесене поэма авторĕ тĕне кĕмен чăвашсен икĕ тĕрлĕ праçникне уйăрма пĕлсе:

Çинçе хăçан çитĕ-ши?
Епле вăхăт ирттерес?
Çимĕк кунĕ инçе-ши?
Епле унччченех тӳсес?—тесе çырнă пулнă.

1935 çултан пуçласа редакторсем ку уяв кунĕсене уйăрма пăрахнă та, иккĕшне те пĕр пек: «Çимĕк хăçан çитĕ-ши? Çимĕк кунĕ инçе-ши?»—теме пикеннĕ.

Шухăша пăсакан çакăн йышши йăнăшсем, çултан-çул пухăнса пырса, юлашки изданисенчен пĕринче вунтăватта-вунпиллĕке çитрĕç: «Нарспи ялтах вăранать» тес вырăнне редакторсем: «Нарспи йăлтах вăранать», «Аяккаллах ку ялтан» вырăнне «Аяккалла ку ялтан», «Ĕнтĕ киле тарас, тет» вырăнне «Ĕнтĕ киле каяс, тет», «Амăшĕпе Сетнер те килне утрĕ хуйхăрса» вырăнне «...килне утрĕç хуйхăрса», «Е, е усал» вырăнне «Э, э, усал», «Эй аттеçĕм, çамрăк чун мĕншĕн патăр хĕрĕре?» вырăнне «Эй, аттеçĕм, пурнăç мар савман каччă килĕнче» теме тытăнчĕç тата ытти пăтраштарусем те сахал мар.

Чăн та, «Нарспи» поэма текстĕнче хальхи вулаканшăн, уйрăмах çамрăксемшĕн, ăнланма йывăртарах сăмахсем, ятсем, сăмах çаврăнăшĕсем тĕл пулаççех ĕнтĕ. Чĕмпĕрте пичетленнĕ малтанхи издание корректура йăнăшĕсем те тĕл пулаççĕ. Анчах уйрăм вырăна ăнланманни е малтан пичетленĕ чухне тунă йăнăш, паллах, классикăлла произведение малалла та пăсса пичетлемеллине ним чухлĕ те пĕлтермест. Çавăнпа та Чăвашсен наукăпа тĕпчев институчĕ умне çак çулсенче «Нарспи» поэмăна кăна мар, К. В. Иванов произведенийĕсене пурне те, оригиналсем тăрăх тĕрĕслесе тухса, хальхи орфографи правилисем тăрăх тĕрĕс çырмалли текст туса парас задача тухса тăчĕ.

Оригиналсем тăрăх тĕрĕслемелле, терĕмĕр эпир. Анчах институт аллинче К. В. Ивановăн 1906 çулта çырса пынă дневникĕ копийĕнчен пуçне тата пĕр тăванĕ патне янă çырăвĕнчен пуçне урăх нимĕнле оригиналлă алçыру та çук. Çавăнпа институт академилле издание малтанлăха 1908 çулта Чĕмпĕрте пичетленсе тухнă, поэт хăй пичетлеме майлаштарнă икĕ кĕнеке тăрăх хатĕрлеме тытăнчĕ. Ку икĕ кĕнекене К. Ивановăн çак произведенийĕсем кĕнĕ: «Сказки и предания чуваш—Чăваш халлапĕсем» ятлă кĕнекене «Икĕ хĕр» (3 стр.), «Тимĕр тылă» (3—8 стр.), «Тăлăх арăм» (8—10 стр.) ятлă юмахсемпе «Нарспи» поэма (66—98 стр.): «Песня про царя Ивана Васильевича, молодого опричника и удалого купца Калашникова и другие стихотворения М. Ю. Лермонтова»—«Иван ĕмпӳпе çамрăк сыхлавçă, тата саттур Калашник хуça çинчен хунă юрă» ятлă кĕнекене (6—22 стр.) «Юрă умĕнчен каланă сăмах» (3—6 стр.), тата М. Ю. Лермонтовăн «Ангел» («Пирĕшти»—22—23 стр.) «Парус» («Парăс»—23 стр»), «Волны и люди» («Хумсемпе çынсем»—24 стр.), «Утес» («Чул ту»—24 стр.), «Горные вершины» («Тусен тăррисем»—24 стр.), «Чаша жизни» («Пурăнăç курки»—24—25 стр.), «Узник» (Тĕрме çынни»—25 стр.) ятлă, К. В. Иванов куçарнă сăвăсем.

Ку произведенисенчен пуçне К. В. Иванов сочиненийĕсен сборникĕсенче çакăн пек произведенисем пичетленеççĕ: К. Ивановăн 1907 çулхи дневникĕ (записной тетрачĕ) тăрăх пуçласа 1936 çулта «Хĕрлĕ Урал» альманахра, унтан 1937 çулта Епхӳре тухнă «Пĕр том» ятлă кĕнекере Ухсай Яккăвĕ пичетлесе кăларнă «Шуйттан чури» ятлă трагеди сыпăкĕсем, тата «Выçă аптранисем», «Усал шăрăх», «Ватă вăрман шухăшĕ», «Кĕркунне», «Сăпка юрри» ятлă пĕчĕк сăвăсем. Ку произведенисене малтанхи хут пичетлеме хатĕрленĕ чух ятарласа çырнă статьяра Я. Ухсай çавсен оригиналĕсем унăн аллинче пулнă пек туса палăртнăччĕ, «Пирĕн алăри алçырăвĕ» тенĕччĕ вăл статьян пĕр тĕлĕнче («Пĕр том» кĕнекен 155 стр.), «Пирĕн алăри тетрадь» тенĕччĕ тепĕр тĕлĕнче (çав кĕнекерех 162 стр.). Çавăнпа ку пĕр вăхăталлах икĕ кĕнекере пичетленсе тухнă произведенисене пĕр-пĕринпе танлаштарса пăхнă хыççăн, вĕсенче пысăк уйрăмлăхсемех тупăнмасассăн, ирĕксĕрех: вĕсене тĕрĕс пичетлесе кăларнă, тесе ĕненме пулать пулмалла, мĕншĕн тесен 1907 çулхи дневник алçырăвĕ те институт аллинче çук халĕ. Я. Ухсай ăна — хăйне вăхăтлăх усă курма панă çынна калле тавăрса патăм, тет. Апла-и, капла-и,—К. Ивановăн ку алçырăвне те пирĕн малашне пикенсех шырамалла пулать

Ку произведенисемсĕр пуçне К. В. Иванов сочиненийĕсен шутне «Хальхи самана» ятлă пысăк сăвă, ача-пăча валли çырнă «Чĕкеç», «Çулталăк хушши» ятлă пĕчĕк сăвăсем, Н. А. Некрасовăнне куçарнă «Выçă юрă», «Хресчен çынни хĕрсессĕн» сăвăсем, А В. Кольцовăнне куçарнă «Тӳпене хĕвел», «Сивĕ çил вĕрет» ятлă сăвăсем кĕреççĕ. Çак произведенисен оригиналĕсем те институтра çук. Вĕсенчен «Хальхи саманана» К. В. Иванов 1908 çулта, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ 40 çул тултарнă ятпа çырнă пулнă. Чи малтан ăна «Сунталăн» 1940 çулхи 6-мĕш номерĕнче пичетленĕ.

Çапла ĕнтĕ, К. В. Ивановăн чи паллă произведени оригиналĕсенчен пĕри те Чăвашсен наукăпа тĕпчев институтĕнче çук. Институт аллине кĕмен те вĕсем. Анчах ку пĕрре те вĕсем халиччеченех пĕр-пĕр уйрăм çын аллинче е пĕр-пĕр учреждение упранса выртманнине пĕлтермест-ха.

К. В. Ивановăн литература наследстви пирки унăн йăмăкĕсем Мария Васильевнăпа Пелагея Васильевна пире 1940 çулта çапла каласа кăтартнăччĕ.

«Çырнă япаласем нумайччĕ пиччен, пĕр чылаях пысăк арчаччĕ. Арчин тăршшĕ пĕр виçĕ шит ытла, урлăшĕпе çӳлĕшĕ икĕ шите яхăнччĕ... Пьесăсем нумайччĕ... Пĕр тетрадĕнче чӳк кĕллисене çырса илнисем пурччĕ. Вĕсене вăл Кайраклăри Макçăм старик-

---

* Омоним—пĕр пек илтĕнекен, анчах тĕрлĕ япалана пĕлтерекен сăмах; тĕслĕхрен, „çул“ сăмах çулталăка та, çулйĕре те, утă çулассине те пĕлтерет.

рен ҫырса илнӗччӗ пулас. Асаннерен те ҫапла: ӗлӗкхи пуӑнӑҫ ҫинчен каласа пар-ха, тесе ыйтаыйта пӗлсе ҫырнисем чылайччӗ», тенӗччӗ аслӑ йӑмӑкӗ Мария Васильевна.

Парасковья Васильевна тата тӗплӗрех ҫапла каланӑччӗ:

«Константин Васильевич алҫырӑвӗсенчен пирӗн алӑра халӗ нимӗн те ҫук. Вӗсенчен пӗр пайне граждӑн вӑрҫи вӑхӑтӗнче пирӗн киле темле салтаксем кӗрсе илсе тухса кайнӑ. Килте вӑл вӑхӑтра анне кӑна пулнӑ. Вӑл каланӑ тӑрӑх, салтаксем ытти япаласене ним те тивмен, шкапсемпе сӗтел сунтӑхне уҫса, тӗрлӗ хутсене кӑна пӗр ҫӗклем илсе тухса кайнӑ.

Алҫырусен тепӗр пайне 1920 ҫулсенче Уфари педтехникум преподавателӗсене парса янӑ.

Виҫҫӗмӗш пайне 1925—26 ҫулсенче, хам Саратоври университетра вӗреннӗ чухне медфакра вӗренекен пӗр Сергеев ятлӑ студента каникула, килне, Чӑваш республикине, кайнӑ чухне, Шупашкара парса ярсаттӑм эпӗ. Каникултан таврӑнсан, вӑл вӗсене Захарова патӑм тесе каларӗ.

Ку ушкӑнта ҫапла алҫырусем пурри́не астӑватӑп: 1) «Нарспи» поэмӑн те черновикӗсем, те вариаичӗсем,—татӑклӑн калаймастӑп: вӗсене листан саккӑрмӗш пайӗ пысӑкӑш хутсем ҫине хура кӑранташпа питӗ вак почеркпа ҫырнӑччӗ; пурӗ миҫе листа пулнине астумастӑп; 2) «Пӗчӗк Унеҫ» ятлӑ поэма сыпӑкӗсем; 3) «Ӗҫҫынни» ятлӑ сӑвӑ; ку сӑвӑ ҫапла сӑмахсемпе вӗҫленсе пӗтетчӗ:

«Анчах паян, тӑванӑм,
Ҫӑкӑр лекни ҫӑварна?»

4) «Шуйттан чури» ятлӑ вӗҫленмен поэма; 5) Унтах тата «Песнь песней» поэмӑна куҫарнӑ пысӑк, ҫур листа формиллӗ тетрадь те пурччӗ пулас», тенӗччӗ*.

Ҫак сӑмахсенчен эпир мӗн куратпӑр-ха?

1. Кӗнекесенче пичетленекен произведенисенчен пуҫне К. В. Ивановӑн ҫырса хатӗрленӗ произведенисем тата та питӗ нумай пулнӑ пулать. Хӑшпӗрисем: К. В. Иванов хӑй произведенийӗсене 1908 ҫулта пичетлесе кӑларнӑ хыҫҫӑн урӑх нимӗн те ҫырман, теме пӑхаҫҫӗ. Кун пек калани пысӑк йӑнӑш пулма пултарать, вӑл ун произведенийӗсене ҫырас кӑмӑла пусарать кӑна. Пӗрре ҫырма хӑнӑхнӑ пысӑк ӑста хӑйӗн чун-чӗринчи вӗресе тӑнӑ урӑмсурӑм хӗрӳ шухӑш-туйӑмне епле меслетпе, ҫынна каламасӑр, хӑйӗн ӑшӗнчех тытса тӑма вӑй ҫитерме пултарнӑ пултӑр? 1908 ҫул хыҫҫӑн реакци тапхӑрӗнче те ҫырнах вӑл. Анчах хӑйӗн лӑпкӑ характерне пула, 1906—1908 ҫулсенчи пысӑк ӗҫӗсем ҫинчен вӑхӑт ҫитиччен никама та каламан пекех, кайранхи ӗҫӗсем ҫинчен те вӑл хӑйӗн сывӑх тусӗсене те пӗлтермен. Ҫырнине пичетлесе кӑларма вара, 1908 ҫул хыҫҫӑн, урӑх май пулман. Пӗлнӗ ҫынсем каланӑ тӑрӑх, чирленӗ чухне те уӑн минтерӗ айӗнче тем хулӑнӑш тетрадь выртнӑ.

2. Анчах ҫырнӑ произведенийӗсем «Нарспи» авторӗн, революциллӗ самана тапранса кайнине пула, килӗнче нумайччен сыхланса выртайман, тӗрлӗ ҫынсен алли тӑрӑх сапаланса пӗтнӗ. Ку произведенисем пурте ҫухалса пӗтнӗ тесе шутлама пултараймастпӑр эпир. Вӗсем уйрӑм ҫынсен аллинче те, государство архивӗсенче те упранса выртма пултараҫҫӗ.

Пирӗн задача — культурӑллӑ совет ҫыннисен пурин те пысӑк тивӗҫӗ — чӑваш халӑхӗшӗн кӑна мар, пӗтӗм совет халӑхӗшӗн ҫак калама ҫук хаклӑ пуянлӑха, пӗрчӗн-пӗрчӗн шыраса тупса, халӑха калле тавӑрса парасси пулса тӑрать.

К. В. Иванов сочиненийӗсене академилле издани валли хатӗрленӗ май Чӑвашсен наукӑпа тӗпчев институчӗ пуринчен малтан чӑваш учителӗсене, писательсене журналистсене, врачсене, агрономсене, культура фронтӗнчи ытти пур ӗҫлекенсене те ҫак ӗҫе хастарлӑн хутшӑнма чӗнет. Чӑваш литературин никӗсне хывнӑ поэтӑн, чӑваш халӑхӗн литературӑлла чӗлхине пуҫарса янӑ талантлӑ ҫыннӑн пӗр алҫырӑвне те ҫухатас марччӗ, ун сочиненийӗсен академилле изданийе хӑйне тивӗҫлӗ пысӑк пахалӑхпа хатӗрлесе кӑларасчӗ!

К. В. Иванов алҫырӑвӗсем ҫинчен мӗн чухлӗ те пулин пӗлекен юлташсене, вӗсене хӑйсен аллинче усраса пурӑнакансене е ҫӗнӗ копийӗсене те пулин шыраса тупакансене пурне те Института ҫак адреспа тӗплӗн ҫырса пӗлтермелле: г. Чебоксары, ул. Чернышевского, д. 5, Научно-исследовательскому институту языка, литературы и истории.

Н. ДАНИЛОВ,
Наукӑпа тӗпчев институчӗн научнӑй сотрудникӗ.

* „Чӑваш Коммуни" хаҫат, 1940 ҫул, № 224.

Чӑвашсен государство юрӑпа ташӑ ансамблӗ кӑҫалхи март, апрель тата май уйӑхӗсенче Карпат леш енчи Украинӑра гастрольре пулчӗ. 75 кун хушшинче ансамбль Львов, Дрогобыч, Мукачев, Ужгород, Черновицы, Каменец-Подольск тата ытти хуласенче, пӗтӗмпе 33 ҫӗрте, концертсем пачӗ.

Ансамбль ирттернӗ 84 концерта 60 пин ҫын ытла пырса курнӑ.

Ӳ к е р ч ӗ к р е: Чӑвашсен государство юрӑпа ташӑ ансамблӗн артистки Тамара Чумакова.

П. Ефремов фотоӳкерчӗкӗ.

ВУЛАКАНСЕМ ҪЫРАҪҪӖ

„КИТАЙ ХАЛӐХ ЮМАХӖСЕМ"

Чӑваш АССР государство издательстви «Китай халӑх юмахӗсем» ятлӑ кӗнекене ачасем валли пичетлесе кӑларчӗ.

«Китай халӑх юмахӗсене» ӑнланмалла та ҫӑмӑл чӗлхепе куҫарнӑ. Унта мӗнпурӗ ҫичӗ юмах. Вӗсене пурне те ӳкерчӗксемпе илемлетнӗ. Кӗнекери юмахсем Китай халӑхӗ нумай ӗмӗр хушши пусмӑрта пурӑнса, феодализмпа буржуазие хирӗҫ кӗрешсе, ӑна ҫӗнтерни ҫинчен калаҫҫӗ.

Илсе пӑхар «Ли ятлӑ тӑвансем» юмаха. Кунта пӗр хӗрарӑмӑн Ли ятлӑ ывӑлӗсен сӑнарӗпе пӗтӗм Китайри чухӑнсен туслӑхне, вӗсем яланах хӑйсен паттӑр кӗрешӗвӗнче пӗр-пӗрне пулӑшса пынине кӑтартнӑ. Вутра та ҫунман, шывра та путман, хӗҫ те витмен паттӑрсем пиллӗкӗн пӗр тӑван пулнӑ. Вӗсем, хӑйсен «Аслӑ пуҫлӑхне» хирӗҫ кӗрешсе, ӑна ҫӗнтереҫҫӗ. Ку вӑл Аслӑ Китай халӑхӗн пысӑк ҫӗнтерӗвне кӑтартакан сӑнар.

«Дракона парнеленӗ хӗр» юмах та ҫавпашкалах ҫӗршыва пусмӑрласа пурӑнакан манахсене хирӗҫ кӗрешни ҫинчен калать.

Китайра авалтанпах тӗшмӗшлӗх вӑйлӑ пулнӑ. Ҫавна пула юханшывсем ҫывӑхӗнчи чи лайӑх ҫӗрсене манахсем хӑйсен аллинче тытса тӑнӑ. Тӗн йӑлине сарса, вӗсем халӑха хӑратса, пӑхӑнтарса пурӑннӑ, хӑйсемшӗн ӗҫлеттернӗ.

Юмах манахсене вӗлерсе пӗтернипе вӗҫленет. Ку ӗнтӗ Аслӑ Китай халӑхӗ тӗн пусмӑрӗнчен яланлӑхах ирӗке тухнине тата пусмӑрҫӑсен асапӗнчен хӑтӑлса малалла, социализмӑн аслӑ ҫулӗпе аталанса пынине ҫирӗплетсе парать.

Кӗнекери ытти юмахсем те нумай миллионлӑ Китай халӑхӗн пусмӑрти пурнӑҫне, вӗсем мӗн ӗмӗртенех ҫав пусмӑртан ирӗке тухма ӗмӗтленсе паттӑррӑн кӗрешнине тата хӑйсен ӗнси ҫинче пуйса пурӑннӑ пусмӑрҫӑсене тӗп туни ҫинчен каласа параҫҫӗ.

Кӗнекери юмахсем тематика тӗлӗшӗнчен пӗр-пӗрнипе тачӑ ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ. Пирӗн ҫамрӑк ӑру, уйрӑмах кӗҫӗн шкул ҫулӗсенчи ачасем, ӑна пысӑк интереспе тата хавасланса вулаҫҫӗ. «Китай халӑх юмахӗсем» ача-пӑчасемшӗн питӗ аван та кирлӗ кӗнеке.

И. ПЕТРОВ.

ЮПТАРУСЕМ

Сергей МИХАЛКОВ

ХУДОЖНИК СЛОН

Художник Слон пӗррехинче
Пейзаж ӳкернӗ шурӑ пир ҫине.
Ана выставкӑна ӑсатиччен,
Шутланӑ кӑтартма тусӗсене—
Тен, вӑл пит ӑнӑҫлах тухман?
Туссем килсен, Слон савӑннӑ чунтан.
Мӗн калӗҫ-ши вӗсем?
Тен, мухтӗҫ? Е пӑрахӗҫ тиркесе?
Станок ҫинчен сирет вӑл каркӑҫне,
Туссем пӑхма пуҫлаҫҫӗ картинне.
«Ну, мӗн калас?—тет Крокодил,—
Аван пейзаж! Анчах ӑҫта-ха Нил?»
«Нил мӗн вӑл!—тет Тюлень ӑна
пӳлсе,—
Шур юр ӑҫта? Ӑҫта пӑрсем?»
«Тӑхта эс!—тет Арлан ӑна,—
Е тӗнчере сив пӑр кӑна?
Художник маннӑ пахчана!»
Сысна хӑрт-хӑрт! туса илет:
«Картинӗ питӗ чаплӑ!—тет.—
Анчах сыснасем пек пӑхсан,
Аванччӗ икелсем пулсан».
Слон ҫаксене шута илет йӑлтах,
Алла вӑл сӑр тытать татах,
Мӗнпур тусне юрас тесе,
Сӑрлать слон кисчӗпе сӗрсе:
Ак Нил, ак пӑр, ак шурӑ юр,
Пахча та, ват юман та пур;
Ак пыл выртать юхса,
(Картин курма Упа килес пулсан...)
Йӑлт хатӗр халь. Тусӗсене
Слон тепӗр хут чӗнет.
Лешсем пӑхаҫҫӗ те вара,
Калаҫҫӗ харӑс: «Мыскара!»

Юлташӑм! Ҫав Слон пек ан пул,
Ҫын канашне пӗлсе итле!
Айван ҫине эс алӑ сул,
Ӗҫӳ сан пулмӗ камитле.

ПӖЧӖК ВИНТ

Машина кустӑрми пӗррехинче
Ҫапла каланӑ хӑй ҫинчен:
«Мӗнле мӑнаҫлӑ эп! Мӗн чул хӑват!
Эп ҫаврӑнап та—
пурте ҫаврӑнать!
Пуриншӗн те ӗҫлетӗп пӗчченех!»
Анчах та, ҫак сӑмах ҫинех,
Пӗр Винчӗ хуҫӑлнӑ машинӑра,
Мӑн кустӑрма карт! туртӑннӑ вара,
Унтан, хуллен вӑйсӑрланса,
Вӑл ларнӑ чарӑнса.

Ку юптару ҫакна асилтерет:
Пур ӗҫ те хӑш чухне
Пӗчӗк Винтран килет!

ӲСӖР МУЛКАЧ

Пӗр Чӗрӗп мӗнелник ятне
Хӑна-вӗрле пуҫтарнӑ хӑй патне;
Шыв евӗр юхнӑ эрехпе сӑра.
Мулкач та пулнӑ хӑнара.
Вӑл сӗнессе питех кӗтсе ларман,
ҫине-ҫинех
пушатнӑ черккине,
унтан,
Йӑлтах ӳсӗрӗлсе ҫитсен,
Аран ҫӗкленнӗ те вырӑнӗнчен,
Каланӑ: «К-кайрӑмӑр к-киле!»
«Тупайӑн-ши килне?
Епле хавшак эс! — тенӗ Чӗрӗп хӑнине.—
Вырт ҫывӑрма, урӑличчен
Пӗтен эс вӑрманта пӗччен:
Унта пур, теҫҫӗ, Арӑслан!»
Анчах та Мулкача чарма пулман:
«Мӗскер вӑл Арӑслан?! Унран хӑратӑп-и?
Хӑйне ҫисе яратӑп эп.
Тавай ӑна кунта!.. Ҫитет тӳссе!
Ун ҫичӗ хут тирне сӳсе,
Халех ӑсатӑп эп ӑна
Африкӑна!..»
Шӑв-шавлӑ кил-ҫуртран тухса,
Уттарнӑ Чалӑш Куҫ сухӑрашса,
Ян! кайнӑ ҫӗрлехи вӑрман:
«Ха, тупнӑ тискер кайӑк — Арӑслан!
Ун пекне мар эпир тытса шакканӑ!»
Ҫакна илтсен, хай Арӑслан вӑраннӑ.
Вӑл, чӑтлӑха ҫитсессӗн, Мулкача
Кап! ярса тытнӑ ҫухаран.
«А, эс-и, ку, тӑмсай, тӳлек каҫа
Пӑсса, йӗркесӗр ҫухӑран?
Тӑхта, эс ӳсӗр пулмалла—
Кӳпсе тултарнӑ ирсӗр япала!»
Мулкач сасартӑк кайнӑ урӑлса.
Сӑлтав шыра пуҫланӑ хӑтӑлма:
«Эп мӗн... Эсир... Сире атте пулса,
Ирӗк парсамӑр калама!..
Каҫарӑрсам мана! Эп пултӑм хӑнара,
Унта, чӑнах та, сыпрӑм ытларах,
Анчах та Сирӗн сывлӑхшӑн тесе!
Тата ачӑрсемпе мӑшӑрӑра
Чунтан хисеплесе!—
Епле ӳсӗрлес мар, ара!»
Чӗрнисене пытарнӑ Арӑслан,
Ҫапла каппайчӑк хӑтӑлнӑ унран!
Эрех ӗҫмен ҫак Арӑслан, савман ӳсӗрсене,
Анчах юратнӑ... йӑпӑлтисене.

А. Кӑлкан куҫарнӑ.

ЯЛАВ № 5 (101)
М А Й — 1954

ЕЖЕМЕСЯЧНЫЙ ЛИТЕРАТУРНО-ХУДОЖЕСТВЕННЫЙ И ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКИЙ ЖУРНАЛ СОЮЗА СОВЕТСКИХ ПИСАТЕЛЕЙ ЧУВАШИИ
ИЗДАТЕЛЬ: ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО.

Редколлегия: А. Эсхель (отв. редактор), Л. Агаков, А. Артемьев, В. Долгов, Н. Ильбеков, К. Сергеев-Турхан, П. Хузангай.

Рукописи не возвращаются. Тех. оформление Н. Степанова.

НТ 00045. Подписано к печати 19/V-54 г. Объем 5,165 п. л. Заказ 1264. Тираж 4950 экз. Цена 2 руб.

Адрес редакции и издательства: Чувашская АССР, г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. Телеф. № 8—36.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.

ЁҪРИ ХУЛА

И. Степанов *музыки.* Н. Евстафьев *сăвви.*



Шупашкар хули ҫинчен
Самолет вĕҫсе иртет.
Анлă Атăл леш енчен
Сарă хĕвел ҫĕкленет.
Советсен ҫурчĕн тăрри
Ылттăн пек ҫиҫсе тăрать.
Пур ҫĕрте те ĕҫ юрри—
Савăк юрă янăрать.

Шупашкар каччи маттур,
Пур ĕҫре те пултарать.
Вĕренет вăл каҫхине,
Кăнтăрла вăл заводра.
Питĕ кăткăс аппарат
Аслă стройкăсем валли
Ҫĕршыва туса парать
Шупашкар ҫыннин алли.

Шупашкар хĕрĕ — пике,
Вăл пир-авăр цехĕнче
Ҫип арлать те—ҫĕр йĕке
Ҫаврăнать ун аллинче.
Шурă кăтай тĕртнĕ чух —
Унăн ĕҫĕ чи пахи,
Чăлха-тавар ҫыхнă чух—
Чи илемли ун чăлхи.

Атăл ҫинче пăрахут—
Хумĕ юлать хыҫала.—
Кăшкăртать те виҫĕ хут
Иртсе каять тăвалла.
Хулан тепĕр хĕрринче
Пăравусĕ сас парать,
Шупашкар пĕлĕтĕнче
Хурҫă кайăк ярăнать.



Хакĕ 2 тенкĕ.